Леонид Агаков

# Качака такисем



ЧӐВАШГОСИЗДАТ · 1959

Национальная библиотека ЧР
4-003164

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Ырă та Кăмăллă
Кӳршĕсене —
Галкинсене —
автортан.

[illegible] —
10/IX-59.

К С(Чув)
А-23

Леонид Агаков

ПОДАРОЧНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

# Халака такисем



(Кулăшла калавсем)

Чăваш АССР Государство издательстви
Шупашкар—1959

Юлашки çулсенче чăваш литературинче сатирăпа юмор палăрмаллах аталанса пыраççĕ. Чылай писательсемпе поэтсем, çĕнĕрен çĕнĕ комедисем, сатирăлла калавсемпе сăвăсем, юптарусем çырса, пирĕн пурнăçра тĕл пулакан йĕркесĕрлĕхсемпе çитменлĕхсене, тĕрлĕрен суя та киревсĕр çынсене тăрă шыв çине кăларса питлеççĕ, вĕсенчен тăрăхласа кулаççĕ. Кĕскен каласан, вĕсене хирĕç кĕрешме пулăшаççĕ.

Леонид Агаковăн çак кĕнекинчи калавсем те çавăн пекех пурнăçри тĕрлĕ çитменлĕхсене, юрăхсăр çынсене питлесе çырнă-скерсем. Писатель хайĕн сатира çулăмĕпе колхозри юлхавсене, хăйсен ачисене тĕрĕс мар воспитани паракансене, элекçĕсене, «калым» тăвакан шоферсене, вĕçкĕнсене т. ыт. çавăн пек çынсене çунтарать.

Кунпа пĕрлех кĕнекере хамăрăн лайăх çынсене кăтартакан, вĕсенчен кăмăллăн кăна кулса çырнă калавсем те пур.

ПРОВЕРЕНО
20 10 03 НОЯ 2017

3164-чув

Национальная библиотека
...
Республики

*Чӑвашсен сатирӑлла литературин никӗсне хывса ӑна уралантарнӑ чаплӑ писателе, мана нумай ҫулсем хушши вӗрентсе пулӑшнӑ*

*ИВАН МУЧИЕ*

*чун-чӗререн ырӑпа асӑнса каларатӑп ҫак пӗчӗк кӗнекене.*

*АВТОР.*



# Качака-такисем

...Тĕрĕссипе каласан, ку пухăва никам та ятарласа пуçтарман. Вăл темле хăй тĕллĕнех, сисĕнмесĕрех пухăнчĕ. Пĕррехинче, хĕллехи шартлама сивĕ кун, кăнтăрла иртсен, Иван арăмĕ Мари патне Петĕр арăмĕ Варвари пырса ларчĕ. Тем ĕçпе мар, ахалех,—пушă вăхăтра кӳршĕсем пĕр-пĕрин патне калаçса ларма çӳреççĕ вĕт-ха. Анчах вĕсем сăмах пуçлама та ĕлкĕреймерĕç—урам урлă пурăнакан Хĕветĕр арăмĕ Тари пырса кĕчĕ. Унтан Микулапа Ярмула арăмĕсем—Уринепе Кулине çитсе кĕчĕç. Кăшт тăхтасан, Вăтакасри Трахви матки Укахви алăка шăлт-шалт! уçса хупса кĕрсе тăчĕ. Кĕске вăхăтрах улттăн пухăнчĕç çапла...

«Ик хĕрарăм—пĕр пасар, виç хĕрарăм—ярмарка», тенине шута илсен, Иван арăмĕ патĕнче халĕ пĕр харă-

сах икĕ ярмарка пулма пултарнă. Анчах та çак хĕрарăмсем сăмах арпи вĕçтерме юратакан йышшисем мар, пурте йĕркеллĕ, халăх çинче ырă ятлă колхозницăсем пулнă, çавăнпа та ни пасар, ни ярмарка пулма пултарайман кунта.

Вулакансемшĕн ăнланмалларах пултăр тесе, авторăн çакна та каласа хăварма тивет: вĕсем пурте тантăшсем пулнă—ача чухне пĕрле ӳснĕ, шкулта та пĕр вăхăтра вĕреннĕ, вăрçă вăхăтĕнче вĕсен çамрăклах ырми-канми ĕçлеме, пур йывăрлăхсене те пĕрле тӳссе ирттерме тивнĕ. Ĕçре писнĕ вĕсем, пĕр сăмахпа каласан...

Вăрçă пĕтнĕ тĕлелле пурте пĕр харăсах хĕр пулса çитнĕ те, мирлĕ пурнăç пуçлансан, пĕрин хыççăн тепри качча кайнă, унтан — каламасăрах паллă ĕнтĕ ку — ачаллă-пăчаллă пулса тăнă... Упăшкисене те пăхнă вара, ачисене те ӳстернĕ, колхозĕнче те ĕçленĕ, килĕсенче те мĕн тумаллине тунă. Халăх ĕçне те хутшăнман мар—хăшĕ Совет членĕнче, хăшĕ колхоз правленинче тăнă, кирлĕ чухне наянтарах çынсене çунтарса илме те, пуçлăхсене хăтăрма та шикленмен,—ку чухнехи хĕрарăмсем питĕ çивĕч шăллă вĕт!

Кĕскен каласан, маттур хĕрарăмсем пулнă вĕсем пурте, лайăх çынсем, никам та тиркемелле мар. Çавăнпа пурнăçĕ те ăнса пынă вĕсен, пурин те кил тулли телей пулнă...

Анчах та, хăварах пĕлетĕр ĕнтĕ, пурнăç тени вăл

пур чухне те пĕр пек тикĕс пымасть çав. Тепĕр чух темле лайăх пуранас тенĕ çĕртех, çав тери кўренмелли е тарăхмалли япаласем сиксе тухаççĕ. Çак хĕрарăмсен те: Марийĕн те, Варварипе Тарийĕн те, Уринепе Кулинен те, вĕсемпе пĕр вăхатрах Укахвийĕн те—сасартăк пĕр хурлăх сиксе тухнă. Кĕтмен-туман çĕртенех вĕсен упăшкисем чирлеме тытăннă. Çитменнине, чирĕ йăпăр-япăр иртсе каяканскер мар, шутсăр вăраха каяканскер пулнă, вырăсла ун пек чирсене «хронически», теççĕ. Эрне иртет, уйăх, иккĕ, çур çул, анчах чир çаплах иртсе каймасть, пĕтмест, пĕтме мар—шалтан шала кайса пырать, йыварланать, унăн вĕçĕ те, хĕрри те курăнмасть... Епле хыпăнса ўкместĕн-ха ун пек чух, епле хуйхăрмастăн?! Этем вĕçĕмсĕр, пĕрмай, уйăхĕ-уйăхĕпе, çулталăкĕпе чирлесе пурăнсан, юлашкинчен пуçĕпех пĕтме пултарать вĕт-ха! Çывăх çын, юратнă упăшка çавăн пек нумай вăхăт чирлесе пурăнсан—мĕнле хĕрарăм чунĕ тўссе тăтăр-ха, камăн чĕри хыпмĕ?

Çак хĕрарăмсем те, хăйсен упăшкисем чирлени паларсанах, пăшăрханма тытăннă, пурăна-киле питĕ хыта кулянма пуçланă, унтан вара, чирĕ ытла вăрăма кайсан—хыпăнсах ўкнĕ.

— Ара, пĕтеççĕ вĕт пирĕн упăшкасем! Мĕнле пурăнас капла, ача-пăчана епле ўстерсе çын тăвас?..

Пуринчен ытла, упăшкисене нимĕнле тухтăр та сыватма пултарайманни, вĕсене нимĕнле эмел те пулăшас çукки çунтарнă хĕрарăмсен чĕрисене.

— Мĕнле ун пекех хăруша чир пулнă вара вĕсен упăшкисен? Ку чухнехи медицина пур чирсене те çĕнтерет-çке?—тесе ыйтасшăн ĕнтĕ эсир манран.

Ытах пĕлес килет пулсан, вăрттăн кăна, çынсем илтиччен пĕлтерем сире: çав хĕрарăмсен упăшкисем пурте кахал чирĕпе чирлесе кайнă... Ан кулăр, ан кулăр! Чăнах та кахал чирĕ пулнă вĕсен! Эсир мĕн, хăруша чир мар тетĕр-и ăна? О, епле хăруша-шшă! Вăл чир этеме пĕр çыпăççан, хăтăлма çав тери йывăр унтан, çынна пĕтерсех хума пултарать, усал эпидемирен те усалтарах вăл!

Сăмах çаврăнса килнĕ май, ку чирĕн тĕп паллисем çинчен те каласа хăварар ĕнтĕ.

Кахал чирĕ сисĕнмесĕр, майĕпе пуçланса каять: çын малтан нумай çывăракан пулать—тĕттĕм пулнăпулман выртать те, тепĕр кун кăнтăрлаччен харлаттарма пултарать, унтан, тăрса апат çисен, татах ăçта та пулин пырса тĕрĕнесшĕн çӳрет... Арăмĕ уншăн вăрçкаласа илсен, çын каллех килтен тухса каять, ута капанĕ çине ӳкнĕ йĕп пекех çухалать. Çывăрать ĕнтĕ ăçта та пулин, урăх мĕн тутăр вăл? Кăç пулсан тин киле лăпсăртатса пырать те кăмака кукринче çимелли шырама тытăнать...

Арăмĕ, паллах, тӳсеймест, вăл хăйĕн упăшки ăçта сĕтĕрĕнсе çӳрени çинчен ура тапсах ыйтать... Ун пек чух хăшĕсем нимĕн те чĕнмеççĕ, кăмака çине е унтан çӳлерех — сентре çинех хăпарса выртма васкаççĕ, ан-

чах теприсем арӑмне хирӗҫ хӑр-хар! туса илме те вӑтанмаҫҫӗ.

Ку вӑл—малтанлӑха. Пурӑна-киле чир шаларах каять.

Ҫалӑпӑр, каҫхине бригадир пырса ӗҫ хушать: ыран ир йӑлӑма утӑ патне каймалла.

— Халӑм ҫук та ӗнтӗ, ҫапах та кайса килкелӗп-и мӗнле пулин,—мӑкӑртатса юлать ҫын, анчах ирхине нипочом та каймасть.

— Сылтӑм хулла тем шуйттанӗ пулнӑ кӗҫӗр, хускатма та ҫук, каккуй утӑ лавӗ тиемелли! Пӗтес пулать!—тет вӑл, кӗҫ-вӗҫ йынӑшса ярас пек.

Е сасартӑк варсӑр пулса ларать.

— Пыршӑсене такам ҫӗҫӗпе касать пулӗ манӑнне!—ахлатса выртать ҫын. Анчах ачисем шкула, арӑмӗ колхоза ӗҫлеме тухса кайсанах вырӑн ҫинчен сиксе тӑрать те—вӗри кӑмакара ухтарма тытӑнать. Аш яшки пулать-и вара унта, чӑмӑрла паранкӑ-и,—пурпӗр, тиркесе тӑмасть, туртса кӑларать те какӑрайми пуличченех пехлесе лартать, унтан каллех кутнӗк сакки ҫине месерле тӑсӑлса выртать те хырӑмне тулли кӑмӑлпа шӑлкалама тытӑнать. Эх, ыр курать! Анчах тулта ура сасси таврашӗ илтӗнсенех йӑпӑр-япӑр ахлатма, йынӑшма пуҫлать...

Ҫапла аталанса пырать кахал чирӗ. Пирвайхи тапхӑрсенче—хӑнӑхиччен ӗнтӗ—ҫавӑн пек наянсем ҫынсенчен вӑтаннӑ пек те пулаҫҫӗ. Тем тесен те, аван мар-

çке халăх умĕнче плахая персе пуранма, çыннăн нимĕн те ыратманнине, вăл вăкăр пекех сыввине пурте пĕлеççĕ вĕт. Анчах каярахпа çаксем хăнăхаççĕ те—хăнк та тумаççĕ вара, намăсне пуçĕпех çухатаççĕ. Халăх хушшинче чипер çынсем пекех çÿреççĕ, унта-кунта тавлашмалли тупăнсан, пуринчен те хытăрах кăшкăраççĕ, анчах çав вăхăтрах ĕçе каймалла пулсан—курса та юлаймастăн.

«Вĕсем пачах та нимĕн те тумаççĕ, выртса кăна пурăнаççĕ», тесен ытла тĕрĕсех те пулмасть пулĕ. Пĕрмай выртса пурăнсан, çыннăн аякĕ те шăтса юхма пултарать вĕт-ха. Çавăнпа та хайсене май ĕç тупаççĕ вĕсем, вăхăта пур чух та пушăллах ирттермеççĕ.

«Ĕçке ерсе каяççĕ», тесе ан шутлăр. Пур ĕнтĕ ун пеккисем те, анчах пурте мар. Ĕçменнисем ытларах. Вĕсем... вăйă выляса пурăнаççĕ. Пĕрисем—шашкăлла, теприсем—доминолла. Хăш чух картла та çапаççĕ. Укçалла мар, ахалех, кăмăла тултармалла. Питĕ те кулăшла-çке вăл: пĕри чип-чиперех нушнике кĕрсе ларать, тепри кĕтмен çĕртенех качака таки ятне илтет, виççĕмĕшĕ ухмаха юлать. Пĕрре кăна мар тата, кун каçа аллă-утмăл хут!

Паллах, нушнике кĕрсе ларнин унтан тухас килет, качака таки е ухмах пулса юлнин те çак мăшкăлтан тасалас килет...

— Тавай, тепре вылятпăр!—тет вăл.

— Тавай ара, тата тепре çапам сана!—тет çĕнтерекенĕ.

— Ничево та çапаймастăн!

— Курăпăр!

Икĕ енĕ те çав тери хĕрсе каять. Тытăнаççĕ вара пĕр-пĕрине «çапма!» Вăхăт мĕн чухлĕ иртнине те пĕлмеççĕ, хырăмĕсем выçнине те туймаççĕ, килĕсем, ачипăчисем пурри çинчен те, çĕр çинче пурăнакансăн ĕçлеме кирли, ĕçлемесен хырăм тăранманни çинчен те манса каяççĕ. Ай тăрăшаççĕ, ай çатлаттараççĕ,—тӳсме çук! Чипер ăсла-пуçлă çынсем колхозра ĕçлеççĕ—тырă акаççĕ, утă çулаççĕ, авăн çапаççĕ, çуртсем тăваççĕ, кусем пур—отне пĕр-пĕрине кĕтессе хăваласа кĕртессшĕн, отне качака таки туса хурасшăн е ухмаха кăларасшăн çапăçаççĕ. Шăлĕсене çыртса, çамкисене картлантарса, ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр тăрăшаççĕ:

— Чан! Çат! Пат!..

Вăхăчĕ-вăхăчĕпе хирĕçсе те илеççĕ, пĕр-пĕрине хăлха чиккинчен янклаттарса яма та хатĕр пулаççĕ (вăйă тени ултавсăр пулмастех ĕнтĕ вăл, улталани—тарăхтарать!..), анчах çавăнтах мирлешеççĕ те ывăç тупанĕсем çине сурса сăтăркалаççĕ, хырăм выçни ан сисĕнтĕр тесе шит тăршшĕ чикарккăсем чĕркесе хыпаççĕ те çĕнĕрен çапма тапратаççĕ. Çĕрле пулса ларичченех, куçĕсем курми пуличченех çапаççĕ вара! Тепĕр кунне каллех пухăнаççĕ, унтан тепĕр кунне те пурте пĕрле

пулаççĕ. Прогул тавраш̆ĕ тумаççĕ, çук! Хăшĕсем, арăмĕсем сисиччен, çăкăр е кукăль сăмси те чиксе пыраççĕ, тет. Кун каçа, талăкĕ-талăкĕпе епле-ха выçă вылятăн?

Колхоз çине те, кил çине те ал сулаççĕ вĕсем, пĕтĕмпех арăмĕсем çине шанаççĕ—уйри ĕçсене те, килтине те, ачи-пăчине те, выльăхĕ-чĕрлĕхне те.

— Улпут майрисем мар, ĕçлеччĕр!

— Çемьене тăрантараяс çук—ма качча тухнă?—теççĕ вĕсем хăйсен арăмĕсем пирки.

Ĕçлеççĕ вара мăнтарăн хĕрарăмĕсем, çĕрĕн-кунĕн, ларса канма вăхăт тупаймасăр ĕçлеççĕ, упăшкисем вĕсем çумĕнче пыл та çу пурăнаççĕ—вăйă выляса, шик! шăхăрса, тенĕ пек...

...Эпир асăннă хĕрарăмсен упăшкисем те шăп çаван пек пурăнма тытăннă. Кĕтмен çĕртенех кахала тухса кайнă вĕсем, ни колхозра, ни кил таврăшĕнче ним ĕçлеми пулса, шашкăлла та доминолла çапса кăна пурăннă. Каларăм-çке, арăмĕсем ĕçчен пулнă вĕсен, вăрçă вăхăтĕнче арçын ĕçĕсене хăнăхнăскерсем тем тума та пултарнă—хуть капан хывтар, хуть вăрман кастар, ниçта та аптрамаççĕ! Килĕсенче те йĕркеллĕ—пӳрт-çуртне пуçтарнă, апатне пĕçернĕ, кĕпи-йĕмне çунă, кирлех пулсан—нӳхрепре сăри те пур... Упăшкисем кăна юлашки çур çул хушшинче ялан, кунĕ-кунĕпе килте çук—ирхи çисен тухса каяççĕ те çĕрлеччен сăмсисене те пырса кăтартмаççĕ. Выляççĕ, пĕрмай, кашни

кун выляççĕ, эсреметсем! Ним çине те çавăнса пăхмаççĕ, хуть те тĕнче пĕттĕр вĕсемшĕн пулсан!

Мĕн тăвас тетĕн—чир! Еçкĕ чирĕнчен те хăрушăрах...

Малтанласа вĕсем пĕрмай правленинче вылятчĕç Кивĕ председатель чарсах каймастчĕ вĕсене. Хăйне бюрократ ятне парасран шикленнипе, кусем ăна ĕçлеме кансĕрленĕ пулин те, хăваламастчĕ, тепĕр чух хăй те вĕсемпе пĕрле ларса пĕр-икĕ хут кĕтессе кĕрсе тухатчĕ. Анчах кăçалхи председатель Мари Петровна, ялти пек каласан—Маюк, наянсене тӳсме пултараймансскер, наччасрах хӳтерсе кăларса ячĕ çаксене.

— Правлени—качака такисен клубĕ мар, тухса вăркăнăр кунтан!—терĕ вăл. Çитменнине тата ĕçе тухмасăр выляса пурăннăшăн «преми» пама та пулчĕ:

— Çине-çине штраф тăватăп ака сире!—тесе асăрхаттарса хăварчĕ.

Ку пурне те килĕшрĕ, пуринчен ытла куншăн хĕрарăмсем савăнчĕç, Маюка чунтан тав турĕç.

Çавăн хыççăн ялта доминолла çапса пурăнакансене «качака такисем» теме пуçларĕç. Вĕсемшĕн ку питĕ тĕрĕс ят пулнă ĕнтĕ: домино вăййи яланах хăшне те пулин «качака таки» тунипе вĕçленет, ку пĕрре, унсăр пуçне тата доминона пула пур ĕçсене те манса каякан çын хăй те качака таки чухлĕ кăна усă кӳрекен пулса тăрать—ни çăмĕ, ни сĕчĕ, тенĕ пек...

Питĕ лайăх ят панă çĕнĕ председатель колхозри наянсене!

...Правленирен çавăн пек хăваласа янă хыççăн «качака такисем» пĕр хушă лăпланнă пек пулчĕç. Хăшĕсем ĕçре те курăнкаларĕç. Анчах та нумая пымарĕ вăл... Пĕрре купăста йăранĕ çине вĕреннĕ качака картана кĕмелли шăтăк-çурăк тупатех çав. Çаксем те хăйсем валли выран тупнă—вĕсем ял тулашне, лаша витисем патне, конюхсен общежитине çӳреме пуçланă. Қаллех вара кунĕ-кунĕпе качака такине хăвалама тытăнчĕç вĕсем.

Арăмĕсем тепĕр хут хыпăнса ӳкрĕç. Ӳкĕтлесе те пăхрĕç, ятлаçса та, пĕррехинче виççĕн-тăваттăн пухăнса упăшкисем выляна çĕре çил-тăвăл пек пырса кĕрсе çавăрттарчĕç, домино карчĕсене çапа-çапа сирпĕтрĕç, ун пирки чутах çапăçу пуçланса каятчĕ... Кун пек атака пуласса кĕтмен упăшкисем арăмĕсене пĕрерĕн-пĕрерĕн каларса ыватрĕç те алăка шăкăр-шакăр питĕрсе лартса оборона йышăнчĕç. Арăмĕсем хăйсене пулăшма йывăр артиллери—колхоз председательне чĕнсе илсен тин паранчĕç вĕсем. Паллах, Мари Петровна вĕсене кунтан та хăваласа ячĕ, аслă конюха чышкипе юнасах асăрхаттарчĕ:

— Çак лодырьсен командине тепре çакăнта выляма ирĕк парсан, эп сана хăвна лектеретĕп! Асту, сар сухал!

Тата тепĕр хушă чаранна пек пулчĕç хăйхи «качака

такисем». Анчах та каллех нумайлӑха мар. Кӗҫех вӗсем хӑйсене валли тепӗр «опорнӑй пункт» тупрӗҫ—колхозӑн ҫил арманӗ ҫумӗнчи хурал пӳртне ҫӳреме тытӑнчӗҫ. Ку вӑхӑтра Мари Петровна пӗр уйӑхлӑха темле семинара кайнӑччӗ те, чаракан пулмарӗ...

Каллех вара кунӗ-кунӗпе киле пымарӗҫ ҫаксем, ӑнран тухса кайиччненех ҫатлаттарса ларчӗҫ! Тӳсме те ҫук пӑчӑ пӳртре, сывлӑш курмасӑр, чӗлӗм тӗтӗмӗ ҫӑтса ларса, выҫӑлла-тутӑллӑ пурӑннипе хӑйсем кӗл тӗслӗ пулса, веҫ ырханланса ларчӗҫ!

Тем те туса пӑхрӗҫ арӑмӗсем вӗсемпе, епле те пулсан тӑна кӗртес тесе. Сӑмахпа каласа итлеттерме май пулас ҫуккине кура, вӗсем пӗрре упӑшкисенчен лайӑх кӑна мӑшкӑлласа илме шут турӗҫ: ятарласа, уйра ӗҫлекен трактористсене ҫитерме кайнӑ пек, вӗсене апат ҫитерме кайрӗҫ...

Арман пӳртне кӗрсенех, хӗрарӑмсенчен кашни хӑйӗн упӑшки умне хӑшӗ куршак, хӑшӗ котелок лартрӗ, пӗрер чӗлӗ ҫӑкӑр кӑларса хучӗ.

— Ыртӑр та пулӗ паян, хырӑмӑрсем те выҫрӗҫ пулӗ, ҫавӑнпа та кӑштах вӑй кӗмелӗх килсе ҫитерес терӗмӗр-ҫке... Шалккӑ вӗт, ӗлӗкхи кил-ҫуртсӑр таркӑнсем пекех пурӑнатӑр та...—тӳрех тӑрӑхлама пуҫларӗ ыттисенчен ҫивӗчрех чӗлхеллӗ Варвари.

Унтан ыттисем те йӗпleме тытӑнчӗҫ:

— Паян сан ятпах чӑх пусса пӗҫертӗм-ха, тутлӑрах ҫитерес, терӗм...—юрласа илчӗ Ярмула арӑмӗ Кулине.

— Эп ёнерхи апатах ăшăтса килтĕм-ха, ан ятла ĕнтĕ, пĕррелĕхе каçар,— хаклă хăнана хисеп тунă пекех пуçне тайрĕ Микула арăмĕ Урине.

— Пăтти хытăрах пулчĕ те, çемçетес тесе çуне хĕрхенсе тăмарăм,—терĕ Иван арăмĕ Мари.

«Качака такисем» чăр-чăр пăхкаласа илчĕç. Тĕлĕнчĕç те, тарăхрĕç те пулмалла вĕсем, анчах арăмĕсене хирĕç нимех те чĕнмерĕç. Пĕри çиме пуçларĕ те—ыттисем те каçса кайсах кавлеме тытăнчĕç. Арăмĕсем пĕр хушă ним чĕнмесĕр, вĕсем çине шăтарас пек пăхса тăчĕç, унтан сасартăк, тахăшĕ команда панă пекех, пурте пĕр харăс упăшкисем патнелле ыткăнчĕç те вĕсен умĕнчи апачĕсене, çăкăр чĕллисене карт! карт! туртатурта илчĕç.

— Намăссăрсем! Питсĕрсем!—кăшкăрчĕ пĕри...

— У-у, аçа çапман эсрелĕсем!—çухăрчĕ тепри...

— Ĕçленĕ чух çук эсир, анчах хыпма пĕлетĕр!

— Алла çăкăр чĕлли тытма та намăс сире!

— Сире çитериччен—сыснасене çитерсен усăллăрах пулать!..

Упăшкисем тинех арăмĕсем хăйсенчен юри мăшкăллама килнине чухласа илчĕç те, тарăхса кайса, пĕр харăсах сике-сике тăчĕç. Куçĕсем апайтурух хаяррăн çутăлса илчĕç вĕсен—халь тесен халь тем туса тăкмалла!

— Пшол вон!—кăшкăрса ячĕ пĕри.

— Майӑрсене каялла пӑрса яриччен тухса вӑркӑнӑр кунтан!—сӗтел ҫине чышкипе ҫапрӗ тепри.

Арӑмӗсем, упӑшкисенчен каялла туртса илнӗ апатҫимӗҫсене кӑкрисем ҫумне пӑчӑртаса тытса, арман алӑкӗнчен чакса тухрӗҫ. Анчах вут-ҫулӑмсӑр пулеметсем вӗҫӗ-хӗррисӗр шатӑртатрӗҫ...

— Киле те кӗртместпӗр сире! Ҫакӑнтах ҫӗрсе пурӑнӑр!

— Харампырсем! Шӑршлӑ качака такисем!..

— Кӑтартӑпӑр-ха эпир сире!—чышкисемпе юна-юна кӑшкӑрчӗҫ хӗрарӑмсем.—Тыткалӑпӑ-ӑр!..

Ҫакӑн хыҫҫӑн, чӑнах та, пӗр пилӗк-ултӑ кун качака такисем килӗсенчех пурӑнчӗҫ, анчах унтан... каллех хӑйсеннех тапратрӗҫ вӗт! Мӗн тӑватӑн вӗсене? Чир! Акӑ, паян та выляҫҫӗ вӗсем...

Иван арӑмӗ Мари патне Петӗрпе Хӗветӗр, Микулапа Ярмула, унтан Вӑтакасри Трахви арӑмӗсем—пӗрпӗринпе калаҫса татӑлман пулин те—ҫав хуйхӑпа пухӑнчӗҫ. Пӗр-пӗрин ҫине пӗрре пӑхса илсенех ӑнланчӗҫ вӗсем пурин упӑшкисем те вӑйӑра пулнине.

— Ҫук, тантӑшсем, текех капла пурӑнса пулмасть, пӗтӗм вӑй пӗтсе ҫитрӗ,—хаштах сывласа ячӗ Варвари.

— Халтан кайрӑм ӗнтӗ эпӗ те,—терӗ Тари.

— Епле пулсан та чарасчӗ вӗсене вӑй выляса пурӑнма,—килӗшрӗ Урине.

— Атьӑр-ха, пурӗ пӗрле пулса, мӗн те пулин шухӑшласа тупар пӗреххут,—терӗ Кулине.—Неушлӗ ча-


и 3164-чув
Национальная библиотека Чувашской

раймăпăр çав качака такисене? Пулма пултараймасть ун пек!

— Майне тупас пулать! Пуçĕсене кил майлă çавăрасахчĕ вĕсенне,—терĕ Укахви.

— Выçă лартас пулать шуйттансене!

Пĕр хушă шăп пулчĕ. Ултташĕ те шухăша кайрĕç...

Унтан чăн малтан кил хуçи Мари сăмах пуçларĕ.

— Итлĕр-ха, тантăшсем, манăн пĕр шухăш пур... Эп шутлана пек тусан, хамăрăн качака такисене пит лайăх тăн кĕртме пулассăн туйăнать...—терĕ вăл, чеерехх̆ен кулса илсе.—Пăрахтаратпăр эпир вĕсене качакалла сиксе пурăнма! Калам-и?

— Кала, Мари, кала!—терĕç ăна пурте пĕр харăс.

— Тем пекехчĕ мелне тупсан!..

Ултă хĕрарăм йăпăртах пĕр çĕрелле пухăнса ларчĕç. Иван арăмĕ Мари вĕсене шăппăн калама пуçларĕ...

* * *

Тепĕр кунне ялти «качака такисем»—Петĕрпе Хĕветĕр, Микулапа Ярмула, Иванпа Трахви тата ик-виçĕ çын, яланхи пекех, ирхи апат хыççăн арман пӳртне пуçтарăнчĕç те чант! пант! тутарма тытăнчĕç. Яланхи пекех, тĕттĕмччене выляреç вĕсем. Унтан, халтан кайса çитсен, пуçĕсем анкă-минкĕ пулса кайсан, ялалла тухса утрĕç. Ыванса çитнипе, ӳсĕрсем пекех сулкаланса пычĕç...

Ыттисенчен çывăхарах пуранниипе, киле чăн малтан Иван çитрĕ. Пĕчĕк ĕçпе лупасайне кĕрсе тухсан, вăл крыльца çине утса хăпарчĕ те... алăк çинче çĕлĕк пысăкăш çăраççи çаканса тăнине курах кайрĕ.

— Мĕнле çăраççи ку? Кун пек пысăк çăраççи çукчĕ-çке пирĕн, ăçтан тупнă ăна Мари?—тĕлĕнчĕ Иван.— Тата каçа хирĕç ăçта мурне тухса кайнă вăл ачи-мĕнĕпех?..

Атпранă енне, вăл урама тухса тапак туртса ячĕ, унталла-кунталла пăхкаларĕ. Урам пуш-пушах... Пĕр çур сехет пек тăрсан, ăна сивĕ пулма пуçларĕ, уçă сывлăшпа сывланă май, хырăмĕ выçни ытларах сисĕнме тытăнчĕ..

— Мĕн хăямачĕ?—тарăхма пуçларĕ хайхискер.— Ăçта сĕтĕрĕнсе çӳрет вăл çак таранччен?!

Ирĕксĕрех юнашарти кӳршĕсем патне кĕчĕ. Лешсем пĕтĕм килйышĕпех каçхи апат çисе лараççĕ-мĕн. Сысна какай яшки шăрши тӳрех сăмсинчен пырса çапрĕ ăна, çиес килнипе çăварне сурчăк тулчĕ, пуша хырăмĕ пăкăр-пакăрр... туса илчĕ.

— Арăм пӳрт питĕрсех таçта тухса кайнă-ха манăн,—терĕ вăл кăшт тăрсан, хырăм выççине лăплантарма каллех чикаркка чĕртсе ярса.—Эсир курман пулĕ те вăл ăçталла кайнине?

— Асăрхамарăм çав,—терĕ кӳршĕ арăмĕ.

Вĕсем апат çисе тăранчĕç, упăшки тулли кăмăлпа какăрса илчĕ те çиелтен пĕр мăн стакан турăх ĕçрĕ.

«Пăх-ха, епле пехлет!—шухăшларĕ Иван, кÿршĕ çине темшĕн çиленме пуçласа.—Штопăччĕ мана çимелартас! Хыткукар, чорт!»

Çав вăхăтра сехет йĕппи вунпĕр çине куçрĕ.

— Каяс, хальччен килчĕ пуль ĕнтĕ,—тесе, Иван килне тухса утрĕ. Анчах çенĕк алăкĕ çинче çав-çавах çăраççи çакăнса тăрать иккен. Арăмĕ тавранман. Аçта кайса кĕнĕ вăл, чăнах та?.. Иван урама тухрĕ те ним тĕлсĕрех хуллен анаталла утрĕ. Çынсем çывăрса пĕтнĕ ĕнтĕ, сайра хутра пĕр-пĕр çутă çеç курăнать. Сивĕ тата, тÿсмелле мар! Хырăмĕ те выçнăçемĕн выçать, вунă кун нимĕн те çимен, тейĕн!

Сасартăк юнашар пралукран Иван умнелле пĕр çын утса тухрĕ.

— Иван мар-и ку?—ыйтрĕ çав çын.

— Эпĕ-çке. Эс Петĕр тем? Мĕн туса çÿретĕн çĕр хута?

— Арăм çухалчĕ-ха манăн,—ассăн сывласа ячĕ Петĕр.—Пÿрте калпак пек çăраççипех питĕрсе хăварнă... Темиçе çĕре те çитрĕм шыраса—ниçта та çук, эсрелĕ!

— Манăн та Мари çухалнă çав,—терĕ Иван.—Манăн та алăка çĕлĕк пек çăраççипе питĕрсе хăварнă...

— Ан калаç!

— Истиннă!

— Ак тата япала, арăм валли çăпала!—Пĕççине шарт! çапрĕ Петĕр.—Мĕне пĕлтерет-ха ку?

— Шуйттан пĕлет...

— Атя-ха, Хĕветĕр патне кайса пăхар, тепĕр чух вĕсем Тари патне пуханса ларакан...

Анчах Хĕветĕр килте çук иккен, унăн пÿрт алăкĕ çинче те пĕр икĕ кило туртакан çăраççи çакăнса тăрать. Тамаша!

Шăнса хытма пуçланă, выçăпа аптранă Иванпа Петĕр, шăлĕсемпе шаккаса, мăн урамалла тухрĕç те... кĕçех хăйсен тусĕсене, Микулапа Ярмулана тĕл пулчĕç.

— Ăçта каятăр?

— Арăмсем çук-ха пирĕн!—терĕç лешсем пĕр харăс.

— Сирĕн те-и?!

— А мĕн, сирĕн те çук-им?

— Йĕп пекех çухалнă!

— Эппин, пурте хусаха юлтăмăр пулать?

— Мĕн хăямачĕ пулса тухать капла?

— Мĕн пулни—паллă ĕнтĕ. Тăн кĕртесшĕн вĕсем пире. Сивĕпе, выçăпа муритлесшĕн!

— Çу-ук, мăшкăллаттармăпăр-ха хамăртан! Шыраса тупасчĕ кăна, тыткалăттăмăр пĕрре!..

Чылайччен тарăхса тăчĕç качака такисем урамра. Унтан пурин килĕсене те тепĕр хут тĕрĕслесе тухрĕç. Малтанхи пекех, пурин пÿрчĕсем те пы-ысăк çăраççисемпе питĕрĕнсе тăнă...

— Мĕн тăватпăр ĕнтĕ халь? Çĕрĕпех урамсене виçсе çÿреме çук вĕт-ха, шăнса вилес пулать! Атьăр, кам

ӑатне те пулин кӗрсе выртар,—терӗ юлашкинчен Иван, пуринчен те ытларах шӑнса кӳтнӗскер.

Хурлӑха лекнӗ туссем ҫырма хӗрринче пурӑнакан Хветут патне пырса шаккарӗҫ—пӗлтӗр пӗр хушӑ ун патӗнче выляса пурӑннӑччӗ вӗсем. Лешӗ хӑй те вылякалатчӗ, анчах арӑмӗ унӑн ҫурӑмӗ ҫинче ухват аври хуҫса пӑрахсан—чарӑнчӗ.

— Тархасшӑн, кӗҫӗрлӗхе хваттере яр пире, Хветут, хамӑр килсене пӗри те кӗрейместпӗр, арӑмсем питӗрсе кайнӑ,—тӗрӗссипе каласа пачӗҫ ӑна качака такисем.

Хӑйсем патне камсем пырса кӗнине курсан, Хветут арӑмӗ ним майсӑр хӑтӑрса тӑкрӗ вӗсене:

— Ҫавӑ чух, ҫавӑ чух сире! Ытла иртӗнсе кайрӑр-ха, килӗрсене мантӑр! Лайӑхрах тыткалаччӑр сире арӑмӑрсем, эрнипе киле ан кӗртчӗр, пӗр чӗлӗ ҫӑкӑр та ан паччӑр. Харампырсем вӗт эсир!..

Вӑл татах та пӑскӑртатчӗ пулӗ те, упӑшки чарчӗ:

— Ҫитӗ сана! Ҫыннисен ахаль те ӑшӗсем хыпаҫҫӗ пуль, эсӗ пур—татах вут хуратӑн... Тен, ҫыннисен ҫиесси те килет пулӗ...

— Ку тӗрӗс вара, Хветут, питӗ тӗрӗс,—тӑруках хавасланчӗ Иван, ҫиесси ҫинчен илтсен.—Хам ҫинчен калас-тӑк, ман хырӑм паҫӑрах ҫурӑм ҫумне ҫыпӑҫса ларчӗ... Марфа аппа, чӑнах та, пӗрер татӑк ҫӑкӑр паратӑн пуль пире... кивҫенле те пулин!

— Ҫӑкӑр тата сире!—каллех кӑшкӑрса пӑрахрӗ лешӗ.—Ҫӑкӑр ҫиййччен малтан ӗҫлес пулать ӑна! Пи-

тех выçса вилме пуçларăр пулсан—авă, кăмака кукринче пĕр куршак сив паранкă ларать, сысна çурисем валли пĕçерсеттĕм. Кӳпĕр çавна!

— О, пире паян вăл та юрать! Пуçмалăх тăварĕ пултăр кăна!—аллисене сăтăркаласа илчĕ Иван.

Пĕр витре кĕрекен чугунри вĕтĕ паранкăна тăвата «качака таки» наччасра тирпейлесе хучĕç. Унтан, тумтирĕсене урайне сарса, пурте юнашар тăсăлса выртрĕç.

— Çапах та, ăçта кайса кĕме пултарнă-ха пирĕн арăмсем ачи-пăчипе пĕрлех?

— Мĕн хăтланаççĕ вĕсем?

— Неушлĕ юриех тăваççĕ çакăн пек?—шухăша кайса калаçкаласа илчĕç хăйсем хушшинче.

— Таçтах тухса тарман пулĕ-ха, ирхине тупăнĕç, çыврăр,—лăплантарчĕ вĕсене кил хуçи.

Анчах арăмĕсем ирхине те тупăнмарĕç. Упăшкисем тул çутăлнă-çутăлманах тухса чупрĕç килĕсене,—усси пулмарĕ, каçхи пекех, мăн çăраççисем çеç курчĕç вĕсем хăйсен пӳрчĕсем çинче. Каллех пурте пĕрле пухăнчĕç, канашларĕç, тарăхсах шавларĕç...

— Хăйсем тухса тарнă пулсан та, ачисене ăçта чикнĕ-ха вĕсем?

— Май килмест капла, евит тăвас пулать!

— Кама евит тăватăн?

— Милицие пĕлтерес...

— Мĕн тесе? Арăмсем тухса тарнă, тесе-и?

— Апла та юрать.

— Тахтăр-ха, ытлашши намăс пулĕ тата... Пĕтĕм район кулма тытăнĕ пирĕнтен.

Кунĕпех выçă çÿререç хайсем. Пÿрчĕсене питĕрнĕ вĕр-çĕнĕ мăн çăраççисене çĕмĕрме, темшĕн, хăяймареç. Каçхине каллех хваттере кĕрсе çывăрчĕç, Хветут арăмĕ вĕсене вăрçа-вăрçах сыснасем валли пĕçернĕ тепĕр куршак паранкă лартса пачĕ...

Усал сăмах утпа çÿрет, тенĕ пек, ял тăрăх питĕ тĕлĕнмелле хыпар сарăлчĕ:

— Хайхи качака такисене арăмĕсем ачи-пăчипех пăрахса тарнă!

Хăшĕсем варĕсене тытсах кулчĕç кунтан, хăшĕсем «çав кирлĕ-ха вĕсене!» терĕç.

Арăмĕсем виççĕмĕш кунĕнче те тупăнмасан, «качака такисем» тек тÿссе тăраймарĕç, колхоз председателĕ Мари Петровна патне тĕркĕлтипех пырса кĕчĕç.

— Илтнĕ пулĕ... Çемьесем çухалчĕç вĕт пирĕн. Мĕн тумалла халь?

Лешĕ малтанах пĕлмĕш пулчĕ, анчах хăйĕн куçĕсем çав тери тăрăхламалла кулса тăчĕç...

— Ай-яй-ай! Хĕрхенетĕп сире, шутсăр шеллетĕп, анчах нимĕнпе те пулăшаймастăп,—терĕ вăл.—Чăнах та, ăçта кайса кĕме пултарнă-ха вĕсем сирĕн?.. Иртнĕ эрнере вербовщик килнĕччĕ, çав илĕртсе кайман-ши вĕсене, мур пуçĕ! Калăпăр—Свердловскине, е унтан та инçерех—Камчаткăна, Сахалина... Пулма пултарать вĕт çавăн пек, э? Хăвăр тарăхтарса çитертĕр те, тÿссе

тăрайман ёнтĕ вĕсем... Хайхи вăйăран вăкăр пулать тени пулчĕ пулĕ! Қачака таки хăваласа пурăнсах çемьесĕр тăрса юлтăр вĕт!..

Тăлăха юлнă упăшкасем нимĕн те чĕнеймерĕç. Председатель хăйсенчен тăрăхланине сиссе, вĕсем ун патĕнчен тухса кайма тапранчĕç. Анчах Мари Петровна сĕтел хушшинчен тăрса пӳлĕм алăкне шăнкăрт! питĕрсе лартрĕ.

— Чимĕр-ха,—терĕ вăл,—ан васкăр. Этемле калаçса илер май килнĕ чух... Миçе кун выçлă-тутлă, унтакунта йăваланса çӳретĕр-ха эсир?

— Тăваттăмĕш кун ёнтĕ,—пуриншĕн те ответ пачĕ Иван.

— Ытлах кăмăла каймасть-им кун пек пурăнни?

— Шутсăр усал.

— Айăпĕ камра-ха? Хăвăрăн шутăрпа, кам айăплă куншăн?

— Қам пултăр? Арăмсем! Вĕсем пăрахса тухса кайнă вĕт пире, эпир мар!—терĕ Петĕр.

— Анчах мĕншĕн тунă вĕсем çавăн пек, чухлатăн-и? Эсир хăвăр эрни-эрнипе, уйăхĕ-уйăхĕпе килте ларманнине мантăр-им?

— Вăл çапла та-ха...—мăкăртатса илчĕ Хĕветĕр.

— Тоттă, çапла çав, савнă та юратнă... качака такисем! Анчах халĕ акă, ăнсăртран арăмăрсемпе ачăрсем тупăнас пулсан, малашне те çавăн пекех пурăнма

шутлататӑр-и? Ним ӗҫлемесӗр, вӑйӑ выляса, колхоз ятне ҫӗртсе пуранас тетӗр-и?

Арҫынсем чӗнмерӗҫ...

— Ну, калӑр ӗнтӗ!—ҫине тӑрсах хистерӗ председатель.—Мӗн, ҫӑвара сухан хыпнӑ пек ларатӑр?

Пӗр минут иртрӗ, иккӗ... Петӗр Хӗветӗр ҫине. Иван—Трахви ҫине, Ярмула—Микула ҫине пӑха-пӑха илчӗҫ.

— Эпӗ сирӗн ҫӑмаха кӗтетӗп!—сассине хытарчӗ Мари Петровна.

— Малашне ун пек пулмасть пулӗ...—терӗ вара Иван, ҫӗрелле пӑхса.

— Эс мӗнле шутлатӑн?—куҫӗсемпе Петӗр ҫине тӗллерӗ председатель.

— Эпӗ те ҫаплах шутлатӑп...

— Эс мӗнле, Хӗветӗр?

— Эпӗ те ҫавӑн майлах...

— Ярмулапа Микула мӗнле шутлаҫҫӗ?

— Эпир мӗн... эпир те ҫаплах ӗнтӗ!—терӗҫ кусем.

— Апла пулсан, юлташсем,—терӗ вара Мари Петровна,—сире тӗп-тӗрӗс калама пултаратӑп: ыран сирӗн арӑмӑрсем таврӑнаҫҫӗ.

— Аҫта вӗсем? Аҫтан таврӑнаҫҫӗ?—сике-сике тӑчӗҫ «качака такисем».

— Вӑрмантан таврӑнаҫҫӗ. Эсир кунӗ-кунӗпе тарса ҫӳренӗ пирки, сирӗн вырӑна вӑрман ӗҫлеме кайрӗҫ вӗсем. Ҫлуб валли йывӑҫ касма.

— Ачисем ăçта вара? Ачисем ăçта?

— Ял хĕрринчи Анюк патĕнче вĕсем валли вăхăт-лăх ясли пекки турăмăр. Питĕ лайăх пурăнаççĕ, эп унта кашни кунах кайса пăхатăп... Халь ĕнтĕ пĕтĕмпех ăнланатăр-и?

— Ăнланатпăр...

— Малашне те ăнланатăр-и?

— Ăнланатпăр.

— Текех «качака такисем» пулмастăр эппин?

— Пулмастпăр!

Чăнах та, çакăн пек вĕрентсе илнĕ хыççăн «качака такисем» колхозра чип-чиперех ĕçлеме тытăнчĕç те, вĕсене çав усал ятпа чĕнме пăрахрĕç. Питĕ лайăх пурăнаççĕ халь вĕсем...






Пирĕн урамра Фома Хомич Плясунов тенĕ çын пурăнать. Лайăх çын, темелле ăна, лăпкă, сăпайлă. Ĕçмест, туртмасть, çынсемпе харкашмасть, кӳршĕсем çинчен жалобăсем çырни те сисĕнсех каймасть пек.

Хăй вăл чылай хушă директор пулса ĕçлерĕ. Мĕн директорĕ пулни çинчен калама кирлех те мар пулĕ. Сахал-и Шупашкарта директор? Акă, сăмахран, тĕрлĕ союзсенех илер: мĕнле кăна союз çук пулĕ! Чăптасоюз, Çунатупаньсоюз, Кăвасчĕрессоюз... Çавсен пурин те директор пур вĕт-ха, кашниех уйрăм кабинетра ларать, хăйне шанса панă ĕçшĕн çунать, план тултарма тăрăшать, сӳрĕк ĕçлекенсене çунтаркаласа илет, хăй айăпа кĕрсен—аслисем умĕнче тарласа тăрать, хулăн

портфельне икĕ аллипе ыталаса тытса, çитменлĕхсене пĕтерме сăмах парать, хăш чух вара, чăнах та, лайăххрах ĕçлеме тытăнать, анчах тепĕр чух пуçлăх патĕнчен тухсанах хайĕн сăмахне манса каять те малтанхинчен те япăхрах ĕçлеме пуçлать.

Фома Хомич шăпах ĕнтĕ çаван пек директорсенчен пĕри пулнă. Пĕвĕпе вăл ни çӳлĕ мар, ни лутра мар; пуçĕ кăштах кукшаланнă, хырăмĕ пăртакках малалла мăкăрăлса тухнă. Ĕçре ытлашши васкаман, анчах ыттисенчен кая та юлман. Пĕр сăмахпа каласан—пур енчен те вăтам пулнă. Ĕлĕкрех, районтан Шупашкара куçса килсенех, вăл темле складра ĕçленĕ, теççĕ, пĕрик çултанах лайăх кăна шатрун пӳрт лартнă, унтан вара те хай питĕ тӳрĕ çын пулнипе, те тусĕсем нумайланса кайнă пирки, ăна пысăкран пысăкрах вырăна куçарса пынă та, каярахпа çав темле союз пуçлăхĕ туса хунă. Ĕçле, Фома Хомич, тăрăш! Акă сана кабинет, акă личнăй секретарь, вăтăр çынлă штат, машина (вăл кивĕрех пулсан та—тăвата кустăрмаллă-ха...), кĕрлеттер!

Ну, хăй каларĕш, çаннисене тавăрсах ĕçлеме тытăннă Фома Хомич... «Çĕнĕ шăпăр таса шăлать», тенĕ пек, учреждени ĕçне тӳрех çĕнетсе улăштарма тытăннă вăл.

— Тĕрĕс мар ларатăр, хаклă юлташсем, — тенĕ çĕнĕ пуçлăх, пирвайхи кунах пур сотрудниксене те хăй патне пухса. — Ĕç ăнăçлă пуласси, чăн малтан, сотруд-

никсем мĕнлерех вырнаçса ларнинчен килет! Курăрха акă: бухгалтери анкарти пек пӳлĕм йышăннă, çав вăхăтрах директора темле анчăк йăвине хĕссе лартнă. Йĕрке-и вара çакă?! Аçта пур ун пекки? Ял кулли вĕт ку! Директор кабинечĕ вăл — кабинет пек пулмалла пуль? Унăн килекен çынсене те йышăнмалла, канашлусем те ирттермелле, тепĕр чух, тен, закускăллă приемсем те тума тӳр килĕ — эпир хуçалăх организацийĕ, сутмалли те, илмелли те, пĕр-пĕринпе килĕшсе ală пусмаллисем те пулаççĕ-ха пирĕн...

— Кивĕ директор ун çинчен нимĕн те шарламастчĕ те, эпир пĕлмен...— хăюсăр сăмах хушнă пĕр çамрăкрах хĕрарăм.

— Сирĕн кивĕ директор пăру пулнă вăл!—татса хунă Фома Хомич.—Çавăнпа кăларса янă та ăна кунтан!

— Кăларман пулĕ, ăна пысăкрах вырăна, треста куçарнă, тесе каларĕç...

— А эсир мĕн, трестра пур вырăнсем те пысăк тесе шутлатăр-и? Трестра унта курьерсем те пур!—куçĕсене çутăлтарса илнĕ Фома Хомич.—Кĕскен каласан, ку ыйтăва сӳтсе явма кирлĕ мар, тесе шутлатăп. Приказ çакăн пек пулать: эпĕ бухгалтери пӳлĕмне куçатăп, бухгалтери—производство пайне, производство пайĕ—экспедицине, экспедици—çак пӳлĕме.

— Уборщица хăй вырăнĕнчех юлать-и?—йĕкĕлтесе ыйтнă тахăшĕ.—Тен, ăна çенĕке куçаратăр?

Фома Хомич ку сӑмахсене илтмӗш пулнӑ. Вара сотрудниксем кунӗпех пӳлӗмрен пӳлӗме сӗтел-пукансем, шкафсем, вуншар пӑт туртакан тимӗр ещӗксем, диван-сем шутарса йӗп-йӗпе тара ӳкнӗ. Тепӗр кунне те ӗҫлей-мен—малтанхи кунне йывӑр йӑтса халтан кайнипе пурин те аллисем чӗтренӗ вӗсен...

Хайхи анкарти пек пӳлӗме вырнаҫнӑ Фома Хомич кашни кун тенӗ пекех канашлусем, ларусем, «летучкӑ-сем» ирттернӗ, сотрудниксене хӑй патне пӗчченшерӗн чӗнтерсе «инструктаж» панӑ, ҫавна пула унӑн, мӑнта-рӑнӑн, производствӑна, мастерскойсене кайса ҫӳреме те вӑхӑт юлман.

Анчах темшӗн-ҫке ӗҫсем ытлах ӑнса пыман. Ҫакӑ вӑл ҫаплах кантурти ҫынсем тӗрӗс мар ларнинчен ки-лет пулӗ, тесе (урӑх мӗнрен килтӗр-ха тата?!), Фома Хомич сотрудниксене татах пӳлӗмрен пӳлӗме куҫарнӑ. Халӗ ӗнтӗ пӗркунхинчен пачах урӑхла вырнаҫтарнӑ: производство пайне—бухгалтерине, экспедицине—про-изводство пайне т. ыт. те. Татах икӗ кун ӗҫлемен кан-тур... Хӗле кӗрес умӗн ҫиччӗмӗш хут пулса иртнӗ ҫавӑн пек «географилле улшӑну». Анкарти пек аслӑ пӳлӗмре пӗччен ларма сивӗ пулнӑ пирки Фома Хомич васкавлӑ «летучка» пухнӑ.

— Манӑн сывлӑх вашнах мар, мана шӑнма пачах та юрамасть, тӳрех сунас пулать,—тенӗ вӑл,—ҫавӑнпа та ҫуркуннеччен эпӗ малтанхи пӳлӗме куҫатӑп. Кунта каллех бухгалтери пултӑр...

Сотрудниксем нимĕн те чĕнмен, килĕшнĕ. Анчах стена хаçачĕн черетлĕ номерĕнче питĕ хитре ÿкерчĕк туса хунă: Фома Хомич хăйĕн сĕтелне çăварлăхласа утланнă та, ыткăнать çеç малалла! Ун хыççăн пукансем чупаççĕ (вĕсене тихасем пек тунă). «А ну, хуса çитĕр мана!»—тесе çырнă аяла.

— Нимĕн кулмалли те çук,—ассăн сывласа илнĕ Фома Хомич çав ÿкерчĕке курсан.—Эпĕ ĕç тухăçлăхне ÿстерессишĕн тăрăшнине ăнланмаççĕ, айвансем! Пуçлăх шăнса ларсан — кантур ăçтан йĕркеллĕ ĕçлетĕр-ха?..

Тăрăшасси, чăнах та, тăрăшнă ĕнтĕ Фома Хомич, ăна пытармалли çуках. Пĕрмай тĕрлĕ канашлусемпе ларусем ирттернипе киле вăл çĕрле тин таврăннă. Анчах та унăн çемйи пулнă вĕт-ха, ытла пысăках мар пулин те—çемье: арăмĕ, хĕрачи. Мĕнле пурăннă вĕсем? Малалла çавăн çинчен каласа парас килет те ĕнтĕ манăн сире. Итлĕр акă эсир.

Плясунов районта чухнех авланнă. Тĕрĕссипех пĕлместĕп, анчах унăн арăмĕ Хвекла (эпир ăна халĕ Фекла Аристарховна, тесе чĕнетпĕр, урăхла юрамасть) хĕр чухне райцентрти столовăйĕнче официантка пулнă, теççĕ. Çавăнта паллашнă пулмалла ĕнтĕ вĕсем. Авлансан ултă уйăхран вĕсен хĕр çуралнă. Хăйĕн амăшне хисеп туса, Фома Хомич арăмĕ больницăран тухиччен загса кайнă та ачине Укахви ятлă çыртарнă. Питĕ лайăх ят ĕнтĕ ку. Укахви, Уках, Укаç... Никам та тир-

кес çук! Анчах арăмĕ, киле таврăнсан, Фома Хомича куншăн питĕ хытă лектернĕ, тет.

— Мĕн пуçпа ачана çав вилме маннă карчăк ятне патăн, эсремет?! Хулара пурăнмалла пулсан, ачан çак тухатмăш ячĕпе мĕн курас пулать?..

Упăшкине Хвекла чут кăна питĕнчен вĕри чейпе чашлаттарман, теççĕ...

Ачи пилĕк çула çитсен, вĕсем, чăнах та, хулана куçнă. Малтанах каларăм-çке: Фома Хомич кунта служба пусми тăрăх питĕ хăвăрт хăпарнă, директора çитнĕ. Паллах, Хвекла та пĕр вырăнта тăман, вăл та, хăй каларĕш, ӳссе, улшăнса пынă.

Пĕррехинче Фома Хомич киле таврăнать те—тĕлĕннипе шанк хытса тăрать. Арăмĕн алтуни хулăнăш çивĕчĕсем çук, таçта хăямата кайса кĕнĕ! Ёнси таранах касса пăрахнă иккен вĕсене... Юлашки çӳçне вара кăтралатса лартнă та, унăн пуçĕ тин çеç пăранланă пуçтек тирĕпе витнĕ пекех пулса тăнă.

— Апайтурух, Хвекла, мĕн хăтланатăн эсĕ?!—чĕтрекен сасăпа ыйтать Фома.—Ма касса пăрахрăн çивĕтӳсене?

— А мĕн вара... Директор арăмĕ пуль эпĕ?—тет ăна хирĕç арăмĕ, ним шикленмесĕр-тумасăр.—Халĕ пур начальниксен арăмĕсем те çавăн пек çӳреççĕ. Эс тата çакна кур-ха!

Вăл пĕррех хăрах урине пукан çине хăпартса хурса кăтартать. Уринче—шит çӳлĕш кĕлелĕ, хура лакпа

йалтартатса таракан туфли иккен. Фома Хомич нимĕн те калаймасть, туфли хакне те ыйтмасть, пырĕ патне йаваланса хапарна темле чамарккана аран çатса ярать çеç.

Çаван хыççан Хвекла упашки кашни укçа илсе пымассеренех хакларан хакла япаласем илме тытанать, тепĕр чух пĕр кило аш илмелĕх те укçа хавармасть, пурçан та бархат туянать: хĕрлĕ юбкасем, симĕс кофтасем, сенкер шлепкесем, сара сумкасем... Ентĕ ĕмĕрне те Хвеклана ялта пуранна çын тесе калас çук! Тумланса лартать-тĕк, хуть выставкана каларса тарать! Ытла капар пулна пирки тепĕр чух лашасем те хараççĕ унран...

* * *

— Қаçал кĕркунне пирĕн Укахан шкула каймалла вĕт-ха? Хаш шкулне ятратпар, чавашла вĕрентекеннине пуль?—тет пĕррехинче Фома, ĕçрен тавранна хыççан диван çинче хырамне шалкаласа выртаканскер.

Фекла Аристарховна ана хирĕç куçĕсене хаярран çуталтарса илет:

— Мĕ-ĕн? Эсĕ йутеме пуçламаран пулĕ те?.. Мĕнле чаваш шкулĕ тата вал? Снать не снаю! Хамар хулара пуранатпар пулать те, ачана чавашла вĕрентетпĕр пулать! Иш ты! Ни-ни-ни, никаких та ун пек пулмасть!

Фома Хомич хирĕç калама тарать:

— Ара, Укахĕ пирĕн вырасла ытлах пĕлсе каймасть те-ха, йывар пулать пулĕ ана вырас шкулĕнче...

— Мольчать!—урипе тапса кăшкăрса пăрахрĕ арăмĕ.—Сăмах та ан хушнă пултăр кун пирки мана хирĕç! Хамăн пĕртен-пĕр юратнă хĕрĕме çын тума хамах пултаратăп-ха. Эс ан та хутшăн! Аçтан пĕлес, тен, ăна чаплă çын пулма пӳрнĕ? Тен, пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерекен артистка пулать вăл? Илтместĕн-и, халех епле юрлать вăл.

— Юрланинех илтмен, макăрнине илткелетĕп...— тет Фома.

— Мольчать!—каллех кăшкăрать ун çине Хвекла.— Чăваш шкулне ярасси çинчен çăвар та ан уçнă пултăр!.. Тата акă мĕн калатăп сана: пăрах эсĕ ачана ялти пек Уках тесе чĕнме!

— Укаха Марье теме çук ĕнтĕ...—мăкăртатать Фома.

— Пур!—татах урипе тапса илет Хвекла.—Вĕрентрĕç ĕнтĕ мана. Акафине Қафа теме те, Қанна теме те юрать, тет.

— Мĕнле кăннă тата вăл?—тăрăхлама пăхать упăшки.

— Қăннă мар, чорт, к... к... Ганна!—аран тĕрĕс каласа ярать Хвекла.—Çавна та чухлаймастăн, сысна!

Арăмĕн температури хăпарсах пынине, малашне ырриех пулас çуккине сиссе, Фома Хомич тек чĕнмест, стена еннелле çавăнса выртать те, темиçе минутран пӳлĕм вăл харлаттарнă сасăпа тулса ларать...

Çавӑнтанпа Фома Хомич ачине вӗрентес пирки пӗр-ре те сӑмах хускатман.

— Тепӗр тесен, ача пӑхса ӳстересси—хӗрарӑм ӗçӗ. Манӑн службӑра та ӗç мӑй таранах,—тесе лӑплантар-нӑ вӑл хӑйне.

Çул хыççӑн çул иртнӗ. Укахран пулса тӑнӑ Ганна (Ганночка, Ганюсенька, Ганулик...) питӗ лайӑх ӳснӗ. Амӑшӗ ӑна пуканерен те пукане пек тумлантарнӑ, вӑл мӗн çиес тенӗ—çавна тупса çитернӗ, кайӑк сӗчӗ кӑна çисе курман пулӗ Хвеклан юратнӑ хӗрӗ... Паллах, нихçан та нимӗнле ӗç те хушман ӑна,—тур хӑтартӑрах алла варалассинчен! Шав мухтанӑ ӑна, кӳршӗсем умӗнче те ялан каçса кайсах мухтаннӑ унпа:

— Ман Ганночка паян физкультурӑпа каллех 5 илнӗ...

— Шӑматкун вечерта ун пек ташлаканни никам та пулмарӗ вӗт! Пӗтӗм халӑха тӗлӗнтерчӗ! Талант, теççӗ пурте.

Анчах Ганночки вара, пӗр вунӑ çула çитсен, килте асар та писер çӗмӗрттерме тытӑннӑ. Ирхине, шкула каясси пӗр çур сехет çеç юлсан, тӑрса ларать те тытӑнать кровать çинчен урисемпе сулкаласа командӑсем пама:

— Анне, ӑçта манӑн хӑрах туфли? Ăçта кӑвак трусик? Нихçан та вырӑна хумастӑн! Тупса панӑ пултӑр халех!

Аран-аран тумланкаласа çитсен, амӑшӗ лӗп шывпа

питне çуса янӑ хыççӑн сӗтел хушшине ларсан, тепӗр «сеанс» пуçланать:

— Анне! Чей вӗри, ӗçейместӗп! Ма сиврех тумарӑн? Сахӑрне ма нумай ятӑн, юратмастӑп эпӗ тутлине! Колбассийӗ çуллӑ! Ху çи ун пеккине, эпӗ выçах пурӑнатӑ-ӑп...

Çапла кутӑнланать-кутӑнланать те тепӗр чух урока та вӑхӑтра çитеймест вара.

Анчах Фекла Аристарховнӑна ку пӗртте кӳрентермен. «Талантлӑ ачасем яланах çавӑн пек кӑшт кутӑнрах пулаççӗ» тенине илтнӗ иккен вӑл такамран. Çавна ӗненсе лартса, юратнӑ хӗрӗ темле «номерсем» тусан та чӑтӑмлӑн тӳссе ирттернӗ. Ганночка пӗр вунпиллӗкелле çитсен, ӑна пӑхма пӗччен вӑй çитерейменнипе, Хвекла нянька илсе янӑ. Мӗн кӑна тутарман пуль вара ӑна Ганна! Çӳçне те тураттарнӑ, вырӑн çинчен анмасӑрах чӑлхине те тӑхӑнтарттарнӑ, ӑнсӑртран çурӑм кӗçӗтсен—ӑна та хыçтарнӑ. Лайӑх пурнӑç пулнӑ Уках-Ганнӑн, ӗлӗкхи улпут ачисен пурнӑçӗнчен пӗртте кая мар! Хитре ӳснӗ вӑл, тап-таса та яп-яка. Ниçта кайса кӗрейми савӑннӑ Хвекла ун çине пӑхса.

— Эх, мӗнле арçын телейлӗ пулӗ-ши ман хӗрӗме ӳлӗмрен качча илсе?—вӑрттӑн шухӑшланӑ вӑл, Ганна вечерсене кайма тумланса ларсан.—Ылтӑнран та хаклӑ арӑм пулать вӗт! Çав тери ӑслӑ, çав тери хитре...

Анчах тепӗр чух уяр çанталӑкра та аслати авӑтать çав. Фома Хомич пӗррехинче ӗçрен таврӑннӑ та арӑм-

не ытла та тӗлӗнмелле, пачах та ӗненмелле мар хыпар пӗлтернӗ:

— Пирӗн хӗр питӗ япӑх вӗренет, тет. Шкул директорӗ паян телефонпа шӑнкӑртаттарчӗ. Алгебрӑпа—иккӗ, химипе—иккӗ, историпе аран-аран виççӗ лартса панӑ. Учительсене итлемест, тет, акӑлчанла вӗрентекен учительницӑна ӗнер чӗлхе кӑларса кӑтартнӑ. Пырса калаçма хушрӗç. Мӗн тумалла ӗнтӗ халь?

Хвеклашӑн ку аçа çапнӑ пекех пулнӑ. Вӑл, тӑрук кӑвакарса кайса, пӗтӗм кӗлеткипе siksе чӗтреме тытӑннӑ...

— П-пулма п-пултараймасть! Элек ку, суя!—кӑшкӑрса янӑ вӑл унтан.—Ман хӗр япӑх вӗренет пулать-и? Çук, çук! Куна вӗсем ахаль, курайманнипе калаççӗ. Эп вӗсене... эп вӗсене кайса кисрететӗп акӑ пӗрре! Пурне те тӑн кӗртетӗп—директорне те, двойкӑсем лартаканнисене те! Мӑшкӑллаттармастӑп хам ачарӑн, çук!..

Шӑпах çав вӑхӑтра хӗрӗ шкултан таврӑннӑ та, яланхи пекех сумкине кровать айне ывӑтса, кресло çине лак! ларнӑ.

— Ох, ывӑнтӑм!.. Юлашки урок пулмарӗ те—икӗ сехет волейболла выляrӑмӑр. Шалт ӑшша пиçрӗмӗр...

Ашшӗпе амӑшӗ нимӗн те чӗнмен.

— Мӗн эсир, чӗлхесӗр пулнӑ пек ларатӑр?—тӗлӗннӗ хӗрӗ.—Мӗн, мана нихçан та курман пек пӑхатӑр?

— Ганна,—тенӗ вара ашшӗ хуллен,—хӗрӗм... Санӑн шкулта ӗçсем мӗнлерех пыраççӗ?

— Мĕнле ĕçсем тата?—ăнланман пек пулнă Ганна.

— Уроксем эппин, предметсем... Алгебра унта, хими, истори...

— Шутсăр лайăх!—тенĕ те Ганна, ним пулман пекех, кресло çинчен тăрса кухньăналла утнă.— Анне, мĕн çимелле? Ман хырăм питĕ выçрĕ!

— Чим-ха, чим,—кăшт хăюланнă ашшĕ,—хырăму ниçта та тармĕ-ха вăл... Эс мана лешне кăтарт-ха... Дневник, теççĕ-и-ха ăна...

— Мĕн тума?—тутине тăрук тăснă Ганна.

— Курас килет, отметкăсем мĕнле...

— Ак тата, новость! Çичĕ çул пăхмарăн та, халь тăруках курас килсе кайрĕ пулать? Интереснă!

— Кăтарт, тетĕп!

— Çук манăн дневник!—аллисене сарса пăрахнă Ганна.

— Епле çук?

— Çаплах, çук! Çухатнă эп ăна!—Ганна, хăй сисмесĕрех, ашшĕне чĕлхине тем тăршшĕ кăларса кăтартнă. Фома Хомич малтанах ăнран кайнă пек пулнă, унтан çав тери хаяррăн:

— Кăтарт, шуйттан çури!—тесе кăшкăрнă та хĕрне аллинчен тытса чарнă.—Халех кăтарт! Санăн унта çара двойкăсем...

Вăл каласа пĕтереймен—Ганна, хăйне сасартăк çĕçĕпе пырса чикнĕ пек, хăлхана çурса пăрахмалла кăшкăрса янă:

— Алла-а... ай-ай, алла хуҫран! Алла-а!

Ҫавӑнтах диван ҫине кайса ӳкнӗ те тапкаланма, ҫапкаланма тытӑннӑ, хытӑран хытӑ кӑшкӑрнӑ:

— Алла-а... а-а!..

Фома Хомич тӑруках ҫухалса кайнӑ, ачин аллине чӑнах ыраттартӑм пулмалла, тенӗ, унтан ёнгӗ каҫару ыйтма та хатӗр пулнӑ. Анчах ним тума та ёлкӗреймен, ун ҫине Хвекла Уссури тигрӗ пек сиксе ларнӑ.

— Мӗн туран эс ачана, ш-шуйттан?! Вӗлерес терӗн-и, ҫвер! Эп сана... У-у, тӑшман!..

Ҫавна кура, Ганночка тата хытӑрах ҫухӑрнӑ—аш-шӗне лайӑхрах лектересшӗн пулнӑ вӑл: ан ҫыпӑҫ, дневник ан ыйт, ан кӳрентер ачуна!

Ҫак килти «батали» чылаях тӑсӑлма пултарнӑ, анчах Хвекла упӑшкине сӑмаварпа пеме тӑнӑ самантра пӳлӗме Ганнӑсен класс руководителӗ—пӗтӗм хула хисеплекен ватӑ учительница кӗрсе тӑнӑ...

— Ырӑ кун пултӑр! Мӗнле вайӑ вылятӑр?—тенӗ вӑл.

Пурте шӑп пулнӑ... Хвекла аллине уснӑ, Фома Хомич часрах кухньӑналла тухса шӑваннӑ, Ганна диван ҫинчен сиксе тӑрса типӗ куҫӗсене шӑлкаласа илнӗ.

Учительница вӗсем патӗнчен каҫ пуласпа тин тухса кайнӑ. Мӗн калаҫнӑ вӑл Хвеклапа—ӑна пӗлместӗп, анчах та вӑл пырса кайнин усси пулнах. Ытарайми Уках-Ганна «виҫҫӗсемпе» те пулин класран класа куҫкаласа пычӗ, ватам шкул пӗтернӗ ятне турӗ-турех.

Унтан вара... Унтан, паллах, института кӗме заявлени пачӗҫ вӗсем. Шупашкарти институтсене тиркерӗҫ,—мӗн вӑл провинцири институт?—тӳрех Ленинграда ярӑнтарчӗҫ. Хӗрӗ экзамена кайсан, Хвекла кӳршӗсене хӑй кашни каҫах телейлӗ тӗлӗксем курни ҫинчен каласа паратчӗ, тет. Анчах тӗлӗкӗсенчен усси пулмарӗ—ахалех таврӑнчӗ хӗрӗ. Пӗлекенсем каланӑ тӑрӑх, ҫапла пулнӑ, тет: экзамена каяс умӗн малтанхи кунне Ганна парикмахерскинче ятарласах ҫӳҫне ултӑ уйӑхлӑх «перманент» тутарнӑ, чӗрнисене хӑйраттарса хӗп-хӗрлӗ сӑрлаттарнӑ( провинцирен килнӗ ҫын пек курӑнас килмен унӑн!). Малтанхи экзамена кӗрсенех вара пӗр ватӑ профессор ун ҫине тӗлӗнерех пӑхнӑ та:

— Эсир, хитре пике, Ленинграда мӗн тума килтӗр?—тесе ыйтнӑ.

— Института экзамен пама, вӗренме,—тенӗ Ганна.

— Парса пӑхӑр эппин, анчах сирӗн, ман шутпа, вӗренмелле мар, качча каймалла, хӗрӗм...—ассӑн сывласа илнӗ профессор.

Кӗскен каласан, Ганнӑна пирвайхи предметпа экзамен тунӑ хыҫҫӑн тек экзамена кӗртмен.

Хӗрӗ таврӑнсан тепӗр куннех Хвекла унпа пӗрле музыка училищине чупрӗ. Ганнӑна артистка тӑвасси ҫинчен вӑл тахҫанах ӗмӗтленнӗ-ҫке-ха. Анчах кунта та экзамен комиссийӗн членӗсем пӗр-пӗрин хушшинче: «Ку хӗрачан хӑлхи ҫине упа пусса кайнӑ», тесе пӑшӑлтатса илнӗ. Йапӑлтатса та пӑхнӑ Хвекла комисси

председательне—тулкки пулман. Пир-авăр техникумне Ганна хăй тиркесе пăрахнă, медицина техникумĕ çинчен асăнсан, хăсма тапратнă...

Чăсах пур çĕрте те вĕренӳ çулĕ пуçланнă. Уках-Ганна кăнтăрла килте романсем вуласа выртнă, каçхине вара... ăçта каяс-ха каçхине?

Танцине! Ташлама!

Кунта вара вăл пуринчен те ирттернĕ, пурне те тĕлĕнтернĕ.

— Эх, çак Плясунова пек ташлакан пуласчĕ...— кăтрашка пуçлă нумай хĕрсем ăмсаннă ун çине пăхса.

— Унăн хушамачĕ те Плясунова çав, ăна çитеймĕн!—тенĕ теприсем.

Анчах ташланипех хырăм тăранмасть-çке-ха! Хырăм тăрантарма ĕçлес пулать кăшт та пулин. Плясунов хĕрĕ хăй те ăнланнă ĕнтĕ çакна. Шкултан унпа пĕрле тухнисенчен пĕрисем вĕреннĕ, теприсем ĕçленĕ— хăшĕ завода кĕнĕ, хăшĕ çĕнĕ çĕре кайнă...

Юратнă хĕрне пуринчен мала хурса пурăннă Хвекла та час-часах ассăн сывлама пуçланă:

— Ах, темле пурăнăпăр ĕнтĕ малашне... Хам ĕçлейместĕп, аçу та ватăлать. Çӳçĕ те юлмарĕ авă...

Фома Хомичăн кукши сарăлсах пыни ытла пысăк хурлăхах пулман-ха вăл, çӳççĕр те çĕр çул пурăнма пулать, анчах кантурти сотрудниксене пĕр пӳлĕмрен тепĕр пӳлĕме сиктерсе пурăнсан-пурăнсан, ăна хайне те сиктерчĕç. Пӳлĕмрен пӳлĕме куçармарĕç ăна —

крыльцаранах каларса ячĕç. Пĕр виçĕ уйăх ĕçсĕр çӳрерĕ вăл, унтан аран-аран тепĕр пĕчĕк кантура завхоза кайса кĕчĕ. Тепрер уйăхран вара хăйĕн хĕрне те çав кантурта хутсем çĕлесе ларма ертсе кайрĕ...

Ĕçсем çакăн пек ăнса пыма пуçланă пулин те, Хвеклан чунĕ вырăна ларман. Чăн та ĕнтĕ, мĕне пĕлтереҥ-ха ашшĕпе хĕрĕ иккĕшĕ пĕрле уйăхра ултçĕр-çичçĕр тенкĕ çеç илсе килни? Çынсем пĕчченшерĕн ĕçлесе те пин ытла илеççĕ... Теприсем тата телейлĕрех: лайăх кăна кĕрӳ туянса яраççĕ те юрла-юрла пурăнаççĕ, ним хуйхи-суйхи те çук!

Çакăн пек илĕртӳллĕ шухăш Хвекла пуçĕнче тахçанах пулнă, халĕ ĕнтĕ шухăшран ĕçе куçмалли вăхăт пырса çитнĕ. Ним пытармасăр каласан, Ганна хăй те çав майлăрах шухăшлама тытăннă...

— Мĕн тертленсе пурăнас? Качча кайнă та—ĕçĕ те пĕтнĕ!

Пулас кĕрӳ (упăшка) пирки амăшĕпе хĕрĕ те пĕр пек шухăш-кăмăл тытнă. Упăшка (кĕрӳ) тени вăл шалу сахалтан та пин çурă илмелле, укçине пĕтĕмпех арăмĕн аллине памалла, уйăхра иккĕрен ытла ĕçмелле мар, ĕçсен те ан çапăçтăр. Çынни хваттерсĕр пулни — чăрмав мар, хамăр патрах усрама пулать. Анчах—ку ĕнтĕ тĕп услови—хулара пурăнакан çын пултăр, ялан, ĕмĕр-ĕмĕр хулара! Яла куçса кайма пултармалли çын—упăшка тумалли кандидат пулма пачах та юрăхсăр.

Çаван пек ĕмĕтленнĕ амăшĕпе хĕрĕ...

Ганнăна пăхакан каччăсем пулман, тесен, эпĕ вулакансене улталанă пулăттăм. Нумай пулнă вĕсем. Сарри те, хури те, лутри те, çӳлли те—тĕрлĕренех! Анчах Ганнăна юрăхлисем ытлах курăнса кайман. Хытă тиркенĕ-çке вăл, тата амăшĕ те вĕрентсех тăнă ăна! Йăнăшас пулмасть! Акă, сăмахран, пĕринчен танцинче ялан сăра шăрши кĕрет, вăл ĕçет эппин; теприн пичĕ шатрарах—ун пек çынпа халăх умне мĕнле тухан? Тепри упа пекех кăнттам, ташлама та пĕлмест; хăшĕсем укçа сахал ĕçлесе илни тӳрех курăнать—ялан пĕр галстукпа çӳреççĕ... Юрă уявĕнче пĕр питĕ илемлĕ, сарă та яштакаскерпе паллашнăччĕ—авланнăскер пулнă, мур, малтанхи арăмне икĕ ачишĕн алимент тӳлесе пурăнать. Аçтан пурнăç пултăр ун пек çынпа? Унтан тата халь çеç ялхуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухнă икĕ каччăпа паллаштарчĕç ăна, иккĕшĕ те Ганнăна çав каçах юратса пăрахни сисĕнчĕ—хуть те хăшне суйла ĕнтĕ, анчах... иккĕшĕ те юрăхсăр кандидатсем пулчĕç: пĕри Алтая каять иккен, тепри—Шăмăрша, колхоза.

Пĕррехинче тата Ганна çамрăк кăна милици лейтенанчĕпе паллашнă,—театрта «Любовью не шутят» ятлă пьеса пăхнă чух юнашар ларнă вĕсем. Ытармалла мар каччă пулнă вăл! Хитри те хитре, пăртакках чикан евĕрлĕрехскер, хайне çав тери культурăллă тыткаланă, малтанхи антрактрах Ганнăна шоколадпа хăналанă, аллинче—ылтăн сехет: укçа сахалах илмест

пулмалла. Халь кăна Ленинградра хăйсен темле шкулĕнче вĕренсе тухса килнĕ, тет. Спектакль хыççăн вăл Ганнăна киле ăсатса янă, тепĕр кунне вĕсем филармонинче тĕл пулнă, унтан «Милый друг» кино курнă...

Питĕ килĕшнĕ çак лейтенант Ганнăна. Анчах ун çинчен амăшне каласа парсанах, лешĕ ах! тенĕ те диван çине йăванса кайнă:

— Ой, турăçăм!.. Вăхăт çитичченех вĕлеретĕн эппин мана...

— Мĕншĕн ун пек калатăн, анне?

— М-милицине... милицине юратрăн пулать, о-ох! Эп вĕсене урамра курсан та хăратăп та, эсĕ киле илсе килесшĕн...

— Мĕн хăрамалли пур вĕсенчен, анне? Вĕсем те ытти çынсем пекех пуль?

— Мар çав, ма-ар! Вĕсем... пăшаллă! Пĕрре сан çине çиленет те—çамкаран шап! тутарать çеç вĕт! Çавăн çинчен шутларăн-и эсĕ, ухма-ах...

— Володя вăл культурăллă, вĕреннĕ çын!

— Вĕреннĕ пулин! Çавах пăшаллă! Тата... тата ăна хăйне те вĕлерме пултараççĕ, çавна пĕлетĕн-и?

— Мĕншĕн вĕлерччĕр? Камсем?

— Вĕлереççĕ çав!—пĕççине шарт! çапса тăрса ларнă Хвекла.—Пĕрре-пĕрре бандитсене тытма каять те, вăрманта ăна хăйне шаккаса хураççĕ. Тăлăх арăм пулса юлатăн вара! Кам пĕлет, тен, унччен ача та пулĕ-ха сирĕн. Мĕн куратăн-ха вара? Э? Çук, çук, ан та тав-

лаш эс манпа! Памастăп сана милицие, çамрăклах тăлăх арăм пулса юлма çуратман эпĕ хамăн хĕре!

Анчах та кăлăхах пăлханса юнне пăснă Хвекла, — леш лейтенанчĕ авланма шутламан та. Вĕренсе тухнă хыççăн ĕçе каймалли приказ илме çеç килнĕ-мĕн вăл Шупашкара. Приказ илнĕ те—инçетри пĕр района тухса кайнă. Ганна урăх курман та ăна...

Хĕл иртет, каллех çуркунне çитет—чечексен ырă шăрши кăмăла çав тери çĕкленĕ, çамрăксен чĕрисенче юрату кăвар пек хĕрÿленнĕ тапхăр. Шăп сиреньпе çĕмĕрт çуралнă вăхăтра Плясуновсемпе юнашар пурăнакансем патне пĕр çамрăк çын хваттере пырса кĕнĕ. Вăл кил хуçисемпе пÿлĕм пирки калаçса татăлнă чух Хвекла шăпах вĕсем патĕнче пулнă-мĕн.

— Эпĕ — инженер-строитель, — тенĕ çав çамрăк çын,—Мускавра вĕренсе тухнă хыççăн ĕçлеме хамăр хулана ячĕç. Ӳлĕмрен мана хваттер параççĕ-ха, анчах халлĕхе çын патĕнче пурăнма тивет. Ну, пĕччен çынна вырăн нумай кирлĕ мар мана, пĕр краватьпе сĕтел лартнă та—çитнĕ!

Хвекла ăна витĕр шăтарас пек, куçĕсемпе çисе ярас пек пăхса ларнă...

— Ытармалла мар çын-çке ку!.. Тен, ку телее пире турă хăех ярса парать пулĕ?—сурчăкне çăта-çăта шухăшланă вăл.—Мĕн тери чаплă мăшăр пулмалла вăл ман хĕр валли!

Ганна кантуртан таврӑнсанах, Хвекла ӑна ҫав ҫӗнӗ кӳршӗ ҫинчен каласа панӑ.

— Паллашас пулать санӑн унпа! Епле пулсан та паллашас пулать! Унтан хамӑр пата чӗнӗпӗр... варенипе чей ӗҫме. Анчах асту эсӗ, хӑюллӑрах пул, вӑл пӗр сӑмах каласан эсӗ иккӗ кала, унта-кунта чӗнсен ытлашши туртӑнса ан тӑр, тепӗр арҫынсем йӑлӑнтарнине юратмаҫҫӗ, тӳрех аяккалла пӑрӑнса кайма пултараҫҫӗ...

Хвекла каҫса кайса, чыхӑна-чыхӑна вӗрентнӗ хӑйӗн хӗрне, анчах хӗрӗ темшӗн-ҫке ытла тимлӗнех итлемен ӑна. Хӑйне кичем пулнӑ пек, амӑшӗ калаҫнӑ вӑхӑтра вӑл темиҫе хут та анасласа илнӗ.

— Тунсӑхласа ҫитнипе ку,—тенӗ кун пирки Хвекла хӑй ӑшӗнче.

Унтан вӑл хӑйӗн планне ҫине тӑрсах пурнӑҫа кӗртме тытӑннӑ... Кӳршӗ арӑмӗпе пӗрле май тупса, Ганнӑна ҫамрӑк инженерпа паллаштарнӑ, кайран Фома Хомич ҫуралнӑ куна уявланӑ пекки туса хӑнана чӗннӗ, кӗркуннеренпех тутланса ларнӑ варенисене кӑларса хунӑ ун умне, хӑй сисиччен сӑра ҫине коньяк ярса панӑ, Ганна альбомне кӑтартнӑ—унта Ганна пӗлтӗр ҫулла канмалли ҫуртра пурӑннӑ чух хӑйӑр ҫинче ӳкернӗ карточкӑсем нумай пулнӑ... Ганна хӑй вӗсене кӑтартасшӑнах пулман, аван мар, тенӗ, именнӗ, анчах Хвекла ӑна йӑпӑрт тепӗр пӳлӗме чӗнсе илнӗ те питӗ хытӑ чӗпӗтнӗ:

— Эс мана ёç тума ан кансёрле! Саншăн тăрăшатăп! Эпĕ ăна юриех санăн кĕлеткӳ мĕнле илемлине кăтартасшăн, ухмах...

Ганна макăрса янă, унтан вара хăнасем саланиччен те нимĕн те чĕнмен.

Тепĕр ирхине ирех Хвекла пĕр чăм сăра тултарса кӳршĕсем патне юртнă, тин çеç куçне уçнă инженера мухмăр уçтарнă, каллех чи çепĕç сăмахсемпе калаçнă унпа. Вăл çав тери тулли кăмăлпа киле таврăннă тĕле Ганна ёçе тухса кайнă...

Каçхине, ĕçрен килсен, Ганна хăйĕн арчине уçнă та платьесене кăларса суйлама тытăннă. Капăррисене пĕр енне, куллен тăхăнмаллисене тепĕр çĕре хунă, унтан вĕсене утюглама тытăннă.

— Эс мĕн ăс тытрăн ара кун пек, çĕр хутах кĕпесемпе хăтланатăн?—тĕлĕнерех ыйтнă унтан амăшĕ.

— «Приданăй» хатĕрлетĕп,—тенĕ Ганна, ун çине пăхмасăрах,—эс мана качча паратăн вĕт-ха... Туй кунĕ çитсен тин хатĕрленмелле-им?

Хвекла чĕнмен, выртнă та çывăрса кайнă. Ганна шăппăн кăна чăматан илсе кĕртсе унта темиçе платье, тутăрсемпе чăлхасем, икĕ мăшăр пушмак, çăматă, аттĕшĕн ваткăллă брюкине, тиртен çĕленĕ алсишне, амăшĕн ăшă тутăрне, тимĕр кружка, пĕр çĕçĕпе кашăк тата чылай çавăн пек япаласем вырнаçтарнă. Пĕртте качча каймалли «приданăй» пулман ку!

Тепĕр куние, упăшкипе хĕрне ирхи апат çитерсе ёçе

ӑсатсан, Хвекла хӑйӗн сӑранланса ларнӑ сумкине ҫӗк-лесе пасара тухса лӑпӑстатнӑ. Чылай ҫӳренӗ вӑл унта (ӑҫта мӗн сутнине, пасарти хаксене пурне те пӗлмелле-ҫке!), аш-пӑш, ҫу-ҫӑмарта сутакансемпе тавлашнӑ, унтан хӑйне мӗн кирлине илнӗ те кӑнтӑрла ҫитеспе, пиҫнӗ помидор тӗслӗ пулса кайса, килне таврӑннӑ.

Ҫенӗке кӗрсе пӳрт алӑкӗ патне ҫитсен, вӑл ун ҫинче булавкӑпа тирнӗ шурӑ хут листи ҫакӑнса тӑнине курах кайнӑ.

— Ай-уй, ку мӗне пӗлтерет тата?—тӑруках хӑраса ӳкнӗ Хвекла.—Ёмӗрне пулман япала...

Вӑл хута сӳсе илнӗ те, ун ҫине темскер ҫырнине асӑрхаса, часрах куҫлӑх тупса тӑхӑннӑ.

«Хаклӑ аннеҫӗм! Мана ан шырӑр...»—тенине вула-санах, Хвекла урисем лӗнчӗр-р... аванса аннӑ, сывлӑ-шӗ пӳлӗнсе ларнӑ, куҫӗсем хуралса килнӗ.—«Килте пурӑнса пӑчӑхса ҫитрӗм эпӗ, тек тӳсме пултарай-мастӑп...»

Хвекла куҫӗ умӗнче саспаллисем ташлама тапрат-нӑ, пӗрин ҫине тепри сиксе хӑпарнӑ.

«Пӗтӗмпех йӑлӑхтарса ҫитерчӗ мана...»

— Турӑҫӑм! Вилме кайнӑ вӗт ку! Ҫакӑнма, шыва сикме! О-о, хӗрӗ-ӗм!—ӳлесе янӑ Хвекла. Унтан, аран сывлӑш ҫавӑрса илсе, Ганна ҫырӑвне ҫапах та малал-ла вуланӑ:

«Килте нафталин шӑршипе чыхӑнса ларни те, чӗлӗм тӗтӗмӗпе тулнӑ тӑвӑр кантурта хутсем ҫӗлесе

ларни те, эсӗ ман валли кашни кун упӑшка шырани те пуҫӗпех ухмаха ертсе яма пултарать... Анчах манӑн пурӑнас килет-ха, нумай пурӑнас килет, ҫын пулас килет! Эпӗ халь ҫамрӑк-ха, манӑн вӑйӑм та пур, ӑсран та ытла катӑках мар... Хамӑн телее хамах шыраса тупӑп, тесе шанатӑп. Ырӑ ҫынсем (тавтапуҫах вӗсене!) юлашки вӑхӑтра нумай калаҫрӗҫ манпа, вӗсем кӑшт уҫӑлса ҫӳреме, тӗнчене тухса курма сӗнчӗҫ... Ҫавӑнпа та эпӗ паян хулари 99 комсомолецпа пӗрле Ҫурҫӗре, Печора чугун ҫулне тунӑ ҫӗре тухса каятӑп,— эпӗ вӗсем хушшинче ҫӗрӗмӗш ҫын. Унта ҫӑмӑлах пулас ҫуккине пӗлетӗп, анчах вӑл мана пӗртте хӑратмасть— халӑх ҫинче ҫын пӗтмест, теҫҫӗ вӗт! Сывӑ пул! Ан ятла, ан кулян, маншӑн хӑраса ан пурӑн,—тен, пӗрер ҫулталәкран, килсе курӑп-ха сире. Телей сун мана, анне! Кӳршӗри инженера салам кала.

Сана юратакан хӗрӳ **Ганна».**

Хвекла аллинчи ҫыру ҫӗре ӳкнӗ, хӑй—диван ҫине. Вӑл малтан хуллен макӑрнӑ, унтан хытӑран хытӑ, урама илтӗнмеллех ӳлеме тытӑннӑ: у-у, у-ух, пӗтрӗ-ӗм, виле-еп...

Сасартӑк пӳлӗме Фома Хомич кӗрсе тӑнӑ.

— Мӗн пулчӗ, ма завод труби пекех ӳлетӗн?—ним тӗлӗнмесӗр, ним хӗрхенмесӗр ыйтнӑ вӑл.

— Ак.., вула! Вула ҫак хута!—тенӗ Хвекла аранаран тухакан сасӑпа, урайӗнче выртакан ҫыру ҫине кӑтартса,

Упăшки хута васкамасăр вуласа тухнă та лăпкăн кăна сĕтел çине хунă. Унтан пукан çине ларнă та:

— Питĕ тĕрĕс тунă Ганна,—тенĕ.—Мухтатăп. Маттур. Тинех çын пулма пуçларĕ. Атту теплицăра çитĕнтернĕ чечек пек пуранатчĕ-ха... Халь ĕнтĕ пурнăç тутимасине чухлакан пулать. Мĕн макăрмалли пур уншăн? Савăнас пулать!..

— Эс ухмаха ернĕ, ват шуйттан!—кăшкăрса янă ăна хирĕç Хвекла, упăшки çине сиксе ларма хатĕрленсе.—Унта шăнса вилет вĕт вăл, е кашкăрсем тытса çиеççĕ ăна! Эсĕ хăвăн ачуна хĕрхенместĕн эппин, тискер чун!

— Вилмест, çирĕпрех пулать кăна,—аллипе сулнă Фома Хомич.—Ĕçлекен çын хăçан пĕтни пур? Хамăн опыта шута илсех калама пултаратăп эп ăна... Сана тĕрĕссипех калас-тăк, вăл унта каяссине эпĕ малтанах пĕлнĕ. Манпа калаçрĕ вăл. Эп чармарăм,—каях, терĕм. Шав нумай пуласран, сана юриех систерес мар, терĕмĕр. Çапла!

— О-о, тăшмансем! Мана вĕлерес тенĕ эппин эсир!—татах çухăрса янă Хвекла.

— Ничево,—татах аллипе сулнă Фома Хомич.—Эсĕ халлĕхе тракторпа таптасан та вилес çук-ха! Тепĕр аллă çул сиксех пуранатăн.

Вăл пукан çинчен тăнă та алăк патнелле утнă.

— Аçта тухса каятăн тата?—ыйтнă арăмĕ.—Мана

çакăн пек йывăр самантра пĕччен пăрахса хăваратăн пулать?

— Манăн хам ĕçпе станцине çитмелле,—терĕ Фома Хомич.—Эшелон тапранса кайман пулсан, Ганнăна куратăп пулĕ-ха унта. Çул çине укçа парса ярас пăртак...





# Ăнăçсăр экскурси

Ефим Петрович Заседалов, хула Совечĕн председателĕ, кукшаланма пуçланă тăсланкă хура çын, шăматкун каçхине суйлавçăсем умĕнче отчет тунă хыççăн килне ытлашши хаваслах таврăнмарĕ. Упăшки кăмăллах маррине арăмĕ тӳрех асăрхарĕ:

— Мĕн эсĕ, Ефимушка? Чирлемерĕн пулĕ те? Сăнран та улшăннă пек куранатăн...—терĕ вăл ăна йăвашшăн.

— Чирлĕн пирĕн çынсемпе...—мăкăртатса илчĕ ăна хирĕç Ефим Петрович.

— Хăтах лектерчĕç-и? Мĕншĕн-ши тата?

— Э-э, эсĕ те пулин ан çыпăç-ха!—аллипе сывлăша касса илчĕ упăшки. Çавăнтах хăй патне ачашшăн мăрлатса пынă ним айăпсăр кушак аçине урипе тапса алăк патнелле вăркăнтарчĕ.

Арăмĕ тек пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Çирĕм пилĕк çул хушшинче хăнăхса çитнĕ вăл: Ефим Петрович ĕçрен пăсăк кăмăлпа таврăнчĕ пулсан—луччă ан та шарла! Çавăнпа та вăл васкасах сĕтел çине апат пырса лартрĕ те шăппăн кăна тепĕр пӳлĕме кĕрсе кайрĕ.

Апатне Ефим Петрович çимерĕ (тарăхнă хыççăн апат анмасть çав вăл), ун вырăнне икĕ стакан çăра чей ĕçрĕ те, кĕç-вĕç тапранса каяс пăравус пек хашлаткаласа, вырăн çине выртрĕ.

— Çывăрса каясчĕ хуть часрах...—шухăшларĕ вăл.

Анчах ыйхă килмерĕ. Капла та выртса пăхрĕ Ефим Петрович, апла та, ним çинчен те шухăшлас мар тесе виçĕ хутчен çĕр таран шутларĕ—пĕрре, иккĕ, виççĕ, вуннă, аллă... Усси пулмарĕ. Куç умне пурпĕрех паянхи пухура тухса каланă çынсем курăнаççĕ, хăлхара вĕсен сăмахĕсем янăраççĕ:

— Хула Совечĕ суйлавçăсем хушса хăварнисенчен çуррине те туман! Суйлавçăсен наказĕсене манса кайнă!

Пурте тиркеççĕ—рабочисем, учительсем, служащисем, дворниксем... Тухса калакансем хушшинче тин çеç вунсаккăр тултарнă кăвак куçлă комсомолка та пул-

чĕ—çамрăксене стадион кирлĕ пулнă имĕш! Мечĕкле выляма вырăн çук вĕсем валли!..

— Эпир футбол тапмасăрах ӳснĕ,—мăкăртатса илчĕ Ефим Петрович.

Чылайччен асапланса выртрĕ вăл çапла. Унтан, аптранă енне, лампа çутса ячĕ те, сĕтел çинче выртакан пĕр кĕнекене тытса, сарлака сăмси çине куçлăх утлантарчĕ.

— Ќĕнекепе выртсан, эпĕ тӳрех çывăрса каякanччĕ-ха, лайăх эмел пекех пулаканччĕ вăл маншăн...

Ќĕнекине Ефим Петрович шăп варринчен уçса вулама тытăнчĕ. Мĕнле кĕнеке пулнă вăл, кам çырнă ăна—уншăн пурĕ-пĕр. Çывăрса каясчĕ! Ыран вуннăра исполком ларăвĕ пулать—иртерех кайса материалсем хатĕрлемелле...

Нумай выртнă-и Ефим Петрович, сахал-и, ăна эпир мар—вăл хăй те пĕлмест. Выртсан-выртсан, вăл çапах та тĕлĕрсе кайрĕ. Анчах вăхăт нумай та иртмерĕ, ун пӳлĕмне исполком сторожĕ Якур мучи пырса кĕнĕ пек туйăнчĕ.

— Чĕнеççĕ сана, Ефим Петрович,—терĕ вăл.

— Ќам чĕнет тата çĕр хута?—тĕлĕнсе тăрса ларчĕ председатель.

— Хаçата çыракансем, теççĕ...

Ќорреспондентсене Ефим Петрович юратсах кайман («куршанкă пек çыпăçаççĕ те—ниепле те хăпай-

мастӑн вӗсенчен!...»), анчах, бюрократ ятне илтес мар тесе, йапӑр-япӑр тумланса тухрӗ.

— Ой, тӗттӗм-ҫке,—терӗ вӑл, крыльца юпине ҫамкипе пырса ҫапӑнса.

— Хулара электричество ҫуккипе вӑл, Еххим Петровчӑ,—терӗ сторож.—Мӑкӑль тухмаллах ҫапӑнтӑн-и?

— Малашне электричестви пулать-ха вӑл, решени пур ун пирки,—тӳрре тухма пикенчӗ председатель, ҫамкине сӑтӑркаласа.

— Ҫапла-а,—ассӑн сывласа илчӗ Якур мучи.—Решенине эсир ӑна виҫӗмҫулах йышӑннӑччӗ. Двигательне те илсе килтӗр, анчах та темшӗн вӑл пӗлтӗртенпех чугун ҫул станцинче тутӑхса ларать-ха...

— Ну, ку санӑн ёҫӳ мар вара!—татса хучӗ ӑна хирӗҫ Ефим Петрович.

...Исполкомра ӑна, чӑнах та, центрти хаҫат корреспонденчӗ кӗтсе ларнӑ. Унпа пӗрле—районти хаҫат секретарӗ Ваня Шутников, ҫулӑм пек хӗрлӗ те кӑтра ҫӳҫлӗ йӗкӗт пулнӑ.

«Ку вутпуҫҫи тем те пӗр лӗпӗртетсе тултарман пулӗ те-ха...»—чалӑшшӑн пӑхса илчӗ ун ҫине Ефим Петрович.

— Сирӗн хула ҫинчен очерк ҫырма хушса ячӗҫ мана,—терӗ корреспондент.—Сирӗн пархатарлӑ ӗҫӗрсене кӑтартса парас кӑмӑл пур пирӗн... Пӗтӗм халӑх вулатӑр, пӗтӗм халӑх пӗлтӗр эсир икӗ суйлав хушшин-

че мĕн-мĕн тунисем çинчен. Паллах, куна валли малтан курса çӳремелле пулать...

— О, ку питĕ аван, питĕ якшă!—терĕ председатель, пит-куçне хаваслантарса. — Тавтапуç сире куншăн! Манмастăр пире. Мĕнле курса çӳрĕпĕр? Машина чĕнтерес-и, е айăр кӳлтерес? Момент кунта пулĕç!

— Çук, çуран лайăхрах пулать,—терĕ корреспондент.

— Тархасшăн, çурран-тăк—çурран кайăпăр. Хăвăрăн ирĕк...

Çав вăхăтра тул çутăлнă пек те, хĕвел тухнă пек те пулчĕ. Вĕсем виççĕн—Ефим Петрович, центртан килнĕ корреспондент тата Ваня Шутников урама тухрĕç.

— Малтан мĕнле... тĕп урама курса тухатпăр пулĕ?—ыйтрĕ председатель.—Утма та тикĕс унта. Қăçал асфальт сартăмăр.

— Çук, ăна чăн юлашкинчен курăпăр,—хирĕçлерĕ корреспондент.—Малтан хула хĕррисене пăхса çаврăнар.

— Тархасшăн, тархасшăн! Хула хĕррисенче те курмалăх пур пирĕн. Ӳсетпĕр!

Часах вĕсем икĕ урам урлă каçса виççĕмĕшне тухрĕç.

— Акă пирĕн çĕнĕ шкул!—сăртлăрах вырăнта ларакан виçĕ хутлă хитре çурт çине тĕллесе кăтартрĕ вара Ефим Петрович.—Мĕн чухлĕ сывлăш унта, çутă, ăшă! Шалта мĕн тери ырă тата!

— Анчах вăл ытла çĕнех мар ĕнтĕ, ăна иртнĕ суйлавчченех тунă...—сăмах çине сăмах хушса хучĕ Ваня Шутников.

Ефим Петрович ăна малтан илтмĕш пулчĕ, анчах Ваня çине çав тери хаярран пăхса илчĕ.

— Ак ку акă варени пĕçерекен фабрика,—терĕ вăл, маларах кайсан.—Ăна пирĕн «тутлă фабрика» теççĕ. Таврари колхозсем улма-çырла нумай туса илеççĕ, çавăнпа та фабрика валли чĕртавар çителĕклĕ!

— Çичĕ çул ĕçлет ĕнтĕ вăл,—терĕ Ваня Шутников,—Шупашкара министр пулма илсе кайнă Иван Иванч председатель пулнă чухнех туса лартнăччĕ ăна...

Ефим Петрович йĕкĕте каллех куçĕсемпе çунтарса илчĕ, анчах ют çын умĕнче нимĕн те каламарĕ.

— Лере авă часах кирпĕч завочĕ пулса çитет...

— Ăна райцентрти промартель тăвать,—каллех хушса хучĕ чарусăр Ваня.

— Çав икĕ хутлă çĕнĕ çурт—кĕпе-тумтир çĕлемелли мастерской. Фабрика теме те пулать ăна. Пĕлтĕр ĕçе кайрĕ...

— Выранти промышленность министерстви тăрăшнипе пулсан...

— Эс чĕлхӳне çырт-ха!—тӳсеймерĕ Ефим Петрович.—Ак ку акă—çĕнĕ парк. Ачасен паркĕ. Çулла çав тери ырлăх унта пирĕн ӳсекен ăрăва!

— Комсомол пуçарнипе ашшĕ-амăшĕсем питĕ хас-

ҫарран тытӑнчӗҫ те икӗ эрне хушшинчех туса лартрӗҫ,—каллех ӑнлантарчӗ Шутников.

«Аҫтан ҫыхланчӗ ку вутпуҫҫи»!—ҫав тери тарӑхса кайрӗ те Ефим Петрович, шӑлне шатӑртаттарса илсе малалла утрӗ.

Сасартӑк унӑн урисем айӗнчи хӑмасем хӑнкӑр-ханкӑр! турӗҫ те—хула пуҫлӑхӗ кӗтмен-туман ҫӗртенех тӑсӑлчӗ-анчӗ...

— Шуйттан тротуарӗ!—вӑрҫса илчӗ вӑл хаярран.

— Юсас пулатчӗ,—терӗ Ваня Шутников, ӑна ура ҫине тӑма пулӑшса,—юсанӑ пулсан ӳкместӗрччӗ...

— Коммунхоза темиҫе те каланӑ! Решени те пур...—мӑкӑртатрӗ председатель.

— Решенине ӑна урама сарса хума ҫук-ҫке! Решени—хӑма мар.

— Такам эсрелӗн ӗни ҫӳренӗ тата кунта...—татах ятлаҫса илчӗ Ефим Петрович,—алла вараларӑм.

— Алӑ варалани—пысӑк проблемах мар-ха вӑл, Заседалов юлташ, ӑна ҫума пулать. Акӑ, кӗҫех водопровод колонки патне ҫитетпӗр те...

— Ӗҫлемест ҫав пирӗн водопровод,—пачах та астумасӑр персе ячӗ хула пуҫлӑхӗ, аллине юрпа ҫуса.

— Ма тӳрлетместӗр?—ыйтрӗ корреспондент.

— Виҫӗ хут та пӑхса тухнӑ вӑл ыйтӑва...

— Тен, укҫа ҫук сирӗн?

— Укҫине параҫҫӗ те-ха ӑна... ниепле те ал ҫитерейместпӗр.

— Решенисем ҫырма кӑна ал ҫитет ҫав пирӗн!— терӗ Ваня.

Ҫапла калаҫса пынӑ май вӗсем хула варринче хӑяккӑн выртакан решетке хӳме патне пырса тухрӗҫ.

— Кунта мӗн-ха тата сирӗн?—йӗри-тавралла пӑхса илчӗ корреспондент.

— Парк. Хула паркӗ. Виҫӗмҫул кӗркунне пилӗк пин йывӑҫ лартсаттӑмӑр...

— Вӗсенчен миҫе йывӑҫ юлнӑ?

— Пӗлместӗп, шутламан ҫавна,—пуҫне пӑркаласа илчӗ председатель.

— «Качака паркӗ», теҫҫӗ ӑна пирӗн,— каллех ӑнлантарса пачӗ Ваня Шутников.

— Решенире ун пек ҫырман!—кӑшкӑрса пӑрахрӗ Ефим Петрович.—Мӗн ҫулӑхатӑн эс паян ман ҫумма? Тата ют ҫын умӗнче хӑвна кӑштах йӗркеллӗрех тытас пулать пулӗ!

— Ҫапла ҫав вӑл... Качакасем вӗсем решенисене пӑхӑнсах каймаҫҫӗ, вӗсем ҫирӗп картана ҫеҫ пӑхӑнаҫҫӗ...—кӑшт тӑрӑхланӑ пекрех каласа хучӗ корреспондент.—Ну... халӗ ӗнтӗ ҫырма леш енне кайса курар. Вӑл района эсир «ҫӗнӗ хула» тесе ят панӑ мар-и ҫав?

— Ҫапла тенӗччӗ. Унта, пирӗн решени тӑрӑх, нумай хваттерлӗ ҫуртсем, «комбинат бытового обслуживания» тӑваҫҫӗ, пасар валли пысӑк павильонсем... — пӗр-пӗр ларура отчет тунӑ пекех калама тытӑнчӗ Ефим Петрович, хай халь ҫеҫ кӳреннине манса кайсах.

Вĕсем ҫырма хĕррине, пусма патне пырса тăчĕҫ. Пĕр алла метр тăршшĕх иккен вăл, анчах картлашкисем пĕтĕмпе те вунна-вуниккĕ кăна иккен.

— Мĕнле анмалла кунта?—тĕлĕнсе ыйтрĕ корреспондент.

— Ҫынсем ҫӳреҫҫĕ...—мăкăртатса илчĕ Ефим Петрович.

— Эппин, хула пуҫлăхĕ пек пулса, пример кăтартха пире,—татах сăмах тĕксе илчĕ Шутников.

Ефим Петровичăн ним каламалли те юлмарĕ... Вăл, ача чухнехи пек, кукленсе ларчĕ те вилессе-мĕнне пĕлмесĕрех яранса анса кайрĕ.

Сăрталла хăпарма аннинчен те хĕнтерех пулчĕ. Унта пусма пачах та ҫук-мĕн. Анчах хĕрсе кайнă Ефим Петрович хастарлă альпинист пекех чакаланса хăпарса кайрĕ тăвалла,—пĕрре шуҫса ӳкесчĕ хуть! Корреспондентпа Ваня Шутников аран-аран ĕлкĕрсе пычĕҫ ун хыҫĕнчен. Сăрт ҫине хăпарса ҫитсен вара председатель сывлăш ҫавăрса илчĕ те аллипе малалла мăнаҫлăн тĕллесе ăнлантарма пуҫларĕ:

— Ҫаксем акă,—терĕ вăл, юр айĕнчен курăнакан метр ҫӳлĕш стенасем ҫине кăтартса,—нумай хваттерлĕ ҫуртсем пулаҫҫĕ. Куратăр-и? Икĕ ҫурт никĕсне хывнă, кашнинче тăватшар хваттер пулать. Эпир вĕсене хĕле кĕриччен туса ҫитерме решени йышăннăччĕ, анчах иртнĕ ҫулта пире плановăй хăйăр памарĕҫ те, тăваймарăмăр. Ҫăҫал хăйăр параҫҫĕ пулĕ, тетпĕр-ха... Ак кусем

акă—пасар павильонĕсем пирĕн. Куратăр—юписене лартнă ĕнтĕ, стенисене туса çийĕсене витесси çеç юлнă. Ку—мунча, унта пĕр харăсах çичĕ çынтан кая мар çăванма пултараççĕ, эрнере икĕ кун на полный ход ĕçлет. Анчах халĕ вăхăтлăха хупăнна пулмалла-ха, вутă çук терĕç иртнĕ шăматкун...

— Эсир хăвăр та çак мунчарах çăванатăр пуль? — ыйтрĕ корреспондент.

— Эпĕ-и? Хм...—Ефим Петрович пырне пулă шăмми ларнă пек пулчĕ.—Хам эпĕ кунта хуть те кашни кун килсе çăванма хатĕр, анчах ман арăм килĕшмест. Ытлашши тасана юратать вăл... Çăванпа та манăн килех мунча лартмалла пулчĕ... Хамшăн мар, арăмшăн, ним суймасăр калатăп, хе-хе-хе...

— Ак ку, сăра киоскĕ пекки мĕн тата?—ыйтрĕ корреспондент.

— Вăл—парикмахерски пирĕн, «Çивĕч бритва» ятлă...

— Эсир хăвăр хыранкалатăр-и унта?

— Эп хам килсех кайман... Анчах çынсем çÿреççĕ пулмалла.

— Никам та çÿремест унта,—терĕ Ваня,—мĕншĕн тесен вăл кĕркуннерепех ĕçлемест.

— Мĕншĕн ĕçлемест?—тĕлĕнчĕ Ефим Петрович.

— Санитарнăй врачсем килсе хупнă.

— Илтмен, илтмен... Пулма пултарать, конешнă, врачсем вĕсем питĕ чăкăлтăш халăх вĕт, ăçта çитнĕ

унта штраф хураççĕ. Ĕнер чайнăй заведующийĕ те жалобăпа пычĕ-ха, ним сăлтавсăрах çĕр тенкĕ шаплаттарчĕç, тет... Ну, халь ĕнтĕ малалла каяр. Ав лере пирĕн...

Ефим Петрович тата темскер кăтартасшăнччĕ, анчах пĕрле çӳрекенсем ăна тăрук пӳлсе лартрĕç:

— Çитĕ, председатель юлташ! Эсир мĕнле ĕçлени пĕтĕмпех куранать: суйлавçăсем хушнисене пĕтĕмпех манса кайнă. Очерк çырасси пулмасть, фельетон кăна пулма пултарать!

Председатель хирĕç калама тăчĕ, анчах калаймарĕ—сасартăк шарт! вăранса кайрĕ. Хай йĕп-йĕпе тар...

— Уф-ф!.. Шуйттан тĕлĕкĕ! Чисти чăн пулнă пекех вĕт... Паçăр пухура та шăпах çаксем çинчен каларĕç..





# Çичĕ хĕр

...Чăн сăмахăн суйи çук, тенĕ пек, эпĕ те Ястах мучи çинчен тĕп-тĕрĕссине каласа парам-ха сире. Пур пирĕн ялта çавăн пек старик. Вата ĕнтĕ вăл, çÿçĕ-пуçĕ тин çеç çуна кăпăш юр пекех шап-шурă, анчах миçе çултине калама пултараймастăп, мĕншĕн тесен—пĕлместĕп. Ана вăл хăй те пĕлсех çитеймест пулмалла,—ун çинчен кам та пулин хăйĕнчен ыйтсан, вăл кашнинчех шухăша кайнă пек пулать, унтан сарлака сухалне ывăçласа илет те, хăш чухне «çитмĕл çиччĕре», тепĕр чух «сакăрвун саккăрта», тесе хурать. Тахăшĕ тĕрĕс—мур пĕлет...

Анчах хăй-и? Хăй паттăр-ха, кĕлетки—тÿп-тÿрĕ, ни авăнман, ни чалăшман, куçĕсем те, хăш чух кăштах шывланаççĕ пулин те, бинокль пекех кураççĕ, васкама

тӳр килсен—стройри салтак пек таплаттарса пырать, мӗн каламалли!.. Ҳанара-мӗнре кăштах хӗрмелле пулсан—автан киккирикки пек хӗрелсе каять те (ăшчикки сывă эппин!) шав «Варяг» юррине ырлать,—яппун вăрçинче пулнă-çке, çавна манаймасть.

Вайӗ те пур-ха, апайтурух! Кӗнекесем çыракан хăшпӗр чӗлхе ăстисем пек каласан, иртнӗ кӗркунне вăл ялти çамрăксене çав тери паха тӗслӗх кăтартрӗ.... Пӗррехинче, каçалапа, пирӗн яла темле «Москвич» пынă-мӗн те, уй хапхинчен кӗнӗ-кӗменех лапра ăшне путса ларнă. Унталла, кунталла тапкаланнă, шеремет, хӗр-шофер мотора çур сехет ытла макăртнă: у-уу, у-уу.... Çынсем пуханнă, тӗрткеленӗ, турткаланă—усси пулман, машина тата тӗплӗрех кӗрсе ларнă лачакана. Çав вăхăтра шăпах çак Ястах мучи хиртен таврăннă (уй хуралçи вăл пирӗн). Машина хурлăха лекнине курать те, никама ним каламасăрах пӗр кил хушшинчен вăрăм кашта йăтса тухать, ăна йăпăр-япăр машинăн кайри кăстăрчăкӗсем хушшине чиксе ярать. Унтан шофера: «Полнăй, вперед!» тесе кăшкăрать те, пӗррех çӗклет «Москвича»... Кӗр-р! кӗрлесе тухса каять машина лачакаран. Çынсем, тӗлӗннипе, çăварӗсене лак! карса пăрахаççӗ. Пыр та калаç эс унпа çавăн хыççăн!

Пур енчен те ырламалла ӗнтӗ Ястах мучие. Ҳайӗн пурнăçне питӗ йӗркеллӗ пурăнса ирттернӗ вăл. Ашшӗнчен ун валли пӗр тайлăк пӳртпе уксах автан кăна юлнă та, «çын шутне кӗрес» тесе мӗн кăна ӗçлемен

пуль вăл хăйĕн ĕмĕрĕнче... Ача чух кĕтӳ кĕтнĕ, такам мăшкăлне те тӳснĕ, ӳсерехпе арман хуçи патĕнче тарçăра пураннӑ—пилĕкшер пăт туртакан михĕсене мечĕк пекех ывăтатчĕ, тет; унтан, çав арман хуçи хăйĕн чалăш хулпуççиллĕ, армантан тухмасăрах ача çуратнă кӳпшек хĕрне вăйпах качча пама тапратсан, пулас хуньстарикне шыва тытса пенĕ те, ялтан тухса тарса, темиçе çул бурлакра çӳренĕ. Çавăнтанах ăна яппун вăрçине янă. Чылай çулсем иртсен тин яла таврăннă та, пĕр тăлăх хĕре качча илсе, пурăнма пуçланă.

Питĕ йывăр пулнă пурăнма, ниепле те «çын шутне кĕме» май пулман. Ку çитмест те, леш çитмест. Пĕр çĕртен сыпатăн—тепĕр çĕртен татăлать. Малтанах ача-пăча пулман вĕсен, унтан вара пĕрин хыççăн тепри çурала пуçланă—кашни çул!—анчах пурте... хĕрсем пулнă. Анюк хыççăн Санюк, Марье хыççăн Тарье. Куншăн хăй ăшĕнче кӳреннех ĕнтĕ вăл,—ун чухнехи эсрелĕ саманинче хĕрсене ят çĕрĕ паман-çке-ха,—çапах та кӳреннине палăртман, арăмне те, ыттисем пек, сивĕ сăмах каламан.

Пиллĕкĕмĕш ачи те хĕр пулсан, арăмĕ ӳлесех макăрнă, теççĕ, анчах та Ястах ăна çурăмĕнчен лăпкасах лăплантарнă:

— Ан кулян, Анахвис, ан хуйхăр! Микулай патшан та пилĕк хĕр пулнă та—аптрамасть-иç! Эпир патшаран мĕнрен кая? Эпир те пурăнăпăр-ха!

— Санăн кулассиех пĕтмест çав,—аллипе сулнă ăна хирĕç арăмĕ.

— Кулсан манăн хырăм тăранать,—тенĕ Ястах.

— Тĕлĕнмелле санран, эсĕ вилме выртсан та кулсах вилсе каятăн пуль!

— Э, карчăк, калаçатăн та эсĕ! Вилесси çинчен ма шухăшлас? Пурнăç вăл ĕмĕр-ĕмĕрех çакăн пек пулмĕха, эпир те хуçасем пек пурăнса курăпăр. Илткеленĕ эпĕ ăслă çынсем калаçнисене...

Тĕрĕс калана Ястах—пурнăç улшăнна, революци пулнă. Германи вăрçинче тăватă çул хушши асап курса çӳренĕ хыççăн киле таврăнсан, ялта революци тăваканнисенчен пĕри—Ястах хăй пулнă. Комбед пуçлăхĕ пулма суйласан, мĕн тери тулли кăмăлпа кисретнĕ вăл ялти пуян-юнĕçсене! Мĕн чухлĕ укçа, тырă, выльăхчĕрлĕх тытса илнĕ вăл çамрăк республика валли! Кулаксем ăна виçĕ хутчен те тĕттĕм кĕтесрен пенĕ, анчах вĕлереймен. Çакăн хыççăн Ястах тата хытăрах, шăлне çыртса лартсах кĕрешнĕ Совет влаçĕшĕн.

— Шалиш! Кунччал ĕнтĕ сирĕн пасар, тинех асаймăр, пирĕн юна ĕçеймĕр текех!—тенĕ вăл пуян таврашĕсене.—Халĕ пирĕн вăхăт çитрĕ!..

Çул хыççăн çул иртнĕ. Халăх влаçĕ çирĕпленнĕ, анчах юхăнса кайнă пурнăç тăруках юсанса çитеймен. Граждан вăрçи, унтан выçлăх... Çапах та пирĕн Ястах пуçне нихçан та усман:

— Пурĕ-пĕр аптрамастпăр! Курăр акă...

Хăйĕн çав хушăра татах ачасем çуралнă, анчах каллех пурте... хĕрсем пулнă. Фетис хыççăн Ларис, унтан Улюк. Çавăн пирки вара хăшĕсем Ястахран куç умĕнчех тăрăхласа илнĕ:

— Эсĕ, Ястах Иванччă, килтех хĕрарăм мăнастирĕ уçма шут тумарăн пулĕ те?

— Мăнастирсем вĕсем патша чухне пулнă, хальхи вăхăтшăн юрăхлă учрежденисем мар вĕсем,—аллипе сулса, шӳтле ответ панă ун пеккисене Ястах,—эпĕ хамăн хĕрсенчен коммуна тăватăп, карчăка председателе лартатăп.

— Ху кам пулатăн вара?

— Хама мана хуралçă пулсан та çитет.

— Ай-ай, çăмăллăн пурăнасшăн-çке эсĕ!

Çапла кăмăллăн кулкаланисем час-часах пулнă, анчах та, тĕрĕссипе каласан, Ястах пурнăçĕ пĕртте çăмăл пулман. Тем тесен те—çичĕ ача вĕт-ха, пĕринчен тепри пĕчĕкрех,—сĕтел хушшине апат çиме лартсан, пасара сутма илсе тухнă чӳлмексем пекех лараççĕ, анчах çавсене пурне те кунне виçĕ хут мĕнпе те пулин тăрантармалла! Çăпати те пĕр харăсах çичĕ мăшăр кирлĕ вĕт.

Çапах та, выçă лартмарĕ Ястах Иванччă хăйĕн ачисене. Ĕçлерĕ вăл, ырми-канми ĕçлерĕ. Ачисене те ачаш ӳстермерĕ, пурне те мĕн пĕчĕкренпех ĕçе хăнăхтарса пычĕ. Анчах çав вăхăтрах вĕрентме те тăрăшрĕ, вĕсем мĕнлерех вĕреннине сăнасах, тĕрĕслесех тăчĕ. Қалă-

пар, хĕллехи сивĕ кун, каç пулсан, вăрмантан килет вăл, хăй ĕнтĕ тем пекех ывăнса çитнĕ, çапах та апат çинĕ-çименех пуринчен те ыйтать:

— Ну, уроксем мĕнле, пурин те хатĕр-и? Мотри эп сире, япăх вĕренсен, çăкăр çитерместĕп!

Хĕрĕсем, чăнах та, лайăх вĕренсе пыратчĕç, пĕр-пĕринпе тупăшса, ăмăртса! Учительсем пур чухне те мухтатчĕç вĕсене...

— Халь чиперех усратăн та-ха хĕрӳсене, качча памалли вăхăт çитсен мĕн курăн вĕсемпе?—текелетчĕç хăшĕсем Ястаха.—Çич ывăл авлантаракан пуйса кайнă, çич хĕр паракан çука юлнă, тенĕ вĕт-ха ваттисем... Мĕн чухлĕ укçа кирлĕ пулать вĕсене тупра туса пама, э? Чăнах та çап-çара тăрса юлма пулать!

— Эсир мана патша вăхăтĕнчи сăмахсене ан калăр!—тетчĕ ун пек чух Ястах Иванччă.—Эсир халĕ хамăр мĕнле саманара пурăннине астăвăр, вот што. Пире укçа кирлĕ мар, эпир хамăр—ылтăн. Тен, ылтăнран та хаклăрах-и!

Вăхăт шурĕ... Ястах хĕрĕсем ӳссе çитме пуçларĕç. Çав тери илемлĕ, патвар хĕрсем, ытармалла мар. Хăшĕ-пĕрисем куç хывма та пуçларĕç ĕнтĕ вĕсем çине. Анчах сасартăк, никам кĕтмен çĕртен, çаксем пĕрин хыççăн тепри... вĕренме тухса кайма тытăнчĕç. Малтан Анюкĕ—педтехникума, унтан Санюкĕ—хвершăл шкулне, вĕсем хыççăн Марье—ялхуçалăх шкулне, Тарйи вара тĕлĕнтерсех пăрахрĕ—летчика вĕренме тухса вĕç-

рĕ! Аслисем вĕренсе тухнă вăхăталла кĕçĕннисем те туха-туха кайрĕç. Пĕр хĕр те юлмарĕ старикĕн. Çулла кăна пӳрт тулли пухăнаççĕ, хĕлле никам та çук!

Вăхăт ытла нумай та иртмерĕ—çаксем каялла, хамăр ялах таврăнма пуçларĕç: Анюкĕ—шкулта ĕçлеме, Санюкĕ—акушер пунктне, Марйи—агроном вырăнĕнче ĕçлеме... Пур çĕрте те Ястах хĕрĕсем!

Паллах ĕнтĕ, Ястахĕ куншăн питĕ савăннă, тен, хăй ăшĕнче мăнкăмăлланнă та пулĕ, анчах ăна вăл никама та систерместчĕ, ма тесессĕн, вăл нихçан та мухтанчăк çын пулман. Пĕррехинче кăна, кӳршĕ ялĕнче хăнара пулнă чух, кĕрекере хăйĕнпе юнашар ларнă икĕ старике ыталаса илсе:

— Совет влаçĕ мĕн иккенне ăнланатăр-и эсир? Манăн хĕрсем çине пăхăр та—ăнланатăр вара!—тесе каларĕ, тет. «Манăн ачасене Совет влаçĕ анлă çул çине кăларчĕ», тесе каласшăн пулнă ĕнтĕ вăл, кăмăлĕ çав тери тулса çитнипе.

Анчах леш старикĕсем те парăнман иккен.

— Ан мухтан, Ястах Иванччă, манăн та икĕ хĕр институтра вĕренеççĕ!—тенĕ пĕри.

— Эс те ан мухтан,—пӳлнĕ ăна тепри.—Манăн виçĕ ывăл, виççĕшĕ те офицер! Пĕри çĕр çинче çӳрет, тепри тинĕс çинче ишет, виççĕмĕшĕ—сывлăшра вĕçет. Вот мĕнле!

— Апла пулсан, сирĕн текех ĕçлеме те кирлĕ мар, пенси çине куçмалла та пĕр ачи патĕнчен тепри патне

хӑнана çӳремелле çеç!—стариксен хаваслӑ калаçӑвне пырса хутшӑннӑ кил хуçин çамрӑк кинӗ.

Ватӑсем, тӑрук шӑпах пулса, ун çине чӑр-р... пӑхнӑ, унтан куçӗсене мӑч-мӑч-мӑч тутарса илнӗ. Кӗç пӗрин хыççăн тепри ура çине сиксе тӑнӑ.

— Мӗн терӗн эсӗ? Пенси?! Мӗнле пенси?

— Эс пире кам вырӑнне хуратӑн вара? Эс пире: эсир ватӑ, сирӗн часах масар çине каймалла, тесшӗн мар-и тата? Эп кӑçал миçе ӗçкунӗ тунине пӗлетӗн-и?

— Ӗçре те, ташӑра та хамӑрӑн ывӑл-хӗрсенчен юлмастпӑр-ха эпир покалӗ! Эй, Ванькка, тӑсса яр-ха купӑсна!

Çавӑнтах купӑс сасси янӑраса кайнӑ. Виçӗ старик—виçӗ телейлӗ ашшӗ—урай варрине тухнӑ та, ура хуçса, авкаланса, такмакласа ташлама тытӑннӑ:

> Эй, ну, яра пар,
> Пирӗн мӗншӗн пурнас мар!..

Урайӗ кӑна мар, пӳрт маччи те кисреннӗ вӗсем кӑрст! кӑрст! сикнипе. Ытти хӑнисен алӑ çупасси çеç юлнӑ...





# Самосвал

Калама та çук ĕнтĕ—техника тени этем ывăль-хĕрĕшĕн питĕ лайăх, шутсăр усăллă япала. Ака, сăмахран, автотранспортах илер. Мĕнешкел ырлăх вăл çыншăн! Пĕр вунпилĕк çул каялла эпир хамăр патран Шупашкара икĕ талăк ытла каяттăмăрччĕ—лăпăс-лăпăс, лăстăр-лăстăр... Халĕ пур—автобус çине ларатăн та, ик-виçĕ сехет хушши пружиналлă сак çинче çемçен кăна сиккелесе пынă хыççăн, Шупашкара çитсе Хĕрлĕ площадьре анатăн. Автобус çине лекеймесен—грузовикпа кайма та начарах мар. Такси тĕл пулсан пушшех те ырлăх вара.

Анчах... ырлăхне ырлăх та, ытла пур чухне те мар çав. Тепĕр чух тем те курса пĕтететĕн. Хам çинченех каласа парам-ха сире.

Иртнĕ хĕлле, кĕтмен-туман çĕртен, хамăр колхоз почтальонĕ, каçăр сăмсаллă Петюк, мана телеграмма илсе пырса пачĕ. Тĕлĕнсех кайрăм: камран пулма пултарать ку? Часрах уçрăм та—вулатăп:

«Çатракасси... Степан Степанович Степанова... Аслă ывăла авлантаратăп... Вунçиччĕмĕшĕнче туй... Чунтан кĕтетĕп... Тусу Панкрат».

Панкрат! Хамăн фронтри тус, пĕрле нумай хурашур курнă, пĕррехинче мана вилĕмрен хăтарнă шанчăклă юлташ туя чĕнет иккен мана.

— Каятăп!—терĕм те хам ăшра, телеграммăна тата тепĕр хут вуласа тухрăм.

— Вунçиччĕмĕшĕнче туй...— Çавăнтах, тухса кайма ĕлкĕреймен почтальонран:—Паян мĕнле числа-ха çав?—тесе ыйтрăм.

— Вунçиччĕмĕш,—терĕ вăл, пĕр тытăнса тăмасăрах.

— Çук пуль!—ĕненес килмерĕ манăн.—Мĕнле-ха апла? Чим-ха, телеграммине хăш числара панă? Вуниккĕмшĕнче! Эппин, вăл 100 километра 5 кун килнĕ? Кунне çирĕмшер километр... Вăл хушăра çурран икĕ хут кайса килме пулать вĕт унта!

Петюк çине çиленсех кăшкăрса пăрахрăм:

— Аçта выртнă вăл çак таранччен? Эп сире, мурсене, куншăн...

— Эп айăплă мар, Çтаппан пичче, районти почтăра выртнă вăл,—терĕ Петюк ним хăрамасăр,—унта час-

часах манса каяççĕ телеграммăсене парса яма. Вĕсене кайса вăрç эсĕ...

Мĕн тăвас-ши ĕнтĕ? Қаяс пулсан—çитейĕп-ши, çук-ши? Хамăн ĕнтĕ, тĕрĕссипех калатăп, çав тери каяссăм килет... Вăрçăран пĕрле таврăннăранпа та курман эпир пĕрне-пĕри, сайра хутра çырусем çўреткеленĕ çеç. Юлашки çырăвĕнче вăл: кăçал ывăла авлантаратăп, сана туя чĕнетĕп, пымасан—юлташ мар вара эсĕ, курсан та калаçмастăп, тесе çырнăччĕ. Ана хирĕç эпĕ: сис-тер кăна, кайăк пекех вĕçсе çитетĕп, тесе ответ патăм. Çук, каясах пулать!

Қĕçех манăн арăм фермăран апат çиме таврăнчĕ, вăталăх ывăл шкултан килчĕ. Эпĕ вĕсене Панкрат телеграммине вуласа патăм та:

— Мĕнле шухăшлатăр эсир?—тесе ыйтрăм.

— Мĕн шутласа тăмалли пур, паллах, каймалла ун пек çын патне,—терĕ арăм.

— Ĕлкĕрĕп-ши? Инçе вĕт-ха, Шупашкар урлă кай-малла... Унтан тата Қанаш çулĕ тăрăх тепĕр сакăр километр.

— Машинăсем çўреççĕ-иç! Çулĕ те такăр халь...

Ман ывăл ача йăпăр-япăр сумкинчен хутпа кăранташ туртса кăларчĕ.

— Чиччас, шутласа кăларатпăр,—терĕ вăл.—Халĕ кăнтăрла иртни пĕр сехет. Тепĕр сехетрен эсĕ хатĕрленсе тухса кайма пултаратăн. Шоссе çине тухма—çур сехет... Ну, тепĕр çур сехет кĕтсе тăмалла пултăр унта.

Таваттăра машина çине ларатăн, улттăра Шупашкарта пулатăн. Унта Канашалла каякан машинăсем пулаççех ĕнтĕ, пĕр ларсан 20 минутранах кирлĕ çĕре çитетĕн. Кĕскен каласан, атте, эсĕ 7 сехетре тусу патне çитсе сĕтел хушшине ларатăн!

Савăнтарсах ячĕ мана ку арифметика...

— Каятăп эппин!

— Хам та кай тетĕп-иç ара, мĕн шухăшласа тăмалли пур,—каллех килĕшсе каларĕ арăм.

Эпĕ ăна çĕнĕ костюма арчаран кăларса хатĕрлеме хушрăм та хам ялпо магазинне васкарăм. Ăслă-тăнлă çынсем туя парнесĕр каймаççĕ вĕт, мана та пушă алăпа пырса кĕме аван мар пулать, терĕм.

Магазина кĕтĕм те парнелĕх юрăхлă япала шырама тытăнтăм. Нимех те курăнмарĕ çӳлĕксем çинче: хăмăтсем, йĕнерчĕксем выртаççĕ. пăта ещĕкĕ пур, тутăхса кайнă лампăсем... Çук, кусем ман валли мар... Халь çеç пĕрлешекен мăшăра хăмăт кайса параймастăн ĕнтĕ! 10—15 тенкĕ тăракан «ходики» сехет илсе кайма та аван мар, тен, вĕсен иккĕшин те аллисем çинче «победăсем» е «звездасем» шаккаççĕ?

Сасартăк мачча çумĕнчи çӳлĕк çинче, тусанпа витĕннĕ ăпăр-тапăрсем хыçĕнче, темле илемлĕ япала курăнса кайрĕ.

— Мĕн çав санăн?—ыйтрăм продавецран.

— Посуда. Сервиз, теççĕ-и çав... Чей ĕçмелли хатĕр-хĕтĕр. Стаканĕсем те пур унта, сĕт ямалли те, са-

хӑр хумалли те, тем те. Пилӗк ҫул выртать ӗнтӗ вӑл хлам. Те списать тумалла пулать кӑҫал...

— Кӳр-ха ӑна кунта!

Продавец ман ҫине тӗлӗнерех пӑхса илчӗ те ыйтнӑ япалана умма антарса лартрӗ. Нимӗнле хлам та мар, питӗ лайӑх, хитре, чӑн-чӑн хрустальрен тунӑ сервиз иккен. Пӳрне хулӑнӑш тусанпа хупланни кӑна сӑнсӑрлатса лартнӑ ӑна.

— Мӗн хак?

— 300.

— Тавай, халех шӑлса тасат та—чӗркесе пар.

— Эсӗ мӗн... ытла пит пуйса кайрӑн-им?—каллех тӗлӗнсе пӑхрӗ ман ҫине продавец.

— Ҫаласса ан тӑр эсӗ, ман васкамалла!

...Килте ҫак хаклӑ япалана тирпейлӗн чӗркесе чӑматана чикрӗм, лайӑх кӑна тумлантӑм та васкасах мӑн ҫул еннелле утрӑм. Тепӗр ҫур сехетрен шоссе ҫине тухса та тӑтӑм. Нумай та кӗтмелле пулмарӗ манӑн — Етӗрне енчен пӗр грузовик ыткӑнса килни курӑнчӗ. Ӑнчӗ ман пурнӑҫ! Шоферӗ ларттӑр кӑна... Вара каҫчен Шупашкара ҫитетӗп те—малалла!

Машина хам пата пӗр ҫӗр метр ҫитиччен алла ҫӗклесе «сасӑлама» тытӑнтӑм. Тавай, лартса кай, тетӗп ӗнтӗ. Ыйтни, чӑнах та, харама каймарӗ, грузовик чарӑнчӗ.

— Аҫта ҫити?—кӑшкӑрчӗ шофер, пуҫне самантлӑха кабининчен кӑларса.

— Шупашкара...

— 25 тенкӗ!

— Ку тӗлтен 10 тенкӗ кӑна илекенччӗ-ҫке?—терӗм эпӗ ӑна хирӗҫ.

— Ну, как хош. Пирӗн санпа тавлашма вӑхӑт ҫук. Пирӗн—васкавлӑ рейс!—Шофер кабина алӑкне шарт! хупрӗ те газ хушрӗ. Каять мана пӑрахса!

— Юрӗ эппин, юрӗ!—кӑшкӑртӑм эпӗ, хӑраса кайса.—Ме, тыт!

Машина хуҫи укҫана ман ҫине пӑхмасӑрах кӗсйине пӗтӗрсе чикрӗ. Эпӗ йӑпӑр-япӑр кузова хӑпарса темле михӗсем ҫине лартӑм. Машина ҫавӑнтах тапранса кайрӗ. Лайӑх кайрӗ, тес пулать, пӗр сехетре 50—60 километр хӑвӑртлӑхӗпе ячӗ ӑна шофер,— хӑлхасенче ҫил шӑхӑрса кӑна пырать. Анчах темшӗн вӑл мана питех тӳрӗ пыман пек туйӑнчӗ... Пӗрре пӗр еннелле, тепре тепӗр еннелле пӑркаланать пек. Халь ҫеҫ савӑннӑскер, шикленме пуҫларӑм: ҫак «васкавлӑ рейса» тухас умӗн ку шофер хӑйне ытлашширех «заправить» туман-ши, хӑямат? Аллисем баранкӑна ытла ҫирӗпех тытмаҫҫӗ пулас...

Чӑнах-мӗн! Асламас сӑрчӗ ҫине хӑпарсан пӗр-икӗ километр те кайрӗ, те каймарӗ ҫак—малти кустӑрмисем аплалла-каплалла пӑрӑнкаларӗҫ те, машина ҫул хӗрринчи канава кӑппӑшт! кӗрсе ларчӗ. Чун юлмарӗ вӗт! Ара, туя лекес вырӑнне чиперех асаттесемпе юнашар кайса выртатӑп-иҫ!

Шофер машинӑна каялла чакарса кӑларма пикенчӗ, анчах кайри кустӑрмисем пӗр вырӑнтах ҫаврӑнаҫҫӗ, малтисем канаври юр ӑшне шалтан шала путаҫҫӗ... Пачланчӗ пирӗн «васкавлӑ рейс»! Пахса лартӑм-лартӑм та, кунта тем чухлӗ кӗтсен те усси пулас ҫуккине курa, чӑматанӗ-мӗнӗпех ҫӗре сиксе антӑм.

— Машинӑсем татах пулаҫҫӗ пулӗ-ха, ларкаласа кайӑп...—лӑплантартӑм хама хам. Шофер та кабинӑран тухрӗ, ун хыҫҫӑн лайӑх кӑна пальто, шурӑ бурки тӑхӑннӑ мечӗк пек ҫаврака ҫын шуса анчӗ. Пӑхатӑп— иккӗшӗ те пиҫсе ҫитнӗ. Пуринчен ытла—ҫавраки, ура ҫинче те тӑраймасть, ансанах канава кӗрсе выртрӗ.

— Юлташ,—терӗм эпӗ шофера йӑвашшӑн,—манӑн урӑх машинӑпа кайма тивет. Укҫана тавӑрса парӑр эсир...

— Мӗнле укҫана?! Хӑҫан панӑ эс мана?—тӑруках кӑшкӑрса пӑрахрӗ вӑл мана.

— Епле-ха апла... Ҫур сехет каялла 25 тенкӗ патӑм-ҫке?

— Кай ҫӑва патне!—канавран рак пек каялла чакса тухнӑ май кӑшкӑрчӗ ҫавраки те.

— Чимӗр-ха, шӳт ан тӑвӑр эсир...

— Мӗн шӳчӗ тата сана?—каллех ҫухӑрса ячӗ мечӗк пекки.—Парӑпӑр сана шӳт! Куран—машина кӗрсе ларчӗ! Укҫа-а...

— Ҫынран ун пек мӑшкӑллама саккун ҫук, юлташсем. Эсир мана кирлӗ ҫӗре илсе ҫитереймерӗр—илнӗ

укçана каялла таварса парас пулать, мана вăл урăх шофера тӳлеме кирлĕ,—çирĕпреххĕн каласа хутăм эпĕ, пĕтĕм чун-чĕрепе тарăхма пуçласа. Анчах та, çапла каланипе машина хуçисене ӳкĕте кĕртес выранне, уртарса ятăм кăна эпĕ.

— Мĕнле саккун?—мана кăкăртан ярса тытмах пикенчĕ çавраки.—Эп хам саккун кунта! Қампа калаçнине пĕлетĕн-и эс, тăм çамка? Старши контролер тăрать сан умăнта, каккуй-нипуть сан йышши йĕпе сăмса мар! Хочу—лартатăп, хочу—уй варринче персе хăваратăп, понял? Қала акă тепĕр сăмах—халех катлет тăватăп санран!

Эпĕ çак ӳсĕрсемпе тек калаçас темерĕм, вĕсенчен пăрăнса машина номерĕ çине пăхрăм, анчах та вăл вуçех те палăрмасть иккен, ахăртнех юри шăлса лартнă пулмалла...

Хĕл кунĕ—кĕске, часах тĕттĕмленме те пуçларĕ. Қăшт тăрсан, эпир халь çеç килнĕ енчен автомобиль фарисем çутăлни курăнчĕ.

— Тен, çакăнпа ларса каятăп-и-ха...—ассăн сывласа илтĕм эпĕ, хама лăплантарма тăрăшса.

Ку—çăмăл машина пулчĕ. Такси мар, темле учреждени машини пулмалла. Пирĕнпе танлашсан, вăл хăех чарăнса тăчĕ те, шофер кабина алăкне уçса ыйтрĕ:

— Лекрĕр-им?

— Аисăртран пулчĕ, кайри кустăрмасене ыватса пăрахрĕ,—терĕ машинăна канава чăмтараканни ун

патнелле тайкаланса пырса.—Халь çын пулăшмасăр никак та тухаяс çук. Курмарăн-и, хыçалта грузовиксем килмеççĕ-и унта?

— Курăнмарĕ, савнă тусăм... Пĕлме çук, тен, санăн ирчченех «загорать» тумалла пулать кунта. Ничево, запас пĕр çур литр пулсан аптрамастăн,—кулса илчĕ «легковик».

Эпĕ ун патне пырса хама лартса кайма ыйтрăм. Тĕлĕнмелле! Халь çеç кулкаласа калаçнă çын сасартăк... чул пек пулса тăчĕ! Ман еннелле пăхма та кăмăл тумарĕ вăл, стартерне пăрнă май:

— 20 тенкĕ,—терĕ кăна.

Нимĕн те шарламарăм, часрах укçа кăларса тыттартăм та машина ăшне кĕрсе лартăм. Шоферпа юнашар тата тепĕр çын пур иккен. Кăшт кайсан, эпĕ леш грузовик хуçисем хамран мĕнле мăшкăллани çинчен каласа пама тытăнтăм, анчах вĕсем ман сăмахсене илтмен пек пулчĕç—шăпăрт, нимĕн те чĕнмерĕç. Ку вара: сан пек ухмахсене çапла кирлĕ те ĕнтĕ! тенĕ пекех пулса тухрĕ. Пулаççĕ вĕт чунсăр çынсем, мĕн тăвас тетĕн вĕсене?

«Победа» питĕ лайăх пычĕ. Нискассинчен иртрĕмĕр, çырма урлă каçрăмăр, Юнкă патнелле çывхара пуçларăмăр. Эпĕ ĕнтĕ пăртак лăплантăм. Панкрат тусăм хама мĕнле кĕтсе илесси, хамăн хаклă парнене çамрăк мăшăра епле мăнкăмăллăн тыттарасси çинчен шухăшлама тытăнтăм... Шоферпа унăн юлташĕ хăйсем

хушшинче тем çинчен мăкăр-мăкăр калаçса пычĕç. Эпĕ пăт-пат уйрăм сăмахсене çеç илтрĕм.

— Килте çук пулсан?—тет пĕри.

— Кам, Нинук-и?—тет тепри.

— Вăл та, Маруçĕ те.

— Э-э, ăçтах кайччăр вара вĕсем? Яланах килте!

— Лавкка пур-и-ха унта?

— Тупăççĕ!

Çак калаçу мĕне пĕлтернине эпĕ кайран тин тавçăрса илтĕм. Юнкă тĕлне çитсен шофер «Победăна» чарчĕ те, унăн юлташĕ яла чупса кĕрсе кайрĕ. Чылай вăхăт пулчĕ вăл унта... Эпĕ каллех пăшăрханма пуçларăм...

— Ма тăратпăр вара эпир?—тесе ыйтрăм хуллен (хытă калаçма хăратăп ĕнтĕ халь).

— Бензин пĕтет, паллана шофертан кивçен илес, тетпĕр.

Эпĕ, ухмах пуçăмпа, ĕнентĕм çавна... Пĕр çур сехет таранах иртрĕ пулмалла. Чĕрем каллех кăрт-кăрт-кăрт тапма пуçларĕ. Мĕн пулать-ха капла? Бензин пулмасан, çĕр выртаççĕ-ши вара кусем? Анчах манăн мĕн тăвас? Каллех тепĕр машина кĕтмелле-и?..

Юлашкинчен, яла кайни таврăнчĕ.

— Ну, мĕнле унта?—ыйтрĕ шофер.

— Çавăр лашуна,—терĕ лешĕ.

Шофер вара ман еннелле пăхрĕ те:

— Анса юл, гражданин. Бензин çук, эпир çак ялта çĕр выртатпăр,— терĕ сиввĕн.

Манăн пĕтĕм çан-çурăм пĕçерсе кайрĕ. Тӳрех хайхи Нинукпа Маруç ячĕсем аса килчĕç.

— Улталатăр эсир, бензин пур сирĕн! Юри каймастăр!—терĕм хыттăн.

— Вăл пирĕн хамăрăн ĕç!—татса хучĕ шофер.

— Тĕттĕм пулчĕ ĕнтĕ, манăн халь ăçта каяс-ха?

— Уй варринче мар вĕт, ял çумĕнче, пĕр-пĕр хусах арăм хваттере яма пултарать,—тăкăскă сасăпа кулса илчĕ тепри, ман çине темле мăшкăлламалла пăхса. Ку вара мана тӳсме çук тарăхтарса ячĕ.

— Намăссăр çынсем эсир! Епле хăятăр мана çавăн пек калама? Эпĕ—арлă-арăмлă, ачаллă-пăчаллă çын! Эсир хăвăр çавăншăн юлатăр пулас кунта!

— Ку та пирĕн хамăрăн ĕç!—терĕ шофер.—Тух халех машинăран, атту халех хамăр сĕтĕрсе кăларатпăр. Укçуна илме пултаратăн, ме!—Шофер мана 5 тенкĕ ывăтса пачĕ.

— Ма кун чухлĕ анчах?—татах хĕрсе кайрăм эпĕ.— Мĕншĕн жуликланатăр? Эп сире 20 тенкĕ патăм!

— Кунта çитиччен ахалех илсе килмеллеччĕ-и сана? Тух теççĕ машинăран!

Йытта хăвалана пекех хăваламa тытăнчĕç мана! Тем те пĕр калаççĕ. Мĕн тăвас тетĕн эсĕ хулигансемпе? Ятлаçса та усси çук. Чăматана йатрăм та çул çине тух-

са тăтăм. Лешсем вара вăшт кăна ялалла пăрăнса кĕрсе куçран çухалчĕç.

Çав вăхăтра манăн мĕн тери çилĕ килнине каласа пама та пĕлместĕп. Тарăхман вырăн та юлмарĕ çаз. Пĕтĕм сывлăш пӳлĕнсе ларчĕ, ал-ура чĕтреме тапратрĕ... Хăçанччен тăмалла пулать-ши манăн кунта? Пĕр сехет, иккĕ, виççĕ, е—ирчченех? Шăнса та хытăн унччен!

Çул варринчех чăматан çине лартăм та чĕлĕм чĕртсе ятăм. Миçе сехет-ши халь? Ултта, çиччĕ? Хальтерех машина пулсан—туя çитме те пултараттăм та... Ах, ку шоферсене! Ну, хам пулсан тыткалăттăм! Ытла та иртĕнсе кайнă вĕт хăшĕсем, мĕн шутлаççĕ—çавна тăваççĕ! Контролерĕсем те вĕсемпе пĕрлех ашкăнаççĕ-мĕн...

Вăхăт тем чухлĕ иртрĕ—ăна пĕлместĕп, çапах та—ман телее—çул çинче каллех машина курăнчĕ. Питĕ хăвăрт çывхарса пычĕ вăл.

— Ну, мĕн пулать, мĕн килет, тепре ларса пăхам!

Эпĕ ал тăратсанах ку машини те тăпах чарăнчĕ те, кабинăран шофер пуçĕ курăнчĕ.

— Шупашкара...—теме ĕлкĕртĕм çеç, вăл мана пӳлчĕ те тӳрех:

— Çур литр! Укçине—алла!—терĕ.

Хайхискер, эпĕ паян шоферсене укçа тӳлеме хăнăхса çитнĕ те, пĕр сăмахсăрах 25 тенкĕ кăларса тыттартăм. Укçи—харама, çитес çĕре çитесчĕ мĕнле те пулин!

— Лар часрах!—команда пачĕ вара шофер.

Хăпарса лартăм. Самосвал иккен, кузовĕ—тимĕр, пăртан та сивĕ. Пĕр ывăç та пулин улăм пуласчĕ хуть! Çап-çара. Анчах ун çинчен шухăшлани те усăсăр халь... Тепĕр тесен—аптрасах каймăп-ха, çиткелĕп, тетĕп.

Машина вĕçет кăна. Çĕр çĕмĕрсе, музыкăпа пыратпăр,—тимĕр кузов хăлхана хупласа лартмалла кĕмсĕртетет, кайри кустăрмана яваласа илнĕ сăнчăр вĕçĕ мăлатукпа сунтал çине çапнă пек чанклаттарса пырать: чанк! чанк! чанк!—минутра çĕр хут!

Қалайкассинчен иртрĕмĕр, çырма урлă каçрăмăр, вăрман витĕр тухрăмăр: кĕмсĕртĕк, кĕмсĕртĕк, чанк! чанк! чанк! Аякран пăхсан, уйăх çутинче пирĕн машина ĕрĕхсе кайнă арçури пекех туйăнмалла çав: икĕ куçĕ вутпа çунаççĕ, хыçалтан шурă тусан йăсăрланса пырать.

Малта çутăсем курăнса кайрĕç. Хыркасси! Шупашкара кунтан пурĕ те 15 километр кăна. Панкрат патне çитетĕп паян! Укçи—харама, Шупашкарта такси тытатăп та...

Хыркасси тĕлĕнче, çул хĕрринче, пĕччен пĕр çурт ларать, ăна пурте пĕлеççĕ. Лайăх çурт, тес пулать, ма тесессĕн шăннă хыççăн унта апат çиме те, чей ĕçме те, е мĕнпе те пулин урăххипе те ăшăнма пулать. Сайра машина чарăнса тăмасть ун умĕнче. Çак çурт патне çитсен, пирĕн самосвалăн кустăрмисем те çаврăнма

пăрахрĕç, мотор сасси те путланчĕ. Шоферпа тепĕр çын тӳрех кабинăран сиксе тухса çавăнталла чупрĕç.

— Ку юрать-ха, хамăн та ăшăнас пăртак,—терĕм. Хăвăрах чухламалла ĕнтĕ, хĕллехи кас уçă машина çинче ларса пырсан, шăлсем самаях шаккакан пулаççĕ!

Кĕтĕм, чей илтĕм, кăштах хĕрлине сыпрăм. Пит аван пулчĕ, çан-çурăм ăшăнсах кайрĕ. Ĕнтĕ, кайма та юрать. Анчах шоферсем васкамаççĕ темшĕн. Куртăм, перер стакан ĕçрĕç вĕсем, кăштах çырткаларĕç. Халь пируссем мăкăрлантараççĕ, темĕн калаçаççĕ. Эпĕ те пирус туртса ятăм. Стена çинчи шăнасем вараласа пĕтернĕ «ходики» йĕпписем саккăрмĕш сехет çине куçнă. Вăхăт чылай!

Шоферсем васкаманнине кура, эпĕ вĕсем ларакан сĕтел патне пырса, мĕн май килнĕ таран йăвашшăн:

— Мĕнле, юлташсем, час хусканатпăр-и?—терĕм.

— Каятпăр, каятпăр,—терĕ пĕри.—Пельмен пĕçереççĕ-ха пире валли, хатĕррисем пĕтнĕ те, çĕнĕрен тăваççĕ.

— Ара, вăл час пулмасть вĕт?

— Ничево, пире нумай кĕттермеççĕ!

Ним тума та çук, хамăн малтанхи вырăна кайса лартăм. Пăхатăп—буфетчица ман «хуçасем» умне татах сыпмалли пырса лартрĕ. Хăй те ларчĕ вĕсемпе пĕрле. Тем калаçаççĕ, ахăлтаткаласа илеççĕ. Чун татах вĕчĕхме пуçларĕ: кусем паян кайма шутламаççĕ пулас!

Каллĕ-маллĕ уткалатăп, чĕлĕм туртатăп...

Вăхăт шăвать, сехет йĕппи тăххăр çине кусрĕ. Хăçан пиçет кусен пельменĕ? Аха, тинех илсе пырса пачĕç... Çиме тытăнчĕç. Буфетчица татах икĕ стакан илсе пычĕ. Шавлăн калаçма пуçларĕç... Çук, ĕç тухмасть манăн кусемпе?

— Итлĕр-ха, юлташсем, каясчĕ... Эпĕ шутсăр васкатăп, манăн вăхăтра çитмелле...

Шофер юлташĕ ман çине вăкăр пек пăхрĕ. Куçĕсем хĕп-хĕрлĕ.

— Акă мĕн, гражданин,—терĕ вăл шăл витĕр.— Васкакансене эпир чарса тăмастпăр. Анчах пирĕнпе пĕрлех пырас тетĕн пулсан—ан чăрмантар пире ĕçмеçиме, аппетита ан пăс! Эпир хамăранне хамăр пĕлетпĕр!

— Эпĕ те хамăнне хам пĕлетĕп çав,—терĕм ăна хирĕç.—Калатăп-çке, манăн питĕ шутсăр васкамалла!

— Апла пулсан—тух та ут! Саншăн эпир тарçăсем мар кунта. Эс илсе каймастăн вĕт пире, эпир сана хĕрхенсе илсе каятпăр.

— А эпĕ укçа тўленĕ уншăн...

— Вăл ниме те пĕлтермест.

— Епле пĕлтермест? Вăрланă укçа мар вĕт манăн, ĕçлесе илнĕ укçа.

— Эпир вăрлатпăр, тесшĕн-и эс?—хăйĕн юлташĕ пекех хаяррăн пăхрĕ ман çине шофер.

— Ун пек каламастăп эпĕ, анчах хама Шупашкара часрах илсе çитерме ыйтатăп!

Шофер çиленсех кайрĕ хайхискер:

— Ак ĕнтĕ, эпĕ çисе тăранмасăрах тухса вĕçтеретĕп саншăн! Епле çивĕч эсĕ, ха! Қаяссу килет пулсан— кĕтĕн! Все!

Қаллех хам вырăна кайса лартăм. Вĕсем, малтанхи пекех, васкамарĕç. Вунă минут, çирĕм, хĕрĕх... Сехет йĕпписем тăххăртан та иртсе кайрĕç. Пĕтрĕ пуç!

Тата тепĕр çур сехетрен тин тăранса çитрĕç хайхискерсем. Тăн тухатчĕ вĕт кĕте-кĕте!

— Ну, халь кайма та юрать,—терĕ шофер юлташĕ çыхланма пуçланă чĕлхепе, буфетчицăна ал парса. — Тепре куриччен, Марфуша!

— Час-часрах кĕрсе тухăр,—терĕ лешĕ, куçĕсене вылятса.

Машина патне çитеспе шофер мана:

— Ну, васкан çын, халь ĕнтĕ çирĕпрех ларса пыр, атту темрен тем пулĕ,—тесе асăрхаттарчĕ.—Самолет пекех илсе каятăп!

Эпĕ ăна хирĕç ним каламасăрах кузов çине хăпарса лартăм. Кĕçех машина тапранса кайрĕ. Каллех, паçăрхи пекех: кĕмсĕртĕк, кĕмсĕртĕк, чанк! чанк! чанк! Пĕр минутранах Хыркасси куранми пулчĕ, вăрмана кĕрсе кайрăмăр. Ну, пыратпăр çав, ну, вĕçетпĕр! Унтан сасартăк тем хăямачĕ пулчĕ... Тĕрĕссипе каласан, нимĕн те ăнланса юлаймарăм. Çил хăвăртлăхĕпе ыткăнса

пына самосвал тăп чарăнса тăчĕ те, çав самантрах мана хыçран такам тĕксе çĕкленĕ пек туйăнчĕ... Чăнах та, таçта çÿлелле хăпарса кайрăм, унтан вара вăшт кăна аялалла шуса антăм та хытă çул çине нач! турăм. Унччен те пулмарĕ—ман пуç çине темле йывăр япала ÿкрĕ. Ку вăл хамăн чăматан пулнă иккен. Эп тăна кĕрсе сиксе тăриччен машина вырăнтан хускалса та кайнă, унăн хыçалти хĕрлĕ çутине çеç курса юлма ĕлкĕртĕм...

Мĕн тăвасси пур? Чăматана çĕклерĕм те утрăм вара...

— Хăйсемпе тавлашнăшăн вăркăнтарса хăварчĕç ĕнтĕ кусем мана, ахальтен мар шоферĕ «темрен тем пулĕ» терĕ...

Шупашкара çурçĕр иртсен ик сехетре тин лăпсăртатса çитрĕм. Пĕр вăй та юлмарĕ, хырăм выçса тăталса ÿкет... Автостанцине пытăм—пуш-пушах, пĕр машина тĕсĕ те çук. Çиччĕре тин пулаççĕ, терĕ сторож. Ла-артăм вара сĕнксе! Хама та вăрçатăп, мĕн мурĕ тума тухрăм пулĕ килтен, тетĕп, хама асаплантарса пĕтернĕ шоферсене те ылханатăп. Анчах мĕн усси пултăр унтан?

Тарăхни-мĕнĕпе, ирхине тÿрех киле таврăнас шут пырса кĕчĕ пуçа, анчах кайран урăхла шухăшларăм, кунта çитнĕскер, тусăм патне кайса курасах, терĕм. Ирхине вара Кÿкеçелле каякан автобуса та кĕтсе

тăмарăм, чи малтан пырса тăнă таксие тытрăм та, Панкратсен ялне вĕçтертĕм...

Эп пынăшăн Панкрат мĕн тери хĕпĕртенине, мана епле лайăх йышăннине каламастăп та ĕнтĕ. Çав тери ыра кăмăлпа, чи хаклă тăвана йышăннă пек кĕтсе илчĕç, часрах кĕрекене кĕртсе лартрĕç, хăналама тытăнчĕç... Кăшт ăшăнсан, нервăсем пĕртаккăх лăплансан вара хамăн парне çинчен аса илтĕм.

— Кӳр-ха, Панкрат тусăм, манăн чăматана, унта ман çамрăксем валли темскер пурччĕ пулмалла, — терĕм.

Чăматана вăл сĕтел çинех пырса хучĕ. Эпĕ ăна пурин умĕнчех, васкамасăр, меллĕн уçрăм та... Ой, чĕре çурăлсах каятчĕ! Хаклă та хитре сервиз вырăнне чăматанра ванчăк хрусталь купи çеç выртать иккен! Леш шуйттан самосвалĕ çинчен вăркăнса ансан çĕмĕрĕлнĕ ĕнтĕ вăл... Анчах эпĕ ăна самосвалтан татăлса юлнă хыççăн та пĕр вуникĕ километр ал вĕççĕн çĕклесе килтĕм вĕт-ха!

Панкрат та, унăн арăмĕ те, ывăлĕпе кинĕ те, вĕсен хăнисем те ман çине ухмаха ернĕ çын çине пăхнă пек пăхса тăчĕç. Ара, чăнах та ĕнтĕ, кам-ха парне вырăнне пĕр чăматан кантăк ванчăкĕ илсе пырать?..

Пĕр-ик минут хушши эпĕ тăрук чĕлхесĕр пулса ларнă çын пек тăтăм. Унтан аран-аран:

— Каçарăр, эп айăплă мар... Автотранспорт айăплă... Самосвал,—терĕм те, çул çинчи тертсем çинчен

пĕтĕмпех каласа патăм. Пурте чунтанах хĕрхенчĕç мана.

— Техника тени этем ывăл-хĕрĕшĕн питĕ аван япала та вăл, анчах лайăх та шанчăклă алла лексен кăна çав,—терĕ юлашкинчен манăн тусăм Панкрат.

...Çул çинче çакăн пек мыскара курманнисем мана: ытлашши хура сăрсемпе сăрласа кăтартнă эсĕ шоферсене, пурте ун пек мар вĕт, лайăххисем те нумай-çке, теме пултараççĕ.

Хирĕçместĕп. Тĕрĕс, лайăххисем нумай. Анчах «калымщиксем», «леваксем» те, ӳсĕр пуçпах руль тытакансем те пур-ха вĕсем хушшинче. Ытла нумаях мар пулин те—пур! Çавсем вара шутсăр тарăхтараççĕ. Çавăн пирки çыртăм та эпĕ калава. Ним суймасăр çыртăм.





# Пăшăл-пăшăл

Тен, эсир ĕненсех те каймастăр пулĕ те, анчах та пирĕн ялта çавăн пек ятлă çын чăнах та пур. Пурте — ватти те, вĕтти те—вăл çынна «Пăшăл-пăшăл» тесе чĕнеççĕ. Хамăр ялсем кăна мар, кӳршĕ ялсем те çаплах калаççĕ ăна...

Паллах ĕнтĕ, ку ята ăна тĕне кĕртнĕ чух паман, паспорт тăрăх вăл Стратон Данилч Янрайкин тесе шутланать, анчах унăн çак чăн-чăн ятне пĕлекенсем питĕ сайра.

— Мĕншĕн-ха çав Янрайкин (янракан, кĕрлекен, шавлакан çын) Пăшăл-пăшăл (шăппăн, пăшăлтатса калаçакан çын) пулса тăнă?—тесе ыйтма пултаратăр эсир.

Çак саккунлă ыйтăва хирĕç тивĕçлĕ ответ пама манăн сире кĕскен те пулин унăн пурнăçĕпе, унăн кун-çулĕн кукрашки-мукрашкисемпе паллаштарма тивет, унсăрăн ăнланмаллах пуласса шанмастăп.

Çав Стратон Данилч Янрайкин, хальхи пек каласан Пăшăл-пăшăл, ĕлĕк-авал (ытла авалах та мар ĕнтĕ, пĕр вăтăр çул каялла) пирĕн тăрăхра питĕ паллă çынччĕ. Паллă кăна та мар, хисеплĕ çынччĕ, тес пулать. Хуть ăçта тĕл пулсан та, кашниех ăна пуç тайсa саламланă, ырлăх-сывлăх суннă, май килсен ăна хăнана та чĕннĕ, хăнине пырсан вара ăна часрах малти кĕтесе, кĕрекене кĕртсе лартма васканă.

— Тавтапуç сана, Стратон Данилч, пирĕн патa килсе чыс тунăшăн... Питĕ пысăк спаççипă!

— Ĕç-ха, Стратон Данилч, çырт-ха... Ан тирке ĕнтĕ пирĕн апат-çимĕçе...

Сĕтел çинче мĕн пуррине пĕтĕмпех ун умнелле шутарнă, вăл алтăрти кăрчамăна сарлака çăварнелле янă чух та, автан тукмаккине шăмми-мĕнĕпех шатăртаттарса çинĕ чух та хăнари пĕтĕм халăх сывламасăр пăхса тăнă. Вăл хăйне хăй мĕнлерех тыткалани те, калаçни те, ĕçни-çини те çынсене питĕ тĕлĕнтернĕ. Çынна тĕл пулсан—ăна палламасть вăл, унăн пуçĕ урлă таçталла, хур аçи пек каçăрăлса пăхать, калаçма тытăнать—шартах сиктерет, ĕçет пулсан вара—четвĕрт, унтан кая йышăнмасть. Хĕрсе çитес тĕлĕшпе хăй виçине лармa пуçласан, темиçе çаврăм юрласа илет (юрри яланах пĕрре унăн—«Расскажи, расскажи, бродяга...»—вăл урăхла юрланине никам та илтмен), юлашкинчен вара, сĕтел çинче юлнă ĕçме-çимесене пĕтĕмпех çĕре шăлса тăкать те, пуçне сылтăм алли çине хурса,

тӳрех ҫыварса каять. Пӗр-икӗ минутран вӑл пӳрт чӳречисене чӗтрентермелле харлаттарма тытӑнать, ӑна виҫҫӗн-тӑваттӑн йӑтса, ҫӗмӗрӗлме пултаракан хаклӑ япалана тытнӑ пек, кутнӗк сакки ҫине кайса хураҫҫӗ...

Ирхине Стратон Данилч, хӑй каларӗш, пуҫне «ремонт» тӑвать, унтан тӑрантас ҫине лашт! кӗрсе ларать те (тӑрантас каштисем шатӑрах аванса анаҫҫӗ) хуҫине тав тумасӑрах тухса каять. Пӗкки ҫинчи икӗ шӑнкӑрав сасси ял вӗҫӗнче ҫухалсан тин кил хуҫи лач! сурать те пӳрте кӗрет. Анчах тепринче вӑл Стратон Данилча ҫав-ҫавах кӑмӑллӑн йышӑнать:

— Тавтапуҫах сана, Стратон Данилч, пире хисеп тунӑшӑн...

Чаплӑ ҫынччӗ ҫав ун чух Стратон Данилч. Волисполком председателӗ, пысӑк власть! Хӑнара хӗрсе кайсан, хӑех ҫапла калатчӗ: эп хушсан—пӗтӗм вулӑс сывлама чарӑнать, тетчӗ. Ара, пурин те, пурин пирки те уп патне пымалла-ҫке: пӳрт юсама темиҫе пӗрене тупмалла-и, вут-шанкӑ илмелле-и, налог чакарттарасси пирки калаҫмалла-и,—сахал пулать-и пурнӑҫра? Ҫам татса парать ҫак пур ӗҫсене? Стратон Данилч!.. Анчах унӑн кӑмӑлӗ ҫирӗп, ӑна ҫавӑрма пӗлес пулать. Пушӑ алӑпа каяймастӑн ун патне. Малтан киле чӗнсе хӑна тупи те питӗ усӑллӑ. Вара ӗҫ хӑвна кирлӗ пек пулса тухасса чиперех шанма пултаратӑн. Аҫта каймасть пӗр витре ханша е виҫ-тӑватӑ кӑвакал!

Тĕрĕснех калас пулать, хытă янăратчĕ ун чух Янрайкин ячĕ! Пурте калаçатчĕç ун çинчен:

— О, питĕ пултаракан çын вăл! Голова!

— Ыр тума та, хур тума та пултарать...

— Шуйттан вăл сирĕн Стратон, шалчи тулĕ-ха хăçан та пулин, кăларса çапĕç-ха,—тетчĕç тата хăшпĕрисем.

Чăнах та, сирпĕтрĕç çакна. Пĕтĕм вулăс пĕр-икĕ эрне хушши калаçрĕ ун пирки. Тĕрлĕрен калаçрĕç: пĕрисем тĕлĕнчĕç, теприсем савăнчĕç, çав хушăрах хĕрхенекенсем те пулчĕç.

— Пăх-ха, Стратона мăкăлтама пултаракан çын та пур иккен! Ĕмĕрне шутлас çук...

— Çавă кирлĕ-ха ăна, шуйттана! Текех янраймĕ ĕнтĕ!

— Çапах та—кирлĕ çынччĕ, унпа яланах ĕç кăларма пулатчĕ. Пĕрре хăна тăватăн та...

— Çавăнпа кăларса пенĕ те ăна!

Пĕр çур çул ытла илтĕнмерĕ Янрайкин сасси. Таçта кайса пăчланнă пекех пулчĕ вăл. Унтан сасартăк... каллех асăнма тапратрĕç çавна! Халăх судне секретаре кĕнĕ, терĕç.

— Ну, тыткалать халь ку!

— Пуять... Курăр ака!—уççăнах сăмахларĕç çынсем.

Эпĕ хам судлашса курман та, Стратон кунта хăйĕн пултарулăхне мĕнлерех кăтартнине пĕлместĕп, анчах

«вăрман хăлхаллă, уй куçлă»—çке-ха. Хăйма вăрлама вĕреннĕ кушак аçи хăйĕнне пăрахмастех вĕт,—Янрайкин та каллех пуринчен те кучченеçсем илме тытăннă. Ĕлĕкхи пек шавламан вăл халь, кăшкăрман, хăнана кайсан сĕтел çинчи чашăк-тирĕксене вăркăнтарман, пĕтĕмпех шăппăн, пăштăн-пăштăн туса пынă: пĕринчен ăна илнĕ, тепринчен куна, уншăн суя хутсем тума пулăшнă, ĕçсене арпаштарнă...

Темиçе çул пурăнчĕ вăл çакăнта. Арăмĕ хĕн курса вилсен тепре авланчĕ, лавккари пĕр самăр майра-продавеца илсе ячĕ. Малтанхине вăл нихçан çутă кун кăтартман, ялан хĕнет, тетчĕç, çĕнĕ арăмĕпе вара çав тери килĕштерсе пурăннă. Авланнă хыççăн вăхăт нумай та иртмерĕ—район центрĕнчех садлă кил вырăнĕ илсе петистеннăй пӳрт лартрĕ, лаша пысăкăш ĕне туянчĕ. Пӳртĕнче—диван, трюмо, çемçе пукансем, кавирсем, тетчĕç. Хырăмĕ те самаях ӳсме пуçларĕ унăн...

Кил таврашĕнче хăй мĕн те пулин тунине никам та курман вара. Такамсем пырса вуттине татса-çурса параççĕ, такамсем паранкă лартса, çумласа, кăларса, нӳхрепе кĕртсе хураççĕ, ĕнине çулла такам ачи пăхать, шывне суд технички йăтать...

Çынсем тĕлĕнетчĕç кăна:

— Ну, пултарать Стратон! Улпут пек пурăнать вĕт, шельма!

Уйăхне виççĕр-тăватçĕр тенкĕ шалу илнипе çакăн

пек «пыл та çу» пуранма çуккине пурте пĕлнĕ те-ха ĕнтĕ—мĕн таван? Тытман!

Анчах вара темле аста варласан та—хăçан та пулин лекетех, теççĕ-и-ха çав? Тĕрĕс калана çавна.

Пĕррехинче Янрайкин ячĕ каллех янраса кайрĕ район тарах:

— Арамĕпе иккĕшне те хупна,—терĕç.—Хай службăра пысак преступленисем туна, арамĕн—питĕ пысак растрата!

Часах суд пулчĕ, Стратонпа арамĕн пĕтĕм пурлăхне конфискаци турĕç, хайсене—кирлĕ çĕре, ытла çывăхах мар вырана ячĕç...

Нумай-нумай вахат иртрĕ çавантанпа. Мантамăр эпир Янрайкин çинчен. Çухалчĕ Стратон. Анчах ялап лăхах мар иккен. Темиçе çул каялла чиперех çавранса çитрĕ çака хай çуралнă çĕршыва. Ну... ытлашши чиперех темелле мар та ĕнтĕ... Пичĕсем пĕркеленнĕ, пуçĕ кукша, çаварĕнче темиçе шал кана юлна—тутахна тимĕр патасем пек куранаççĕ. Сасси те ĕлĕкхи мар, çĕтсе ларна, аран илтĕнет—най-най-най, самса витĕр. Куçĕсем хĕсĕннĕ, хĕрлĕ сухалĕ сайралса кайна, хай каларĕш—виçĕ пĕрчи тават еннелле...

Малтанах Стратон унта-кунта çӳрекелерĕ, паян — пĕр çĕрте, ыран—тепĕр çĕрте; çакар-таварлăх çынсене тĕрлĕ прошенисемпе кассацисем çырса парса тупкаларĕ куранать, ана час-часах суд коридорĕнче курма пулать, хай ялан тапак шаршлать те темле порошоксем

ĕçет, тетчĕç. Унтан, кĕтмен çĕртен, çак çын пирĕн яла пырса кĕчĕ—нумайранпа пĕр-пĕччен пурăнакан Ялампи патне. Лешĕ вăл, Ялампи тени, ялан халăхран уйрăм пирĕн: колхозра ячĕшĕн кăна ĕçлекелет, пуринчен ытларах пасарсем тăрăх йакăр-йакăр, ăна илет те куна сутать, тĕпсакайĕнче хуть те хăçан та ик-виç четвĕрт ларать унăн, ĕлĕкрех юмăç та пăхатчĕ пулас. Суд та турĕç ăна пĕрре, анчах темле çăлăнкаласа тухрĕ. Стратонпа çав Ялампи таçта паллашнă та, калаçса таталнă курăнать çав...

Ну, хайхи пĕрле пурăнма пуçларĕç çаксем. Çынсемпе хутшăнсах каймастчĕç, те пур ялта вĕсем, те çук... Анчах Стратонĕ, кăшт пурăнсан, пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн ял хушшине тухса çӳрекен пулчĕ. Пухусене пырать, правленине, ял Советне, клуба кайса ларать. Нимех те калаçмасть хăй, итлет кăна.

Аванах пурăнатпăр ĕнтĕ, ĕçлетпĕр. Колхозĕ начар мар пирĕн—хуçалăх енĕпе те, культура тĕлĕшпе те çынсенчен юлмастпăр, намăс курмастпăр. Хам эпĕ завклубчĕ ун чух. Кружоксем ĕçлеççĕ унта пирĕн, спектакльсем, вечерсем пулаççĕ. Каç-каç çамрăксем нихçан та таталмаççĕ клубран: каччисем те, хĕрĕсем те. Ваттисем те тăтăшах çӳреççĕ: çĕнĕ хаçатсем вулама, докладсем итлеме... Тĕрĕссипе каласан, пирĕн клуб районта пĕрремĕш вырăнта тăратчĕ. Хурламан пире.

Анчах пĕррехинче сасартăк районтан комисси пырса тухрĕ ман пата—виçĕ çын.

— Жалоба пур,—терӗç,—тӗрӗслеме килтӗмӗр.
— Мӗнле жалоба-ши тата?
— Эсир клубра мӗншӗн иртӗнсе пуранатӑр?
— Ним те туман-çке...
— Суятӑн,—теççӗ мана.—Ёçлес выранне ашкӑнатӑр кӑна! Кашни каç ахӑрсамана сирӗн унта, спектакльсенче ӳсӗр вылятӑр!
— Ёмӗрне пулман, юлташсем! Ролӗ ӳсӗр çынна кӑтартмаллискер пулсан çеç ӳсӗр пек пулма тӑрӑшнӑ...
— Сцена хыçӗнче хӗрсене кӳрентеретӗр, библиотекӑри кӗнекесем çурри ытла çухалса пӗтнӗ, отчетсенче кӑна лайӑх пырать сирӗн ӗç!
Тӗлӗнсех кайрӑм! Нихçан курман-илтмен япаласемшӗн айӑпласшӑн мана! Мӗне пӗлтерет ку?!
Икӗ кун тӗрӗслерӗ çав комисси. Çамрӑксене чӗнсе пуху ирттерчӗç, ял Совет ларӑвӗ турӗç, тӗпчерӗç, çырчӗç. Ну, паллах, жалоба пӗтӗмпех суя пулни паларчӗ. Пӗтӗмпех йӗркеллӗ, тесе çырма çеç тиврӗ вӗсен...
Анчах ку пуçламӑшӗ çеç пулчӗ-ха. Çакӑн хыççӑн пирӗн яла комисси хыççӑн комисси пыма пуçларӗ,— шалт хӑшкӑлса çитрӗмӗр! Фермӑна пырса тӗрӗслерӗç,—унта пирӗн выльӑхсем нумай вилсе пӗтнӗ имӗш, анчах—тӗрӗссипе—çулталӑк хушшинче пӗр путек кӑна ӑнсӑртран лачакана кайса вилнӗ; шкула тӗрӗслерӗç— унта директор итлемен ачасене хӑй патне чӗнсе кӗртсе хӗнет иккен,—ку та нихçан пулман... Кӗç тата колхоз председательне çавӑрса илчӗç—вӑл пӗррехинче, хӑна-

на кайсан, çул çинче мулкачă хăваласа ăратлă йăйăра пăшăхтарса вĕлернĕ пулать. Анчах йăйăрĕ паян кун та чип-чиперех, кĕçенсе кăна тăрать!

Çине-çине, темĕн те пĕр! Такам мурĕ çырать те çырать—хаçат редакцийĕсене, министерствăсене, районти учрежденисене, милицие! Паллах, кашнинчех тĕрĕслеме килеççĕ, çынсене пухаççĕ, чăрмантараççĕ те — ахалех каяççĕ. Икĕ çул хушшинче сахалтан та пĕр çирĕм комисси пулчĕ пуль çав! Мĕн чухлĕ çул укçи, суточнăй, хваттершĕн тӳлерĕç пуль вăл комиссисене, мĕн чухлĕ хакла вăхăт сая кайрĕ пуль—вĕсен те, пирĕн те! Мĕн чухлĕ сиен турĕ патшалăха!

Чылайччен пĕлеймесĕр пурăнтăмăр эпир çав жалобăсене кам çырса янине. Тӳсмелле мар, шутсăр тарăхса çитрĕмĕр. Тепĕр чух эпир çав «писателе» тытса çурма хатĕрччĕ!.. Элек хыççăн элек, элек хыççăн элек ярать вĕт, эсрелĕ! Унтан... пачах та ăнсăртран пĕлмелле пулчĕ çавна.

Пĕррехинче лавккари Ваçук прикащик, ĕç пĕтсен магазин урайне шăлма тытăннă та пĕр кĕтесре темле лаптак япала выртнине курах кайнă. Тытса пăхать — тетрадь. Чылаях хулăн, хĕррисем сӳсленсе кайнă тетрадь... Уçать те çавна—чи малти страници çине пысăк саспаллисемпе: «Секрет! Пăшăл-пăшăл!» тесе çырнине, унтан «С. Янрайкин» тесе алă пуснине курать. Мĕнле япала ку? Тытăнать Ваçук вулама... Тĕлĕнсе каймалла япаласем иккен тетрадьре! Киле кайма

манса, çурçӗрччен пӗр чаранмасар вулать Васук. Ытла та интереслӗ пулна-çке тетрачӗ, аларан парахма ниепле те май килмен ана. Ялти пӗтӗм самах-юмах, пулни те, пулманни те, пӗтӗм элек, пӗтӗм лапра тулна унта!

Тепӗр кунне эпир вал тетраде правление пухансах вуларамар. Палла событи пулчӗ вал пирӗншӗн, элекçӗ кам пулнине тинех пӗлтӗмӗр! Кулмалли те, тарахса сурмалли те питӗ нумай тупанчӗ... Тем те пӗр çырса пӗтерне вӗт шуйттан Стратонӗ!

Ака, самахран:

«Çырмара икӗ курак вилли выртать. Ун выранне вилнӗ выльахсем выртаççӗ, теме пулать. Эппин, ял Совечӗ зараза саралнипе кӗрешмест, санитаришӗн пачах та тарашмасть, тесе сывлах министрне çырса ярас. Штраф пулать!».

«Председатель ӗнер каçхине Сухви (бригадир) патӗнчен тухрӗ. Халех пӗлтерес: ӗçлес выранне, пирӗн предколхоз маткасем хыççан чупать кана...»

«Райисполком уполномоченнайӗ М. ял Совет секретарӗ патӗнче ик каç выртса кайрӗ. Паллах, вӗсен ӗçкӗсӗр пулман. Материал!»

«Нумай пулмасть колхоза килнӗ агроном Веселова вечерсенче хыта ташлать-ха. Пӗлтерес: йаха-яха çын, авторитечӗ çук, ун пеккисене тимӗр шапарпа...»

«Ачасене шкул пахчинче ӗçлеттереççӗ. Кӗркунне çи-

мĕçĕ пĕтĕмпех директор валли пулать ĕнтĕ. Эксплуатаци! Министр патне...»

«Парторганизаци секретарĕ йăмăкĕ Раис садоводра ĕçлет. Кунĕн-çĕрĕн садран улма-çырла вăрлать, тесе çырас...»

«Радиотехник Витали медсестра Нинăпа явăçса кайнă. Пĕрмай пĕрле. Нина ăна пĕтĕм спирта ĕçтерсе ярать, иккĕшĕ медпунктра çĕрĕ-çĕрĕпе ашкăнаççĕ, теме пулать...»

Тата ытти те, тата ытти те—темĕн те пĕр, пĕтĕмпех çавăн майлă! Пулать те вĕт тĕнчере çавăн пек лапăрчăк çын!

Тетрадьне вăл лавккана тем илме пырсан ăнсăртран кăларса ӳкернĕ пулмалла ĕнтĕ...

Эпир çийĕнчех нимĕн те шарламарăмăр: малалла тата мĕн тăвать-ха ку, терĕмĕр, сăнас, пурĕ-пĕр халь пирĕн алла лекрĕ ĕнтĕ! Анчах ялта ун пек хыпар пит час саралать-çке... Пĕри—теприне, тепри—тата теприне «питĕ вăрттăн» пĕлтерет те, кайрĕ вара!

Кĕскен каласан, хăйĕн тетрадьне эпир тупни çинчен пĕлсенех, Стратон хăйне урнă йытă çыртнă пекех чупса пычĕ правленине.

— Как имел право?! Суда паратăп! Манăн унта государственнăй секретсем пур!—тесе çухăрма тытăнчĕ çав.

Анчах эпир ăна: тӳрĕ те таса çынсем çинчен элекленĕшĕн хăвна суда паратпăр акă, уголовнăй кодексра

сана валли кирлӗ статья тупаççех!—тесен, тӳрех чӗлхине çыртрӗ. Çемçелсе-йăвашланса кайрӗ, унтан, çӗрелле пăхса, чӗтрекен сасăпа:

— Хӗрхенӗр вăт çынна, тек ун пек нихçан та тумастăп, тупа туса калатăп...—тесе йăйкăшма тытăнчӗ.

Тӳсме çук йӗрӗнтӗмӗр эпир унтан...

Çавăн хыççăн ăна пурте «Пăшăл-пăшăл» тесе чӗнме тытăнчӗç. Пӗр-пӗр чарусăр ача ашкăнсан та, аппӗ-амăшӗсем ăна тӳрех: асту, Пăшăл-пăшăл кӗнекине лекетӗн ака, тесе хăратаççӗ.

Анчах Пăшăл-пăшăл хăй тек жалобăсем çырмасть пулас, çавăнтанпа тек комиссисем пымарӗç. Тепӗр тесен—çыртарах ара, ăна халӗ пурӗ-пӗр никам та ӗненмест...

Сирӗн таврашра та çавăн пек пăшăл-пăшăл çук-и, юлташсем? Йӗри-тавралла лайăххăрах çавăрăнса пăхăр-ха!





# Тĕрĕс меслет

Пĕррехинче, канмалли кун каçалапа, Атăл хĕрринче уçăлса çӳренĕ чух, эпĕ Василь Васильч Шандараева тĕл пултăм. Нумайранпа курманччĕ ăна, пĕр виçĕ çул та ытла пулĕ, анчах паллакан çынсем ун çинчен калаçнисене час-часах илткелесеттĕм. Питĕ лайăх мар калаçатчĕç...

— Пĕтнĕ çын вăл,—тетчĕç.—Пуç тӳпи таранах эрех ăшне кĕрсе ларнă, тин ĕнтĕ тухаймасть пулĕ... Ĕçре ниçта та тытмаççĕ ăна, унта-кунта вырнаçса пĕрер-икшер уйăх ĕçлекелет те—каллех тухса ӳкет. Арăмĕ пăрахса кайнă, хăй çаплах ĕçет-ха. Этем сăнĕ те юлман. Куçĕсем ашланса ларнă, сухалне хырмасть, питне эрнере пĕрре кăна çăвать-и тен, хăй вара пĕрмай

сивчир тытнă пек чĕтрет. Питĕ шел çынна! Анчах хăй мĕн тери ăста бухгалтерччĕ!

Халь пăхатăп та—çын пĕртте ун пек мар. Чип-чипер çын! Сан-пичĕ çап-çутă та яп-яка, куçĕсем кантăк пек таса, çийĕнче—кăвак коверкот костюм, сенкер тĕслĕ пурçăн кĕпе, илемлĕ галстук, уринче нăтăр-нăтăр сар пушмак. Хăй пĕр пилĕк çулхи хĕрачана çавăтнă, ачи саркайăк пек, такамăн та тытса ачашлас килмелле!

«Ак япала...—шухăшларăм хам ăшра. — Епле майпа кун пекех улшăнса, якалса кайнă вара ку? Неушлĕ ĕçме пăрахнă?».

Эп тĕлĕннине Василь Васильч тӳрех асăрхарĕ пулмалла. Эпир пĕр-пĕрне ал парса саламланă хыççăн вăл:

— Ма пит тĕлĕнсе пăхатăн?—терĕ те, кулса ячĕ.—Шутламанччĕ-им мана кун пек курма? Ну-ну, пăх эппин лайăхрах, кур чапа тухнă пьянчук Шандараева...

— Ара, нумайранпа курман та... çавăнпа...—терĕм эпĕ.

— Ан суй,—мана хулпуççирен çапса илчĕ Василь Васильч.—Эс кăна мар, пурте çапла! Мана курсан, хăйсен умне пĕлтĕр-виçĕмçулах масар çине леçнĕ çын сасартăк тухса тăнă пек пăхаççĕ... Анчах эпĕ уншăн пĕртте çиленместĕп. Мĕн пулни—пулнă. Пĕтнĕ çын, тенĕ мана. Тĕрĕс шутланă ун чух, чăнах та, пĕтеттĕм вĕт, аран-аран чакаланса тухрăм эрех кĕленчинчен.

Халĕ çав ĕлĕк пулни-иртнисем хăруша тĕлĕк пек çеç аса килеççĕ...

— Халь вара саççим, пăртапуй ĕçместĕн-и?—ыйтмасăр тўсеймерĕм эпĕ.

— Капут, — терĕ Василь Васильч. — Никаких. Тăрантăм. Май таранах, какăричченех!

— Кăшт та, ним чухлĕ те сыпмастăн-и?

— Çук. Точка.

Эпир унпа Хĕрлĕ площадь еннелле утрăмăр, анчах пĕрре пуçлана самах малаллах пычĕ пирĕн.

— Енчен те лайăх кăна кампани пухăнсан тата, Василь Васильч, хăнана е туя каймалли пулсан—мĕнле вара?

— Çав кампанисем пĕтерчĕç те ĕнтĕ мана,—терĕ Василь Васильч тăруках тарăхса кайнă пек пулса. — Паян кампани, ыран кампани... Хăш чух сăлтав тупăннипе, тепĕр чух ахалех, ним сăлтавсăрах. Аса та илес килмест! Малашне ĕнтĕ хуть те çĕр компани пухăнтăр маншăн пулсан, çирĕм туй пĕр харăс сиктĕр, пурпĕрех пĕр тумлам та ăша ямастăп. Сăмахран каласан, паян ака эпĕ шăп та шай хĕрĕх çул тултартăм. Менельник манăн, уяв кунĕ, темелле. Ĕлĕкхи пек пулсан, çак хĕрĕх çул тултарнă ятпа хĕрĕх градусли шыв пекех юхмаллаччĕ ĕнтĕ. Ку таранччен мана эрех шăрши витĕрех çапса лартатчĕ. Анчах халĕ, куран, манран «шипр» одеколон шăрши çеç кĕрет—тин кăна парикмахерскинчен яшланса тухрăм.

— Маттур апла пулсан, питĕ маттур!—терĕм эпĕ, юлташшăн чунтанах савăнса.—Чăн та, мухтамалли çеç юлать сана. Ан çилен те ĕлĕкхине аса илнĕшĕн, анчах та эсĕ вĕт пĕр хуша... мĕнле калас...

— А мĕн çиленмелли пур?—тĕлĕнерех пăхрĕ ман çине Василь Васильч.—Пулнă терĕм вĕт сана! Қашни кунах янă çухави хыçне. Ирпе мухмăр уçнă. Қантăрла татах хушнă. Қаçалапа вара ӳсĕр пулнă. Хăш чух милицинче те сывăрнă. Унта, ху пĕлен, штраф, ĕçре — выговор. Пĕрре, иккĕ, виççĕ... Унтан—вжик! Приказ, тух та ут тăват еннелле, рас пурăнма пĕлместĕн, ыр çынсем каланине итлеместĕн, хăвна та, ачу-пăчуна та хĕрхенместĕн. Пĕр эрне иртет-и çавăн хыççăн, иккĕ-и, каллех ĕç шырама тытăнатăн вара... Паллах ĕнтĕ, никамах та илесшĕн мар: ĕçетĕн эсĕ! теççĕ. Эс ăна хирĕç: ĕçместĕп, тесе сăмах паратăн, шантарса, тупа тусах калатăн—ĕненмеççĕ. Шандараев шантарни—шанчăксăр япала вăл, теççĕ... Ара, пĕлсе çитнĕ те-ха ĕнтĕ, мĕн тăвас тетĕн? Юлашкинчен, çавăн пек аран-аран вырнаçкалатăн та... уйăхран-и, иккĕрен-и, каллех тухса вăркăнатăн. Қаллех çав эсрелĕ кампанисем, «тус-юлташсем» пирки! Ара, эсĕ пирвайхи ĕç укçине илсессĕнех çыпăçаççĕ вĕт-ха: «Атя, пĕрер çĕр грамм кайса хурар, ним те пулмасть уншăн...» Эп ĕçместĕп, мана ĕçме пачах та юрамасть, тесе çăвар та ан уç, тӳрех тăрăхлама, мăшкăллама тапратаççĕ: «Ха, пирĕн Василь Васильч çветтуя тухса кайнă! Арăмунтан хăрамас-

тăн-и тата, ухмах! Ĕçме пăрахса чул çурт лартас теместĕн-и?»

Ну, каятăн вара... Малтан—çĕршер, унтан икшер çĕр яратăн. Пулчĕ те вăл, истори çĕнĕрен пуçланса каять.

Арăм çавăн пек пурнăçа тӳсрĕ-тӳсрĕ те тӳссе çитереймерĕ. Мĕн каласси пур ĕнтĕ, ӳсĕрпе хам ун çине алă хуни те пулнă çав, пытармалли çук. Ачана çавăтрĕ те тухса кайрĕ яла, амăшĕ патне. Тăрса юлтăм тăр-пĕччен, уйри тămана пек! Манăн, ухмахăн, çавăн чухне те пулин ăса кĕмелле-мĕн, анчах эпĕ пушшех ĕçме тапратрăм. Кунĕ-кунĕпе мар, эрни-эрнипе... Укçа пĕтсе çитрĕ те—килти япаласене пасаралла шăвăнтарма тытăнтăм. Хайхи «тус-юлташсем», хама вăйпах ĕçме сĕтĕрекеннисем, пачах та паллами пулчĕç—мана курсанах урамăн тепĕр еннелле тапса сикеççĕ... Юлашкинчен вара чирлесех ӳкрĕм. Вăйăм та, халăм та пĕтсе çитрĕ. Çывăрайми пултăм. Çывăрма мар—куç та хупаймастăп вĕт, тӳрех вуник мăйракаллă шуйттансем, вут куçлă йĕке-хӳресем курăнма пуçлаççĕ. Чӳречерен аршăн тăршшĕ çут çĕçĕсем тытнă бандитсем мана пусма кĕреççĕ пек... Çĕр варринче шари! шари! кăшкăрса вăранса каятăп. Хам йĕп-йĕпе тар, сывлама сывлăш çитмест, чĕрем усал качака хӳри пек тапăлтатать. Пĕтетĕп вĕт, пуçĕпех ухмаха ерсе каятăп!..

Юрать, ыр çынсем пур-ха çут тĕнчере, пулăшрĕç мана... Пирĕн çуртра, манпа юнашарах, пĕр старикпе

карчăк пуранаççĕ—иккĕшĕ те учитель пулнăскерсем, халь пенси çинче. Ылтăн çынсем, темелле иккĕшне те! Эпĕ пĕр каçхине шуйттансемпе çапăçнă чух кăшкăрнине илтсе чупса пычĕç те ман пата, васкавлă пулăшу машинине чĕнсе илсе лартса ячĕç. Унтан эп выртнă больницăна та тăтăшах çӳрерĕç, ĕмĕр-ĕмĕр тав тăвăп вĕсене уншăн!

— Леш юлташусем, ну... собутыльниксем пĕрре те пырса курмарĕç пуль?—ыйтмасăр тӳсеймерĕм эпĕ.

— Э, мĕн калаçатăн кирлĕ мара!—аллипе сулчĕ Василь Васильч куна хирĕç.—Ман кĕсъере укça пур чухне кăна кирлĕ пулнă вĕт эп вĕсене!

— Эппин, эсĕ начар çынсем хушшинче пураннă, чăн-чăн юлташсем пĕр-пĕрине темле хурлăха лексен те пăрахмалла мар...

— Çапларах пулнă пулмалла çав,—ассăн сывласа килĕшрĕ манпа Василь Васильч.

— Ну, кайран вара, больницăран тухсан мĕнле? Чиперех пуранма пуçларăн-и?

Вăл кăштах шухăша кайнă пек пулчĕ, пирус тивертсе ячĕ.

— Мĕнле калас сана... Пĕр енчен—чиперех те темелле, тепĕр енчен—самаях йывăр пулчĕ...

— Мĕн, чуну каллех черкке патнелле туртăнма пуçларĕ-им?

— Çук, уншăн мар... Чунне те, чĕрине те хытарса лартрăм эпĕ. Тӳррипех калатăп—ман çавара шĕшлĕпе

хирсе уçсан та пĕр тумлам эрех ярайрас çукчĕ ун чух!

— Мĕн эппин тата? Арăмупа ачушăн хытă хуйхăртăн-и? Пĕччен юлнă та-ха эсĕ...

— Уншăн та мар. Хам чипер пурăнма пуçласан, вĕсем ман патăма таврăнасса шансах тăнă эпĕ,—терĕ Василь Васильч.—Мĕн пулса иртнине ик-виç сăмахпа каласа пама çук... Пĕлесех килет пулсан, атя, кĕрсе ларар ман пата, эп ак çак çуртра пурăнатăп...

Эп килĕшрĕм. Хваттерĕ Василь Васильчăн лайăх иккен, мĕн кирли пурте пур, таса, тирпейлĕ. Чечексем нумай, стенасем çинче картинăсем, алăпа тĕрлесе тунă ӳкерчĕксем...

— Арăм çук-ха паян, йăмăкĕ пионер лагерĕнче те, çавна курма кайрĕ,—терĕ кил хуçи, кĕнĕ-кĕменех электрочейник лартса ярса.

— Ну, итлетĕп, кала тавай малалла...—терĕм эпĕ. Манăн вăл мĕнле сывалса çитни çинчен питĕ пĕлес килчĕ.

Василь Васильч çĕнĕрен калама пуçларĕ вара:

— Больницăран таврăнсан, хайхи карчăкпа старик, мана васкавлă пулăшу машинипе ăсатнисем, ман патăмран тухма та пĕлмерĕç, тес пулать. Манран çын тăвасах тенĕ пулмалла ĕнтĕ вĕсем... Пĕрмай калаçаççĕ манпа, йăпатаççĕ, карчăкĕ тĕрлĕ варенисемпе чей ĕçтерет, старикĕ манпа кашни каç шахматла вылять... Эрех сиенĕ çинчен калакан кĕнеке тупса пырса пачĕç. Вуласа тухрăм... Хăрушă кĕнеке! Тем те пулать иккен

эрехрен! Ĕçекен çынсем ĕçмен çынсенчен виçĕ хут ытларах вилеççĕ, ухмаха ереççĕ, ĕмĕрлĕх чăлах пулса юлаççĕ. Ӳсĕрпе мĕн чухлĕ преступлени тунисем çинчен каламалли те çук...

Ну, пурăнатпăр çапла. Кун хыççăн кун иртет. Чиперех. Хайхи, пĕр пĕчĕкрех ĕç те тупса вырнаçкаларăм. Анчах службăна кайса килетĕп те—урăх ниçта та тухмастăп, хама хам арестлесе пурăнатăп. Старикен те мана куçран вĕçертмеççĕ-ха. Кичем пуласран, эсĕ кĕнекесем ытларах вула, терĕ пĕррехинче карчăкĕ, театра, концертсене кай, анчах ĕлĕкхи юлташусемпе ан çыхлан, киосксем тĕлĕнче чаранса ан тăр, кам та пулин вăйпа туртса кĕрĕ тата, тесе асăрхаттарчĕ... Итлерĕм çакна. Ним пытармасăр каласан, юлашки виç-тăват çул хушшинче эпĕ сахал вуланăччĕ,—мĕншĕнни паллă ĕнтĕ,—театрта та пулманччĕ. Халь вара, ĕçме пăрахнă май пушă вăхăт пулнипе, çав «пробела» тултарас, терĕм.

Тытăнтăм вулама. Карчăкпа старикĕн—учитель пулнăскерсен—пин кĕнеке те ытла пулĕ, библиотекăна çӳрес хуйхи çук, тыт та вула! Чăн малтан чăваш поэчĕсенчен пуçлас, терĕм,—яш чухне, тăн кĕриччен, эп хам та сăвăсем çыркаланă-çке-ха. Вăт, çавăнтан пуçланчĕ те вара ман пурнăçри çĕнĕ йыварлăх...

Эпĕ Василь Васильч çине тĕлĕнерех пăхрăм,—мĕнле йыварлăх пулма пултарать-ха кĕнеке вуланин-

чен? Вӑл этажерка ҫинчен темиҫе кӗнеке илчӗ, унтан вӗсене уҫкалама тытӑнчӗ.

— Акӑ, кур-ха, пирӗн поэтсем мӗн ҫыраҫҫӗ! Итле!—терӗ те вӑл кӑшт тӑрсан, чӑн-чӑн эстрада ҫинчи артист пек, каҫӑрӑлса, сылтӑм аллине пӗлӗтелле ҫӗкле-ҫӗкле вулама пуҫларӗ:

Куркара сӑра шавларӗ
Шурӑ кӑпӑк тухиччен.
Алтӑрпа йӑтса пуҫларӗ
Сӑмахне Калля пичче:
— Яланах ҫапла хаваслӑ
Пурӑнма шакка-шакка
Тӳнтерер-и, ырӑ халӑх,
Чи малтан пӗрер курка!
Ваттисем пӗлсе каларӑш,
Пирӗн савӑш куркине
Ӗҫейменӗ пулӗ карӑш,
Ӗҫекенӗ—путене...

Илтрӗн-и? Ӗҫейменӗ—карӑш, ӗҫекенӗ—путене! Мӗн тери чаплӑ танаштару, э? Халь тата итле акӑ, ҫав сӑвӑҫах тепӗр поэминче мӗн ҫырать:

Ҫӗнӗ ҫул валли юри
Ҫӗн урпа сӑлатӗнчен
Сӑрхӑнтарнӑ пыл-сӑра
Чашкӑрать куркасенче.
Тав тӑвать вара мучи,
Янк ярать карланкине
Сарӑ йывӑҫ куркинчен
Кӑпӑкланнӑ сӑрине...

Туятӑн-и, епле «аппетитлӑ» сӑвӑ! Ана вуласан, камӑн ӗҫесси килмӗ, камӑн пырӗ ярӑнмӗ?

— Вайлӑ ҫав,—терӗм эпӗ, ирӗксӗрех кулса ярса.—Вула-ха, вула, тата пур-и кун пекки?

Василь Васильч тепӗр сӑвӑ кӗнеки тытса вулама пуҫларӗ:

Суйлав кунӗ ячӗпе
Клубӗнче буфет ӗҫлет.
— Черккисем пӑхма чипер,
Тытма та ҫаплах-ши?—тет
Ман шоферӑм, чиперскер.
Тытса пӑхрӑмӑр пӗрер —
Чиперех пек туйӑнать!

— Чипер пулмасӑр! Шутсӑр чипер мар-и, каламалли те ҫук вӗт!—тарӑхсах калама пуҫларӗ Василь Васильч.—Тепӗр поэчӗ кун пирки пит тӗрӗс ҫырнӑ: «Малтанхи стакана—ҫавӑран, малалла—сулӑнатӑн вӑйран...» Анчах ҫав поэтах, сулӑнасран хӑрамасӑрах, ак мӗнле каҫса кайсах мухтать ӗҫке-ҫике:

Тип апат шӑвармасӑр анмасть,
Туй сӑрасӑр. эрехсӗр пулмасть...
Ҫич инке чупкала ҫеҫ тӑрать,
Витрепе вӑл йӑтать пыл-сӑра.
Арҫынсем виҫӗ рет хушшипе
Ярӑнаҫҫӗ тулли четвӗртпе,
Сӑрине тыттараҫ куркапа,
Эрехне... чим-ха, чим!—стаканпа!

Василь Васильч кӗнекене лап! хупрӗ те сӗтел ҫине лач! пӑрахрӗ.

— Стаканпа! Ма тата алтăрпа мар-ши? Ма лаша шăвармалли витрепе мар?.. Шутсăр тарăхтарса ячĕ мана çак сăра-эрех поэзийĕ! Çакăн хыççăн вулама та пăрахрăм эп ку кĕнекесене. Мана, тин çеç ĕçме пăрахнă çынна, тепĕр хут пăсса яма пултарнă вĕсем, эп вĕт каллех сăрине—куркапа, эрехне—стаканпа тытса, хамăн карланкăна янк та янк яма тытăнма пултарнă! Кун çинчен хамшăн тăрăшакан вата учительницăна каласа патăм та, вăл: «Темшĕн пичетлеççĕçке ун пеккисене...»—тесе ассăн сывласа илчĕ.

— Унтан мĕн турăн вара?—ыйтрăм эпĕ.

— Унтан театра çӳреме тытăнтăм,—терĕ Василь Васильч.—Академи театрĕн пĕтĕм репертуарне пăхса тухас, терĕм... Анчах та мĕн тетĕн эсĕ, хамшăн ыррине куртăм, тетĕн-и? Асту, çапла пуль! Кашни спектакльрех ĕçеççĕ, пĕлетĕн-и, кашнинчех çынсем мĕнле ĕçсе супнине кăтартаççĕ вĕт. Çынсене эрех çинчен мантарас выранне—çав сиен, çав тăшман çинчен аса илтерсех тăраççĕ! Ака, шутла-ха эсĕ хăвăн пуçупа: — «Нарспинче» ĕçеççĕ, «Айтарĕнче» ĕçеççĕ, «Ялтара» ĕçеççĕ,.. Ну, кусем хуть кив пурнăça кăтартаççĕ те, унта ĕçни те юрать. тейĕпĕр. Анчах кайса кур-ха эсĕ хальхисене! Вĕсенче те алтăрпа та стаканпа яраççĕ вĕт! Пĕр пьесăра та эрех-сăрасăр ĕç пулмасть: «Энтипĕнче» те, «Виçĕ туйĕнче» те, «Парнеллĕ туйĕнче» те, ытти вĕтĕр-шакăр пьесăсенче те... Тупа туса калатăп, ун пек спектакльсене çине-çине çӳрес пулсан, нихçан

пĕр черкке тытман çын та пьянчука тухма пултарать!.. Тек каймарăм вара театра. Лучча концертсене çÿреме пуçлас, терĕм. Анчах кунта та... çаван майлах пулса тухрĕ вĕт! Чăн малтанхи хут кайсанах, пĕр тĕреклĕ арçын тухса тăчĕ те, ман труба сасси пек сасăпа:

Налей, выпьем ей-богу еще,
Бездельник, кто с нами не пьет...—

тесе мĕкĕрсе ячĕ. Анран тухса каяттăм! Ĕçме пăрахнăшăн хама тиркесе «бездельник» тенĕ пекех, халех ĕçме кайма чĕннĕ пекех туйăнса кайрĕ те—тухса шăвăнтăм часрах. Ку çеç те мар-ха: филармонинчен тухса площаде ансаттăм кăна—радиопа çаван пекех тепĕр хулăн сасă илĕртме тапратрĕ мана:

— Ай ĕçер-и-и, ай çиер-и-и...

Çак юрăçă микрофон умĕнче пĕр аллипе эрех стаканĕ, тепринпе пулă хÿри тытса тăнă пекех туйăнса кайрĕ мана. Тапрăм вара часрах килелле! Çитрĕм те— пулмасть текех искусство произведенийĕсем çине шанса, терĕм, вĕсем мана тепĕр хут ĕçке ертсе яма пултараççĕ, терĕм... Ара, тÿссе тăр-ха эсĕ çаван пек сăвăсем, спектакльсем, юрăсем умĕнче! Епле мухтаççĕ, епле хитре кăтартаççĕ вĕсем ĕçке-çике! Мĕнешкел вăй кирлĕ вĕсене хирĕç тăма!

— Чăнах та, йывăр ĕнтĕ чăтса тăма,—килĕшрĕм эпĕ.

— Хама хам алла илмесен, мана никам та пулă-

шас çуккине пит лайăх ăнлантăм вара,—терĕ Василь Васильч.—Маншăн ку чи тĕрĕс те шанчăклă меслет пулать, терĕм. Ĕçместĕп! Кирлĕ мар! Никама та итлеместĕп, никам илĕртнине те парăнмастăп! Нихçан та! Çавăн пек пурăнма пуçларăм та вара, ман пата арăм та таврăнчĕ, çынсем те хисеплеме пуçларĕç, пур енчен те лайăх пулчĕ...

Василь Васильч каласа пĕтерчĕ те, эпир унпа килте пĕçернĕ варенипе чей ĕçме лартăмăр.






*(Чӑн пулнӑ хурлӑхлӑ истори)*

Каҫхине, пӗтӗм район ҫывӑрма выртнӑ вӑхӑтра, милици уйрӑмӗнчи телефон сасартӑк ҫурӑлса каяс пекех чӑнкӑртатма тытӑнчӗ. Ҫине-ҫине, темиҫе хут... Чӑнкӑр-р, чӑнкӑр-р!..

— Итлетӗп, — тенӗ дежурнӑй, васкасах телефон трубкине тытса. Ҫавӑнтах трубкӑра темле пит хастар хӗрарӑмӑн сасси пулемет пек шатӑртатма тапратнӑ:

— Милици! Милици-и ку? Итлӗр-ха! Эсир нимӗн те пӗлместӗр-и? Епле пӗлместӗр пулать? Ара, кӗҫӗр «Шуҫӑм» колхоз бригадирне, Хвати Кӗркурине, районтан таврӑннӑ чух такамсем тапӑнса ҫапса пӑрахнӑ вӗт! Ҫапса пӑрахни сахал, ҫумӗнчи икӗ пин тенкӗ укҫине кӑларса илнӗ. Епле пӗлместӗр ҫавӑн ҫинчен? Апайтурух, ытла та япӑх ӗҫлетӗр-ҫке эсир!..

— Çынни вилсех кайнă-и вара?—хăвăрт ыйтнă дежурнăй, хăйĕн умĕнче выртакан хут çине çырма хатĕрленсе.

— Вилсех çитеймен, анчах та кĕç-вĕçех чунне турра пама пултарать. Часрах килсе следстви тăвăр, шыраса тупăр бандитсене!

Мĕн каласси пур ёнтĕ—хăруша хыпар! Колхоз бригадирне такам шуйттанĕ çул çинче тапăннă, чут çеç вĕлермен, çаратнă... Пĕлме çук, тен, укçи хăйĕн те мар, колхозăн пулнă...

Ним тăхтаса тăмасăрах, районти прокуратурăпа милицирен «Шуçăм» колхоза—Симĕскасси ялне — следстви енĕпе ĕçлекен икĕ çынна кăларса яраççĕ. Çилтăман вĕçтернипе машина юр ăшне кĕрсе ларать, вара следовательсем çурранах, çулне-мĕнне пăхмасăрах утаççĕ. Çав тери васкаççĕ вĕсем, калама та çук!

— Çынни вилсе кайиччен ыйтса пĕлме ĕлкĕресчĕ— хăйне тапăнакансене палласа юлайман-ши вăл? Паллайман пулсан та, кам çине шутлать?

Çурçĕр иртсен ик сехетре вĕсем Симĕскассине çитеççĕ те тӳрех Хвати Кĕркури килне шыраса тупаççĕ. Питĕ шикленсе, пăшăрханса кĕреççĕ ун патне: «Вилсе кайман-ши, мĕскĕн?» Анчах, вĕсен телейне, Кĕркури вилмен иккен-ха, тата... вилме те шутламан. Кутнĕк сакки çине тăсăлса выртнă та, ыванна лаша пек, хашкана çеç:

— Хашш! хаш!..

Пĕр следователĕ ун çумне тухтăр пекех пырса ларнă та часрах алтымарне тытнă, сывлăхĕ çинчен ыйтнă.

— Ох, йывăр çав, питĕ йывăр!—ассăн сывласа йынăшса янă ăна хирĕç Кĕркури. Унăн сывлăшĕпе пĕрле следователь сăмсине çунăк сăмакун шăрши пырса çапнă...

— Кам тапăнчĕ вара сана, кăштах та пулин палласа юлаймарăн-и?

— Хамăр ял çыннисемех пулĕ, тетĕп...— каллех йынăшнă пек тунă бригадир.— Çуна çинче эпĕ чаппанпа пĕркенсе ларса пыраттăм та, сасартăк мана такам хыçалтан хуса çитсе пуçран çапрĕ, унтан çуна çинчен туртса антарса пăвма пуçларĕ, çав вăхăтра тепри хĕве кĕрсе кайса икĕ пин тенкĕ укçана тăпăлтарса кăларса илчĕ, унтан иккĕн пĕр харăс хĕнеме тапратрĕç... Урăх нимĕн те астумастăп... Ой, çав тери йывăр мана! Сывлăш тухмасть, ыратман вырăн çук. Вилетĕпех ĕнтĕ...

— Киле мĕнле çиткеленĕ вара эсĕ?

— Пĕлместĕп,— тенĕ Кĕркури, — ăна арăмран ыйтăр...

Следовательсем унăн арăмне сăмах хушма ĕлкĕриччен, лешĕ хăй сиксе тăнă та кĕтмен-туман çĕртенех акăш-макăш кăшкăрма тапратнă:

— Эсир мĕн ыйтса ларатăр тата? Халех ман упăшкана çаратакансене шырама тухса кайăр! Мĕнле милици вăл, çав хурахсене тупаймасан?! Толшна тупма!

Икĕ пин каларса илнĕ вĕт-ха, ик тенкĕ мар! Ешĕл çав укçана тупса памастăр, халех шалăп çыратпăр сирĕн çинчен, аслăраххисем патне каятпăр, хамăртан пурпĕрех култармастпăр!

Аллине çил арманĕ çунатти пек çавăрттарсах вăрçма тытăннă хĕрарăм, унтан тăрук суланса кайнă та, чалăшшăн талт-талт-талт утса пырса кăмака çумне нач! пырса çапăннă.

Арăмĕ те, упăшки пекех, çав тери ӳсĕр пулнă иккен!

Следовательсем, пĕр-пĕрин çине пăхса, вăрттăн кăна кулса илнĕ, унтан, кил хуçисем урăличчен кунта ларнипе ним усси те пулас çуккине курса, тухса кайма хатĕрленнĕ.

— Аçта пăрахса тухса каятăр тата?—кăшкăрнă бригадир арăмĕ, ӳкесрен кăмака хысакĕнчен тытса.— Тупатăр-и эсир вăрăсене, çук-и?

— Тупатпăр, инке, тул çутăлсанах тупса килетпĕр...

Следовательсем урама тухнă та хапха умĕнче чарăнса тăрса пĕр-пĕринпе калаçса илнĕ:

— Мĕнле япала ку сан шутпа?

— Пĕлме хĕн...

— Çаратнах-ши ăна? Тен—укçине хăй каларса ӳкернĕ вăл?

— Хайсем каланине ĕненсен—çаратнă пек пулса тухать...

— Ĕненместĕп! Темле таса мар япала пур кунта.

— Мур пĕлет-и...

Урамра тĕпсакайĕнчи пекех тĕттĕм пулнă, ял вĕçĕнче, конюхсен общежитинче çеç имшертерех çутă курăннă. Çĕрле ниçта кайма çуккипе следовательсем çавăнталла утнă. Пырса кĕнĕ-кĕменех, унта вĕсем çакнашкал калаçу илтнĕ...

— Урампа пыратăп та хайхискер,— тенĕ пĕр çамрăкрах конюхĕ,— уй хапхи енчен çуна кӳлнĕ лаша кашкăртан тарнă пек ыткăнса килнине курах каятăп... Мĕн пулнă капла, лашана кам кун пекех хăвалать? Унччен те пулмарĕ—ман тĕлпе хам пăхакан «Туристка» вĕçтерсе иртсе кайрĕ — кунталла, коннăй двор еннелле. Çуни çинче никам та çук. Ырă мар япала! Мĕн те пулин пулнах, тетĕп. Лавккана кайма тухнăскерех, каялла, лаша хыççăн чупатăп... Хапхана çитсе çапăннă «Туристка» сивчир тытнă пек чĕтресе тăрать... Ни йĕвенĕ, ни тилхепи çук, урхалăхĕ те татăлнă!

— Апла, лешне вăл пĕлтĕрхи пекех çуна çинчен вăркăнтарса хăварнă ĕнтĕ!—тенĕ тепĕр конюхĕ, лĕх-лĕх-лĕх кулса.

— Кам çинчен вара ку юмах?—ыйтнă пĕр следователĕ, маларах иртсе.

— Хамăрăн бригадир Фадеев çинчен,— тенĕ конюхсем.— Пасара-мĕне кайсан, киле нихçан та лашапа пĕрле таврăнмасть. Паян та çавăн пекех пулнă. Çавăрса çапса хăварнă ăна пирĕн «Туристка» текен кĕсре... Шутсăр ăслă лаша, ӳсĕрсене пĕртте тӳсме пултараймасть!

Калаҫса кайсан, следовательсем ака мӗнле истори ҫинчен пӗлнӗ. Паян ирхине ирех, кавак ҫуталлах, Хвати Кӗркури пӗр ман сысна тушкине хурса районти пасара сутма кайна-мӗн. Тупаш лайах пулнашан саванса, вал пасартах самай ӗҫнӗ, киле тавранна чух пӗр ялти таванӗсем патне кӗнӗ те татах хушна, ура ҫинче тараймиех пулна, ҫапах та хай пурпӗрех киле килме тухна. Ҫул ҫинче вара ҫыварса кайна пулмалла та—ҫуна ҫинчен таканса юлна... Арамӗ питӗ хыта кӗтнӗ ана—упашки укҫапа килмелле-ҫке!—анчах кӗтсе илеймен. Лаша пӗр-пӗчченех тавраннине пӗлсен, часрах тепӗр лаша кулнӗ те шырама тухса кайна. Упашки Тури Сурам сачӗ ҫумӗнче харлаттарсах ҫыварать-мӗн...

— Укҫине чанах ҫухатна-ши вал?—ыйтна следовательсенчен пӗри.—Икӗ пин каларса илнӗ, теҫҫӗ вӗсем...

— Кам, Кӗркури-и? Ӗмӗрне пӗр пус ҫухатман вал, ҫухатас та ҫук!—тенӗ конюхсем.—Пустуй лапартатаҫҫӗ!

Ирхине следовательсем ҫынсене тӗпчеме тытанна. Ҫаплах пулна иккен, Кӗркурие никам та тапанман, хӗненӗ палли те пулман. Тури Сурам патӗнчен арамӗ ана ҫуна ҫине сысна тушки пек хурса килсен, пӗр алтар самакун пана та, вал чиперех тана кӗрсе пӗр хуша урама илтӗнмеллех кашкарса юрласа выртна:

Ехал с ярманки мухмар-купец,
Мухмар-купец, утаймаи молодец!

Юрласан-юрласан вара амăшĕн кăкрине ĕмсе тăраннă ача пекех лăпкăн çывăрса кайнă. Илтекенсем те, куракансем те пулнă вăл мĕн-мĕн хăтланнине. Арăмĕ те укçа çухални çинчен никама та нимĕн те шарламан...

Анчах халĕ Кĕркури хăйĕннех пенĕ:

— Тупа туса калатăп: çаратрĕç мана! Çапса ўкерчĕç, тăнсăр турĕç, унтан пĕтĕм укçана кăларса илчĕç...

Арăмĕ те ура тапсах кăшкăрнă:

— Тупса парăр!..

Тĕрĕс çав, çухалнă укçана тупмаллах пулнă. Çаванпа та, хăшпĕр свидетельсемпе калаçса илнĕ хыççăн, следовательсем упăшкипе арăмне питĕ кăмăллăн лăплантармалла каланă:

— Юрать, халех тупса парăпăр... Ан пăшăрханăр!

Вара çавăн хыççăнах вĕсем... Фадеевсен хăйсен килĕнче ухтарма тытăннă. Унта пăхнă, кунта... Кил хуçисене ку калама та çук тарăхтарса янă, вĕсем пĕр харăс кăшкăрма тытăннă:

— Мĕн хăтланатăр эсир?! Уйра çаратнă укçана хамăр пата кам килсе хутăр?..

— Ун пек те пулма пултарать,—тенĕ те следовательсем, кĕçех чăланти пĕр пысăк катка айĕнчен укçа туртса кăларнă... Укçине арăмĕн чăлхи ăшне питех те тирпейлĕн чĕркесе чиксе хунă иккен.

Шутласа пăхаççĕ—шăп икĕ пин тенкĕ тухать!

— Ку мĕн?—ыйтаççĕ Фадеевсенчен.

— Ӳкҫа,—теҫҫӗ лешсем, иккӗшӗ те тăруках сăнран улшăнса.

— Кам укҫи?

— Пирӗн... Камăн пултăр тата...

— Мӗнле майпа лекнӗ вăл укҫа катка айне?

Упăшкипе арăмӗ куна хирӗҫ нимӗн те калаймаҫҫӗ, иккӗшӗ те пиҫнӗ рак пек, хӗрлӗ сатин пек, автан киккирикки пек хӗрелсе каяҫҫӗ, ҫынсем ҫине те пăхаймаҫҫӗ.

— Каласа парăр, мӗншӗн хăтлантăр эсир кун пек?

Упăшкипе арăмӗ каллех чӗнмеҫҫӗ, курма пухăннă ҫынсенчен тахăшӗ: «Милицисене улталанăшăн айăплама та пултараҫҫӗ!»—тенине илтсен тин арăмӗ тӗрӗсне калама тытăнать.

— Ара, лайăх мар пулса тухрӗ-ҫке... Ман Кӗркури—ялта ятлă ҫын, бригадир, ӳсӗр пуҫӗпе уйра йăваланса выртнă. Эп ăна мӗнле тиесе килнине пурте пӗлеҫҫӗ. Халăх умӗнче аван-им?

— Ҫавăн пирки ҫакнашкал камит выляса илес терӗр пулать?

— Ҫавăн пирки ҫа-ав...—макăрса янă бригадир арăмӗ.—Укҫине вăл мана киле ҫитсенех пачӗ, анчах ялйышсенчен намăс пуласран ăна ҫаратнă пек тăвас терӗмӗр... Чупрăм вара телефон патне...

— Атя, милиципе прокуратура ҫыннисем хуть те мӗн хăтланччăр, хамăр кăна ыр ятлă пулар, терӗр эппин?

Фадеевсем нимӗн те чӗнеймен. Курма пуханнӑ ҫынсем малтан хуллен, унтан хытӑрах, кӑшт тӑрсан ахӑлтатсах кулма тытаннӑ. Упӑшкипе арӑмӗ намӑсран хӑраса намӑса лекнинчен кулнӑ вӗсем...




Курни
ИЛТНИСЕМ

# Çĕнĕ хушамат



Кун çинчен мана пĕр ял Совет председателĕ, хам питĕ лайăх паллана çын, каласа кăтартрĕ. Вăл каланине эпĕ кунта ним улăштармасăрах çырса паратăп.

— Пирĕн ялта пĕр ватă колхозник пур, çитмĕлсем патнеллех сулăнна ĕнтĕ... Ĕмĕртенпех ăна ял çыннисем Çĕтĕк Якку тесе чĕннĕ. Арăмне те «Çĕтĕк матки», ачисене те «Çĕтĕк ачисем», тетчĕç. Ара, паллах ĕнтĕ, лайăхрах шутласан—кӳренмелле ят ку, анчах ăна пурте хăнăхса çитнĕччĕ те—нимех те пек марччĕ. Хăйсем те çиленместчĕç уншăн.

Ячĕ вăл акă мĕнрен пуçланса кайнă. Питĕ чухăн, çав тери начар пурăнатчĕ çак Якку ĕлĕкхи вăхăтра. Унран чухăн çын та пулман пуль пирĕн ялта. Килĕ-çурчĕ—тайлăк-тĕйлĕк, тăррисем яланах шăтăк, хăй

каларӗш—«ҫилхи витӗр ҫил вӗрет», ачи-пӑчи вара —пӳрт тулличчӗ, вуннӑран та иртнӗччӗ пулмалла, пӗринчен тепри пӗчӗккӗ, анчах ҫӗрӗ—пӗр ят кӑна пулнӑ. Ӑҫтан этемле пурӑнатӑн-ха ун пек пулсан? Ачисен тӑли-ҫӑпати те, сӑхманӗ-кӗрӗкӗ те ҫукчӗ, вӗренекеннисем шкула черетпе ҫӳретчӗҫ: паян пӗри ура сырса, сӑхман тӑхӑнса каять, ыран вара—тепри... Ҫавӑн пирки пуянсенчен тахӑшӗ, мӑшкӑлласа, Яккӑва «Ҫӗтӗк» ят панӑ та, ӑна пурте ҫапла каласа пурӑнма тытӑннӑ.

Пин те тӑхӑрҫӗр вунтӑваттӑмӗш ҫулта, вӑрҫӑ пуҫлансан, ытти ҫамрӑкрах арҫынсемпе пӗрле ҫак Яккӑва та вулӑса чӗнтернӗ.

— Хушамату мӗнле?—ыйтнӑ писарь.

— Хушамат ҫук манӑн,—тенӗ ку.

— Епле ҫук? Кашни ҫыннӑннах хушамат пулмалла!—сиввӗн пӑхса илнӗ ун ҫине писарь.—Тен, эсӗ, хушамат ҫук тесе, вӑрҫа каяссинчен пӑрӑнса юласшӑн?

Якку ӑна хирӗҫ нимӗн те калайман, анчах ҫав вӑхӑтра тахӑшӗ, хамӑр ялсемех ӗнтӗ:

— Ана ялта Ҫӗтӗк Якку теҫҫӗ,—тесе хунӑ.

— Аха, Ҫӗтӗк!—тенӗ писарь.—Питӗ аван! Ҫак сӑмахран хушамат туса хурӑпӑр та эппин эпир! Вырӑсла вӑл, значит, Оборванцев тени пулать!

Тытнӑ та—ҫавӑн пек ҫырса хунӑ список ҫине. Ҫавӑнтанпа ялта Яккӑва хайӗнчен мӑшкӑлласа панӑ ят саккунлӑ пулса тӑнӑ...

Революци хыҫҫӑн ҫӗре ятпа мар, «ятакпа» пама

тытăнсан, часах ураланчĕ Якку. Ялта колхоз тума тытăнсан—никамран малтан çыранчĕ. Ачисем ӳссех пычĕç, вĕренчĕç, пĕр-иккĕшĕ учителе тухрĕç, тепри тухтăр пулчĕ, пĕри халь Шупашкарта, институтра ĕçлет — доцент.

Кайрĕ вара Якку пурнăçĕ! Пӳрт çавăрса лартрĕ — пятистеннăй! Мезонин, чĕнтĕрлĕ крыльца, темĕн те пĕр! Тăрри—тимĕр, ытти çуртсем çинче—чус. Çи-пуçĕсем çинчен каламалли те çук. Кашни çĕнĕ çула çĕнĕ костюмпа кĕтсе илет. Тӳрĕ кăмăлпа, чуна парса ĕçлекен колхозниксем ку чухне мĕнлерех пураннине хăвăрах пĕлетĕр ĕнтĕ...

Çапла çул хыççăн çул иртрĕ, пурнăç юсансах, лайăхлансах пычĕ.

Пĕлтĕр çуркунне, май уявĕ умĕн, çак Якку пичче, ялти пек каласан—Çĕтĕк Якку, вырăсла каласан — Яков Оборванцев ял Совет канцелярине пырса кĕчĕ. Яланхи пекех типтерлĕ тумланнă хăй, хура костюмпа, шурă кĕпепе, пуçĕ çинче—сăран картуз, шурă сухалне ик еннелле тураса якатса хунă.

— Килех, Яков Иванч, ирт, лар,—терĕм çакна. — Мĕн сăмахпа килтĕн? Итлетĕп...

Якку ытла тăруках ответ памарĕ. Темшĕн именнĕ пек туйăнчĕ вăл мана. Пырне тасатмалла ӳсĕрсе илчĕ, çӳç-пуçне, сухалне татах шăлкаласа якатрĕ.

— Ĕçĕ манăн... хайне майлăскер-ха, ытла тӳрех каласа пама та пĕлмелле мар,—терĕ вăл унтан.

— Мĕнле пулсан та каласа пар ĕнтĕ, ватанса тăмалли çук, ют çынсем мар вĕт,—терĕм ăна.

— Эпĕ...хушамат улăштарас тетĕп, хушамат юрăхсăр манăн!—хаштах сывласа ячĕ вара старик.

Эпĕ тĕлĕнсех кайрăм. Ватлăхра... хушамат?..

— Мĕн пирки ун пек шухăш тытрăн вара, Яков Иванч?

— Çавăн пиркиех, тусăм! Юратмастăп хама Оборванцев тесе чĕннине. Çитет ĕнтĕ, хĕрĕх çул ытла çӳрерĕм вăл киревсĕр хушаматпа. Пытармалли çук—ĕлĕк тĕрĕсех пулнă вăл маншăн, анчах халĕ... çук! Мĕнле çĕтĕк эпĕ? Мĕнле оборванцă? Хăш енчен? Шухăшла-ха!

— Вăл тĕрĕс ĕнтĕ...—тӳрех килĕшрĕм эп унпа.

— Ачамсемшĕн те, мăнуксемшĕн те питĕ килĕшӳсĕр вăл. Вĕсенчен пĕри те çĕтĕк-çатăк çӳрекен çук-ха, пулмасть те пулĕ, тетĕп. Апла пулсан, мĕншĕн-ха вĕсен оборванцă ятне илтсе пурăнмалла? Никак та килĕшме пултараймастăп эпĕ кунпа!

— Тĕрĕс, Яков Иванч, куна эсĕ питĕ лайăх шухăшласа каларнă!—терĕм эпĕ.

— Ачамсемпе пуринпе те çырусем урлă калаçса татăлтăм ĕнтĕ,—терĕ старик малалла,—вĕсем те улăштарас, теççĕ...

— Мĕнле хушамат тăвас тетĕр вара халĕ?

— Ачасем пурте: Маев тăвас, теççĕ. Май уйăхĕ пит лайăх вĕт-ха вăл? Пĕтĕм çутçанталăк чĕрĕлет, çĕнелме

тытăнать, çав тери пысăк праçник пулать... Çитменнине, эп хам та май уйăхĕнче çуралнă. Килĕшрĕм çак хушаматпа. Аван пулассăн туйăнать. Эсĕ ху мĕнле шутлатăн ун пирки?

— Пит аван пулать,—терĕм эпĕ.

— Акă заявлени: Обрванцев хушамат кăмăла кайманнипе тата вăл маншăн тĕрĕс пулманнипе, улăштарма ыйтатăп...

Эп ăна кирлĕ хутсем туса патăм. Кĕçех пур Обор-ванцевсем те Маевсем пулса тăчĕç. Хам вара чылайччен шухăшласа çӳрерĕм: мĕн тери ӳсрĕ пирĕн çынсен тивĕçĕпе чысĕ!..





# ОХ ХИНА ВĂРМАНĔ

Пĕр икĕ çул каялла эпир «Çутă çул» колхозăн ватă агрономĕпе, Кузьма Ильич Клеверов юлташпа, вĕсен кукуруза плантацине курса çÿрерĕмĕр. Питĕ вайлă пулнăччĕ вĕсен кукурузи—чăн-чăн вăрман пекех кашласа ларатчĕ, шаларах кĕрсен тухма та пĕлес çук, çухалсах каймалла...

— Ку вăл — пуçламăш кăна-ха, — терĕ Кузьма Ильич, хăйсен плантацийĕ ман кăмăла кайнине кура,—килес çул эпир кукуруза кăçалхинчен виçĕ хут ытларах акатпăр акă, ун чух килсе кур вара эсĕ пирĕн вырăхсене! Çăмарта пек пулаççĕ вĕсем! Тупа туса калатăп—кашни ĕнерен тăвата пин литртан кая мар суса илекен пулатпăр, сĕте хальхи пек бидонсемпе мар, цистерни-цистернипе ăсатма тытăнатпăр!

Çапла калаçса пынă май сисмен те—çырма хĕрри-

не пырса та тăнă эпир. Пахатăп—çырмара çамрăк вăрман ӳсет. Çав тери илемлĕ ешĕл хурăн вăрманĕ. Йывăçĕсен вуллисем çурта пек тӳрĕ те шап-шурă. Ытармалла мар! Ана пĕр-пĕр лайăхрах поэт курас пулсан, çавăнтах сăвă çырса хумалла.

— Ку мĕнле вăрман сирĕн?—тесе ыйтрăм агрономран.

— «Оххина вăрманĕ» теççĕ ăна,—темшĕн кăшт чее реххĕн кулса илчĕ вăл.

— Мĕнле «Оххина вăрманĕ»?

— Çаплах. Çавăн пек ятлă пĕр инке пур пирĕн ялта.

— Вăл лартса ӳстермен пулĕ-çке ăна?

— Çу-ук! Асту, вăрман ларттарăн ăна! Унăн килти пахчинче те икĕ йăмра çеç, вĕсене те ашшĕ лартса хăварнă,—аллипе сулчĕ Клеверов.

— Эппин мĕншĕн-ха?—тата ытларах тĕлĕнтĕм эпĕ.

— Шар курнă вăл унта пĕрре, çавăнпа ун ятне панă...

— Мĕнле шар? Кашкăрсем тапăнман пулĕ те?

— Кашкăрсем тапăннинчен те хытăрах хăранă вăл кунта.

Эпир çырма хĕрринчи кăпăк пек çемçе курăк çине ларса пирус чĕртсе ятăмăр та, Клеверов юлташ, эпĕ ыйтнипе, хутран-ситрен кулкаласа, мана çак вăрман çинчен тĕпĕ-йĕрĕпех каласа пачĕ.

— Куратăн—вăрманĕ çамрăк-ха вăл пирĕн. Сакăр-

тăхăр çул каялла кунта пĕр хăрăк турат та пулман — яп-яка та çап-çараччĕ. Тахçан, асаттесен вăхăтĕнче, кунта сĕм вăрманах пулнă, теççĕ, анчах эпир ăна астумастпăр. Халĕ—ним усăсăр çырмаччĕ. Çитменнине, вăл кашни çуркуннех питĕ ишĕлетчĕ, çултан-çул сарлакарах та таранрах çисе каятчĕ ăна çурхи шыв. Вылььăхсем çÿретмелли вырăн та сахалланса пыратчĕ çавăн пирки. Чарман пулсан, тепĕр темиçе çултан, ишĕле-ишĕле, шырлан ял патнех çитетчĕ пулĕ... Вăрçă хыççăн ик-виç çултан, пурнăç йĕркене кĕрсе çитме пуçласан, çакăн çинчен ялти комсомолецсен пухăвĕнче сăмах хускатса янă:

— Чарас çав киремет çырмине ишĕлме! Мĕн чухлĕ çĕр пĕтсе пырать!

— Атьăр, йывăççем лартса тултаратпăр унта!

Пурте килĕшнĕ çак шухăшпа. Ырă ĕç вĕт, пĕтĕм ялшăн усăллă ĕç пулать! Тепĕр кунне ун çинчен мана пырса каларĕç, эпир вара комсомол секретарĕпе иксĕмĕр тÿрех председатель патне кайрăмăр. Вăл та ырларĕ, правлени те хапăл тусах йышăнчĕ çамрăксем сĕннине, пулăшма та пулчĕç. Тытăнтăмăр ĕçлеме... Çырма тĕпне, ытларах ишĕлнĕ çĕре йăмра, хăва, çăçе чыхса тултартăмăр, ик енĕпе вара шалт хурăн лартса тухрăмăр. Çамрăксем çеç мар, ваттисем те хаваслансах хутшăнчĕç çак усăллă ĕçе. Анчах та—хăвах пĕлетĕн—çемьере чăлахсăр пулмасть, хăшĕсем, хăйсен интересĕсемшĕн кăна пуранаканнисем (пур-ха халлĕ-

хе ун пеккисем!..) тухса та пăхмарĕç. Çав Оххина текен хусах инке шăпах çавсенчен пĕри пулнă: Куçпа та курман вăл ял халăхĕ çырмара мĕн тунине.

Хайхи çак «килти вăрман» пирĕн çав тери лайăх ӳсме тытăнчĕ. Ултă-çичĕ çултан чăн-чăн вăрманах пулса тăчĕ! Акă ĕнтĕ, хăвах куратăн...

— Куратăп ха, — терĕм эпĕ, — анчах мĕн сăлтавпа Оххина ятне панине ниепле те ăнланаймастăп...

— Тăхта, — терĕ Клеверов, — унта та çитĕпĕр... Каларăм-çке, çав Оххина эпир вăрман лартнине куçпа та курман. Кайран та вăл кунта пĕрре те анса пăхман, мĕншĕн тесен унăн çулĕ яланах урăх еннелле — пасаралла та çимĕкелле, хăнана та туялла пулнă. Ĕлĕкрех вăл шутсăр ăста «тупкăç»—евчĕ пулнă, теççĕ, çавăнпах тăранса-тумланса пурăннă. Колхозра ячĕшĕн çеç, кил вырăнне касса илесрен кăна ĕçленçи тăватчĕ, минимума тултарни те сайра пулнă унăн...

— Пĕлтĕр çулла, ĕç çине тухиччен, — терĕ малалла Кузьма Ильич, — çак Оххина Кураккассинчи хурăнташĕсем патне хăнана кайнă, — лешсем ача ят хунă, тет. Лашапах килсе илсе кайнă ăна. Анчах каялла çуррăнах килнĕ. Темшĕн-çке питĕ васканă — каçа хирĕçех тухса утнă. Часрах çитес тесе, мăн çулпа мар, тӳрĕрен тӳрĕ, çырмасем урлă, улăх тăрăх утнă. Ку сукмакпа ĕлĕк чух çĕр хут та çӳренĕ ĕнтĕ вăл, лайăх пĕлнĕ кунти çула, çавăнпа та аташса каяс-тăвас хуйхи пулман унăн.

Анчах утсан-утсан, ик-виçĕ çырма урлă каçса пĕр улăха ансан, хăй те сисмен — темле вăрмана кĕнĕ-кайнă çак. Хăнара самаях хĕрнĕ пулмалла çав, тен, пуçĕ те çавăрăннă пуль пăртакках... Пĕр çур километр шалалла кĕрсе кайсан тин хăй вăрман хушшипе пынине асăрханă вăл. Асăрханă та — тăруках чĕри çурăлса, вилесле хăраса кайнă! Ара, мĕнле эсрел вăрманĕ ку? Ăçта килсе лекнĕ вăл? Ку тăрăхра ĕмĕрне вăрман тавраш̆ĕ пулман вĕт-ха! Апайтурух!

— Шуйттан илĕртсе килнĕ мана кунта!—тенĕ те Оххина, сăхха яра панă.— Пĕтрĕм!..

Унталла, кунталла... Пур çĕрте те вăрман! Аптрасах ӳкет инке, ним тума пĕлмест. Чăнах та, пĕтмелли çитрĕ вĕт! Тытăнать кăшкăрма:

— Хура-ах! Хура-ах! Çăлă-ăр!..

Йĕпе çине сапа, тенĕ пек, çав вăхăтрах Оххина хыçĕнче тăмана кăшкăрса ярать:

— Тĕввик! тĕввик!..

Кукленсех ларать хайхи хĕрарăм: ара, арçури вĕт ку!.. Хайне çав арçури сĕтĕрсе каясран хăраса, пĕр хурăна ыталаса илет те тата хытăрах çухăрма тытăнать:

— Хура-ах! Çăлă-ăр!..

Вăл кăшкăрнине колхоз лашисемпе выртмана тухнă конюхсем илтеççĕ. Мĕн пулнă? Кама пусаççĕ? Мĕнле хурахсем килсе кĕнĕ пирĕн тавраша? Çăлас пулать сынна часрах!

Чупса çитеççĕ çакăн патне. Чăн малтан Ястах мучи

ыткӑнса ҫитет—юман пек тӗреклӗ старик. Ҫулласенче вӑл пирӗн яланах лапрашки пир сӑхманпа, шурӑ кӗҫҫе шлепкепе ҫӳрет. Сухалӗ те шап-шурах унӑн. Хайхи, Оххина ҫакна курать те тата ытларах хӑраса ӳкет. Ара, чӑн шуйттанах килсе тухрӗ вӗт ӑна тытма! Ҫинеҫине хӗрес хурать:

— Сирӗл, сатана! Ҫухал ман куҫ умӗнчен! Сирӗл, явӑл!

— Эсӗ ху явӑл,—тет ӑна Ястах, мӗн пулнине тавҫӑрса илсе.—Таван ял хыҫӗнчех ҫухалса кайрӑн пулать, шеремет?

— Мӗнле тӑван ял?—тӗлӗнсе ыйтать Оххина чӗтрекен сасӑпа.—Пирӗн ял таврашӗнче вӑрман ҫук-иҫ? Эп астӑвасса та пулман!

— Саншӑн ҫук та, ыр ҫынсемшӗн пур ҫав!—тет ӑна хирӗҫ Ястах.

— Хӑш вӑхӑтра ӳссе ларнӑ вара вӑл? Мӗн калаҫатӑн кирлӗ мара?

— Эс пасарсем тӑрӑх йӑрккана вӑхӑтра!—тӑрӑхлать Ястах мучи.—Атя, ут пирӗн хыҫҫӑн, ӑнман этем!

Хайхискерне Ястахпа унӑн юлташӗсем вӑрмантан илсе тухнӑ та—эх, ятланӑ вара, эх, тӑн панӑ! Шалт намӑслантарса пӗтернӗ инкене: халӑхпа пӗрле ӗҫлеме мар, вӑл мӗн тунине те пӗлместӗн, тенӗ. Колхоз вӑрман ӳстерчӗ, икӗ пысӑк сад турӗ, выльӑх-чӗрлӗхӗ картана шӑнӑҫмасть, тырри-пулли вунӑ кӗлет тулли, ял варринче кермен пек клуб йӑтӑнса ларать, эсӗ пур—па-

сартан пасара та, ёçкёрен ёçке! Колхозăн ырă ятне ярса çӳретĕн! Асту, ялтан хăваласа ятпăр акă, тĕсӳ те ан пултăр санăн!

Инке Ястаха хирĕç нимĕн те чĕнеймен...

Вăл хамăр вăрмантах çухалса кайнинчен ирхине пĕтĕм ял кулчĕ. Вăрманне те «Оххина вăрманĕ» теме пуçларĕç. Çамрăксенчен тахăшĕ ăна шӳтлесе каланă та, çирĕпленсех юлчĕ çав ят. Оххина хăй вара çавăн хыççăн чиперех ĕçлеме тытăнчĕ колхозра. Садра ĕçлет халь, çырла патĕнче...





# Портрет

Сăр тăрахĕнчи пĕр колхозра манăн паллană избач пур—Петр Иванч ятлăскер. Питĕ лайăх çын, çирĕм çула яхăн ĕçлет ял культурине çĕклес тĕлĕшпе. Çавăн пиркиех пулмалла, ялта ăна «Кĕнеке Петĕрĕ», теççĕ. Пурте хисеплеççĕ хăйне, пурте юратаççĕ. Ытти ĕçсене туса пынă хушăрах, çав çын фотоўкерчĕксем нумай тăвать. Хăшпĕрисем пек «калымшăн» мар, ахалех, çак ĕçе юратнипе.

Унăн, сăмахран каласан, хăйсен колхозĕн ўсĕмĕсене кăтартакан альбом пур. Пысăк альбом. Ялта хăçан мĕнле лайăх ĕç пулнă, çавсене пурне те ўкерсе илнĕ вăл—фермăсем валли çĕнĕ çуртсем тунă-и, кĕпер хывнă-и, садра панулми йăтăнса анасла пулнă-и, ĕççинче

ясли уçнă-и,—темĕн те пĕр. Колхозри хисеп хăми çинчи ӳкерчĕксене те вăлах тунă.

Хай патне пырсан вара Петр Иванч яланах çав альбома кăтартать. Хайĕн ĕçĕпе мухтанса мар, колхоз ĕçĕсемпе мăнкăмăлланса: кур, епле пуйса пыратпăр эпир!

— Хут çине çырнă отчетсенче тепĕр чух çав тери суяççĕ, ним намăса пĕлмесĕр тыттараççĕ, анчах фотографи нихçан та улталамасть, çук!—тет вăл.—Фотографи—чи тĕрĕс документ, унта сан сăмсу çинчи шăпĕн те ĕмĕрлĕхе тĕп-тĕрĕс паларса юлать. Çаванпа та эпĕ хамăр колхозăн фото-историне туса пыратăп...

Çав енче пулма тӳр килсен, эпĕ яланах Петр Иванч патне кĕрсе тухатăп. Кăçал та пултăм. Яланхи пекех, вăл мана хăйĕн çĕнĕ ӳкерчĕкĕсене кăтартрĕ. Пăхсаларнă чух, сасартăк, альбомри тĕрлĕ ӳкерчĕксем хушшинчен пĕр хĕрĕхсенчен иртнĕ арçынпа унран нумаях та çамрăк мар хĕрарăмăн мăшăрлă портречĕ сиксе тухрĕ. Хĕрарăмĕн сăнĕ çав тери саванăçлă, куçĕсем çиçсе кăна тăраççĕ, арçынĕ вара питĕ кăмăлсăр, кичем, хăйне халь кăна пусмăрласах темле шутсăр йӳçĕ эмел ĕçтернĕ пек куранать.

— Камсем кусем?—ыйтрăм Петр Иванчран.

— Арăмĕпе упăшки,—терĕ вăл.

— Хăвăр ялсем-и?

— Çук, кӳршĕ колхозран. Казахстанра пурăнакан

хĕрĕ патне яма кирлĕ тесе ӳкерттерчĕç. Таçтан, пĕри хĕсĕнсе юлнă...

— Мĕнле çынсем вара вĕсем? Упăшки мĕншĕн çăварне кикен хыпнă пек ларать? Арăмĕ пит хавасла, хăй вара... Тен, аппарат умĕнче ларнă чух унăн вара ыратнă?

— Ыратмаллисем пулкаланă çав унăн,—кулкаласа илчĕ те Петр Иванч, эпĕ ыйтнипе, çав мăшăр çинчен акă мĕн каласа кăтартрĕ.

— Вĕсене пит лайăх пĕлетĕп эпĕ,—терĕ вăл,—пĕр çирĕм пилĕк çул каялла вĕсен туйĕнче те сикнĕ—арăмне вăл пирĕн ялтан илчĕ. Çирĕп пурăнаççĕ. Килĕ-çурчĕ те чиперех, пурлăхĕ те çителĕклĕ, ачи-пăчи те виççĕ-тăватта, аслă ывăлĕ чугун çул çинче машинистра ĕçлет, хĕрĕ пĕлтĕр çерем уçнă çĕре кайрĕ. Йĕркеллĕ çемье. Çавăнпах ял çыннисем хушшинче те хисеп пур вĕсен—упăшкине яланах Иван Васильч, теççĕ, арăмне те Марук тесе мар, Мари Петровна, тесе чĕнеççĕ. Тепĕр çемьесенче, калăпăр, пĕр-пĕринпе урлă-пирлĕ, хăрхар калаçнисем пулкалаççĕ, кусен ун пекки нихçан та пулман...

— Ма-ха эппин Иван Васильч ун пекех йӳçек сăнлă?—каллех ыйтрăм эпĕ.—Мĕн сăлтавпа?

— Сăлтавĕ акă мĕнре,—терĕ Петр Иванч.—Иван Васильча ял çыннисем пĕр пилĕк-ултă çул каялла колхоз председателĕ пулма суйларĕç. Шанчăклă çын, тӳрĕ кăмăллă, ĕçчен, терĕç ĕнтĕ. Чăпах та, Иван Васильч

лайăх ĕçлерĕ, колхоза йĕркеллех ертсе пычĕ, нумай çитменлĕхсене пĕтерчĕ. Хуçалăх палăрмаллах çитĕнчĕ, çавăнпа та ăна кашни çулах председателе суйласа хăварчĕç.

Анчах колхозра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çапах та ыттисенчен каярах юлса пынă. Уйрăмах, ĕне ферминче ĕçсем ăнман. Правленипе парторганизаци çакăн пирки темиçе хут та калаçса илнĕ те ĕне ферминче ĕçлеме председатель арăмне Мари Петровнăна хушас, тенĕ. Иван Васильч хăй те хирĕçмен.

— Ĕçлесе пăхтăр эппин, хăй килĕшет пулсан,— тенĕ.

Мари Петровна килĕшнĕ.

— Анчах ĕçлеме пуçличчен малтан эсир мана командировкăна ярăр,—тенĕ вăл,—ытти колхозсенче мĕнле ĕçленине кайса курам, ăс илем, малта пыракансенчен вĕренсе килем.

— Яра пар!—тенĕ правленирисем.

Эрне ытла çӳренĕ Мари Петровна таврари лайăх колхозсенче, унтан тавăрнсан вара çанна тавăрсах ĕçлеме тытăннă. Пĕр çулталăк хушшинче ĕнесем паллама малла мар пулса кайнă вĕсен. Сĕт-çу икĕ хут ытларах пулма пуçланă колхозăн. Пăрушĕсем—картинка çинчи пек... Хам та кайса куркаланă унта. Анчах Мари Петровна кунпа лăпланман-ха. Çынсене те лăпланма паман тата. Кашни правленирех ферма пирки калаçтарнă.

— Механизаци кирлӗ! Парӑр мана кормозапарник! Туянӑр соломорезка! Корнерезка!

Унтан автопоилкӑсем пирки хистеме тытӑннӑ. Выльӑх апачӗ илсе пыма «подвесная дорога» тенине ыйтма пуҫланӑ. Тавай та тавай!

— Чим-ха, тӑхта... Аҫтан пурне те тӑруках туса ҫитерес?—тенӗ ӑна хирӗҫ правленирисем. Пуринчен ытларах Иван Васильч хӑй хирӗҫленӗ:

— Ҫитӗ сана, Марье, совхоз мар вӗт пирӗн!

Анчах Мари Петровна хӑйӗн шухӑшӗнчен чакман:

— Ҫынсен тахҫанах пур вӗсем, пирӗн мӗншӗн пулмалла мар?!

Хӑй ыйтнисене туса памасан, вӑл: райкома кайса калатӑп акӑ эсир выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ ҫине мӗнлерех пӑхни ҫинчен!—тенӗ.

Правленире ятлаҫса илнӗ хыҫҫӑн арӑмӗпе упӑшки пӗр-пӗринпе килте те виҫшер кун калаҫманни пулкаланӑ. Анчах ферма пурпӗрех вӑйланса пынӑ, хӑй мӗн тӑвас тенине Мари Петровна ҫав-ҫавах тунӑ.

— Эх, пирӗн председатель арӑмӗ ҫивӗч-ҫке ҫав! Вут-ҫулӑм! Ну, пултарать те ӗнтӗ!—ырланӑ ӑна ялйышсем.

Председателӗ—Иван Васильч ӗнтӗ—арӑмне кура хастарлӑрах ӗҫлес вырӑнне, темшӗн-ҫке сӳрӗкленме пуҫланӑ. Ҫынсем каланисене питех хӑлхана чикмен, шав хӑй шутланӑ пек кивӗлле ӗҫлене.

— Тӑватпӑр, тӑватпӑр,— тенӗ вӑл пӗр-пӗр ыйтӑва

хускатсан, анчах кайран те манса кайнӑ, те юри ал сулнӑ—ӗҫне туман. Сӑмахран каласан, вӗсем клуб тума икӗ хутчен йывӑҫ хатӗрлерӗҫ—клуб пулмарӗ, кӳрсе килнӗ пӗренисене пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗнех унта-кунта салатса ячӗҫ. Ял варринче пысӑк пӗве тӑвасшӑнччӗ—пӗвеленмерӗ. Радио туянасси те пулса ҫитеймерӗ,—юписене лартса тухрӗҫ, анчах пралукӗсем паян кун та ҫук-ха, халь тин илсе килмелле, тет. Иван Васильчи хӑй ытларах туйсене, хӑнана ҫӳре пуҫларӗ. Ытлашши ӳсӗрех пулмасть, анчах ӗҫӗ те пулмасть.

Паллах, Мари Петровна ӑна куншӑн пӗрре кӑна мар ятланӑ, анчах упӑшки ӑна хӑлхана чикесшӗнех пулман курӑнать. Пӑсӑлма пуҫларӗ ҫын, темиҫе ҫул хушши пӗрмай мухтанӑ председателе районти кашни пухурах, кашни активрах пӗҫертме тытӑнчӗҫ...

Пӗлтӗр Мари Петровна Мускава ялхуҫалӑх выставкине кайса килчӗ, унта ӑна кӗмӗл медаль памалла тунӑ. Арӑмӗ Мускавра ҫӳренӗ чух Иван Васильч правленире пӗтӗмпе те пӗр-икӗ хут кӑна пулнӑ, ялан кӳршӗри ялта мухмӑр уҫса ҫӳренӗ, теҫҫӗ. Пӗр сӑмахпа каласан, хӑйӗн малтанхи чапне те, халӑх хисепленине те пӗтерсе хучӗ Иван Васильч! Кӑҫалхи отчетпа суйлав пуххинче председательрен кӑларнӑ вара ӑна. Ун вырӑнне Мари Петровнӑна председатель туса хунӑ. Мӗн тӑвас тетӗн эсӗ—халӑх ирӗкӗ! Ӑна хирӗҫ каяймӑн! Халӗ ӑнлантӑн пуль ӗнтӗ ӳкерчӗк ҫинче арӑмӗпе упӑщ-

кин сăнĕсем мĕншĕн çав тери расна пулнине? Пĕрин йăл-йăл кулма, теприн йўç кăшман тĕслĕ пулма сăлтавĕ пур вĕт?

— Пур çав,— килĕшрĕм эпĕ.





# Улталаев мыскарисем

Шапакассинчи «Асамат» колхоз председателĕ Семен Иванович Улталаев мĕнлерех çын пулнине эпĕ ăна хăйне куричченех пĕлеттĕм, мĕншĕн тесен ун çинчен мана пĕр писатель çав тери кулăшла истори каласа панăччĕ...

Ĕçĕ çапла пулнă. Пĕлтĕр кĕркунне, çуна çулĕ пулсанах, çав писательпе тепĕр фотокорреспондент «Асамат» колхоза çитнĕ. Вĕсен çак ялта хĕрĕх çул ытла ĕçленĕ ватă учительница çинчен очерк хатĕрлемелле пулнă,—учительницине ун чух орден пана.

Çавăн пек ĕçпе пынă çын чăн малтан ăçта кайтăрха? Паллах, колхоз правленине, председатель патне каять вăл. Писательпе фотограф та тӳрех çак Улталаев патне пырса тухнă. Питĕ лайăх йышăннă вĕсене председатель.

— О, тавах, тавах сире килнĕшĕн! Пирĕн Антонина

Васильевнăна чапа кăлармаллах, кăлармалла!—тенĕ вăл кусем яла мĕншĕн килнине пĕлсен.— Тивĕçлĕ вăл, питĕ тивĕçлĕ! Пирĕн ялти кашни хутла пĕлекен çын — унăн ученикĕ вĕт! Сăмахран каласан, хамăрăн раттах илес... Манăн атте те ун патĕнче вĕреннĕ, эп хам та, ман арăм та, халь ак ачасене те вăлах вĕрентет. Çырăр, çырăр, патретне те темиçе тĕслĕ çапăр... Пĕтĕм республика пĕлсе тăтăр ун çинчен! Сире ĕçлеме эпир пур условисене те туса парăпăр, уншăн ан пăшăрханăр! Хваттерĕ те пулĕ, апат-çимĕçне те ресторанринчен кая мар пĕçерсе çитерĕпĕр, кирлех пулсан, ăшăнмаллине те тупăпăр, хе-хе-хе...

— Пире нимĕн те кирлĕ мар-ха,— тенĕ писатель,— пирĕн ăна хăйне часрах курса калаçасчĕ кăна...

— Халех, халех! Хамах илсе кайăп сире! — тенĕ Улталаев, хăлаçланса илсе.

Чăнах та, председатель вĕсене хăех илсе кайнă ватă учительница патне, çула май вĕсен пулас хваттерне те кĕртсе кăтартнă — пĕр ватăрах тăлăх арăм килне, ăна каçхи апат хатĕрлеме хушнă, асту, писательсене пăхма пĕл эсĕ, колхоза намăс ан кăтарт, тесе асăрхаттарнă. Учительница патне çитсен, ăна та хăй çинчен мĕн-мĕн каламаллисене вĕрентме тытăннă, чарăнма пĕлмесĕр, çав тери хавасланса калаçнă.

— Питĕ вашават çын-çке сирĕн председатель,— тенĕ писательпе фотограф учительницăна, Улталаев тухса кайсан.

Анчах учительници ку сӑмахсене хирӗç аллипе сулнӑ кӑна:

— Э-э, мӗн калаçмалли пур ун çинчен! Пуш параппан вӗт вӑл! Хуларан-мӗнрен çын килсен яланах çивӗч, анчах хӑй ӗçӗнче çав тери юлхав. Чее тата шутсӑр. Ахальтен мар ӑна мӗн пӗчӗкренех «Чее Çемен» теççӗ,— Улталаев хушамат та çавӑнтан пулнӑ унӑн. Сӑмахпа тем те тӑвать, такам умӗнче те ырӑ пулма пӗлет, анчах хӑй пана сӑмаха наччас манса каять. Аса илтерсен те каялла тапма пӑхать — каламан эп ун пек, тет. Ӗнер кӑна шкул валли вутӑ турттарас пирки тытӑçса илтӗмӗр-ха... Пулаççӗ вӗт çавӑн пек çынсем!

— Пулаççӗ çав,— килӗшнӗ писатель,— ытлашшипех пур-ха ун пеккисем...

Хӑй колхоз çинчен çырма килменнипе писатель текех председатель пирки калаçман, ватӑ педагогӑн пурнӑç çулӗ çинчен ыйтса пӗлме тытӑннӑ. Икӗ кун хушши пухнӑ хӑйне кирлӗ материала. Учительницӑпа хӑйӗнпе калаçнисӗр пуçне, унӑн дневникӗсемпе паллашнӑ, унӑн ученикӗсем пулнӑ полковниксен, тухтӑрсен, инженерсен çырӑвӗсене вуланӑ, ялти çынсемпе — çавӑн пекех унӑн ученикӗсем пулнисемпе курнӑçнӑ, пӗр сӑмахпа каласан — ик сехет хушшинче виçӗ очерк çырмалӑх материал пухакансем пек мар, питӗ тӗплӗ ӗçленӗ...

Писатель çавӑн пек тӑрӑшнӑ вӑхӑтра фотограф та ӗçсӗрех ларман иккен. Колхозри стена хаçачӗн редак-

торӗпе паллашнӑ та тухса кайнӑ ял тӑрӑх «Капкӑн» валли ӳкерчӗксем тума! Ҫил шӑхӑрса тӑракан ҫӗтӗк-ҫатӑк тӑраллӑ ферма патне пырать — ӑна ӳкерет, униче карти хыҫӗнчи сеялкӑсем, веялкӑсем тата тем те пӗр юр айӗнче тутӑхса выртнине асӑрхать — вӗсене чаклаттарса илет, уй тӳпинчи ҫунатсӑр ҫил арманӗсем те питӗ лайӑх «объект» пулаҫҫӗ уншӑн, ялти библиотекӑра ӗҫлекен ҫамрӑк хӗр унта тӳсме ҫук сивӗ пулнипе тӑлӑп тӑхӑнса ларнине те ӳкермесӗр иртмест... Пӗр ҫирӗм ӳкерчӗк тӑвать ҫавӑн пекки — альбом тума та ҫитмелле!

Малтанхи каҫхине Улталаев хайхи писательпе фотографа вырнаҫтарнӑ хваттере пырса вӗсемпе питӗ майлӑ калаҫнӑ, йӑпӑл-йӑпӑл та шӑпӑл-шӑпӑл. Анчах тепӗр кунне фотограф вӗсен колхозӗнче мӗн-мӗн ӳкерсе ҫӳрени ҫинчен ӑна тахӑшӗ систернӗ те — тӑруках урса кайнӑ хайхи пыл чӗлхеллӗ ҫын! Анланнӑ ӗнтӗ вӑл ҫав ӳкерчӗксенчен мӗн шӑрши кӗнине. Фотографа урамра курсанах сиксе ӳкнӗ ун ҫине:

— Эсӗ мӗн, таҫтан килнӗ шӑпийон пек вӑрттӑн ӳкерчӗксем туса ҫӳретӗн ман колхозра?! Кам права панӑ сана ун пек хӑтланма? Колхозра эп хуҫа, ман разрешенисӗр эсӗ ҫак ҫул ҫинчи улӑм пӗрчине те ӳкерсе илме пултараймастӑн! Пӗлетӗн-и ҫавна? Мӗн тума кирлӗ пулчӗҫ сана пирӗн армансем? Ферма тӑррисемпе мӗн тӑватӑн эсӗ? Халех хама панӑ пултӑр вӑл ӳкерчӗксене, атту эпӗ... атту... тем туса тӑкма пултаратӑп!

Анчах фотографӗ те хӑракан йышшиех пулман-мӗн, Улталаев ытлашши вӗреме тытӑнсанах вӑл йӑпӑр-япӑр аппаратне уҫнӑ та тӳрех ун ҫине пӑшалпа тӗллене пек тӗлленӗ:

— Ну-ну, давай-давай, кӑшкӑр хытӑрах, кар ҫӑварна ытларах, ҫиччас ӳкерсе илетӗп, хӑвӑрӑн стена хаҫачӗ валли пит лайӑх карикатура пулать!

Улталаев ҫав самантрах ҫӑварне хупнӑ, чыхӑнса кайнӑ, унтан куҫӗсене хаяррӑн ҫутӑлтарса илнӗ те, ним калаймасӑр, аллипе сывлӑша касса, аяккалла утнӑ...

Тепӗр ирхине, вырсарникун, писательпе фотограф правленине лаша ыйтма пынӑ,—вӗсем ёнтӗ хӑйсен ӗҫӗсене туса ҫитернӗ те Шупашкара кайма хатӗрленнӗ. Лаши вӗсене станцине ҫитме кӑна кирлӗ пулнӑ—пӗр сакӑр-тӑхӑр ҫухрӑма. Улталаев вырӑнта пулман. Кусем пӗр сехет кӗтнӗ, иккӗ—председатель пыман. Ӑна шырама темиҫе шкул ачине чуптарнӑ—Улталаев тупӑнман. Кӗтсен-кӗтсен туссем тарӑхса ҫитнӗ те, писателӗ уксах, фотографӗ мӑн хырӑмлӑрах пулни ҫине пӑхмасӑрах, станцине ҫурран тухса утма шут тунӑ, анчах ҫав вӑхӑтра правленине Улталаев пырса кӗнӗ. Самаях хӗрӗнкӗ пулнӑ вӑл, унӑн куҫӗсем ҫутӑлкаласа ҫеҫ тӑнӑ.

Писатель станцине ҫитме лаша ыйтсан, вӑл хӑлаҫлансах, юриех ҫав тери хаваслӑ пулнӑ пек туса каланӑ:

— Мӗн калаҫмалли пур ун ҫинчен! Тархасшӑн арэ, тархасшӑн! Сире те лаша памасан, кама парас тата?

Эсир вёт пирӗншӗн чи хисеплӗ ынсем! Ҫыратӑр пирӗн ҫинчен, фотографисем тӑватӑр чапа кӑларатӑр. Тав тумалла кӑна пирӗн сире! Ҫиччас, халех, чи лайӑххине, самӑй ҫивӗччине кӳлсе парӑпӑр...

Вӑл ҫавӑнтах хут татӑкӗ илсе чӑр-чар ҫыркаланӑ та пӗр ачана тыттарнӑ:

— Вӗҫтер часрах конюшнине, Ванькка, халех «Шутнике» кӳлсе парса яччӑр сана!

Ача темшӗн председатель ҫине тӗлӗнерех пӑхнӑ, анчах лешӗ аллипе хаяррӑн сулса илсен, пуля пекех тухса чупнӑ; тепӗр ҫирӗм-вӑтӑр минутран вара правлени умне хыҫлӑ ҫуна кӳлнӗ Дон-Кихот лаши пек ҫӳлӗ те ырхан сар лаша пырса та тӑнӑ. Шупашкар ҫыннисене ӑсатма Улталаев хӑй те крыльца ҫине тухнӑ.

— Лаши кӑшт ырхантарах пулнӑшӑн ан ӳпкелӗр эсир, урисем, ав, епле вӑрӑм унӑн—туххӑм илсе ҫитерет сире станцие!—тенӗ вӑл, хӑрах куҫне хӗссе илсе. Ҫавӑнтах ларкӑч ҫинче ларакан Ваньккана пӳрнипе юнанӑ:—Эсӗ асту, шельма ҫури, ытлашши ӗрӗхтерсе ан ҫӳре, «Шутник» вӑл, ҫирӗпрех тытмасан, пӗр-пӗр шырлана ҫавӑрса ҫапса хӑварма та пултарать!

Ача председателе хирӗҫ нимӗн те чӗнмен. Писательпе фотограф ҫуна ҫине меллӗрех вырнаҫса ларнӑ та хайсене ӑсатакансемпе сывпуллашмалла аллисемпе сулнӑ.

— Чипер ҫитӗр, тухса ӳксе ан юлӑр!—кӑшкӑрнӑ та

вёсене Улталаев, хăй темшĕн-çке ахăлтатсах кулсă янă...

Чăнах та, ларкăч çинчи ача тилхепене пĕрре туртсанах, хайхи «Шутник» тăпăрт! тапса сикнĕ. Çуна тӳрех сулăнса кайнă, ларса пыракансем чут çеç тухса ӳкмен... Унтан сар лаша анаталла анакан урам тăрăх сиккипе кайма тапратнă...

— Ан чуптар ытлашши, тыт хытăрах!—кăшкăрнă мечĕк евĕрлĕрех фотограф, ăçта та пулин пырса çапăнса аппаратури арканса каясран хăраса.

Çав самантрах шутсăр тĕлĕнмелле япала пулса тăнă: урампа сиккипе пыракан «Шутник» сасартăк çултан пăрăннă та пĕр хапха патнелле сĕтĕрсе кĕрсе кайнă. Ларкăч çинчи ача ăна аран-аран пăрса каллех çул çине илсе тухнă. Кунта лаша каллех сиккипе ярă панă, анчах тепĕр аллă метр кайсан каллех тепĕр кил умне сĕтĕрсе кĕнĕ...

«Хăй час-час пулнă килсем ĕнтĕ кусем, çавăнпа кĕрет»,—шухăшлана писатель, лашасен кăмăлне пĕлекенскер.

Вĕсем ял варринчи çырма урлă чиперех каçнă, уй хапхинчен тухнă, анчах кăшт кайсанах «Шутник» тепĕр хут çултан пăрăннă та ялтан пĕр виççĕр-тăватçĕр метрта ларакан лаша витисем еннелле никам тытса чармалла мар тапса сикнĕ! Тăпăрти, тăпăрти, тăпăрти—çĕмрен пек, арçури пек!

— Аçта каятăн эс?! Чар лашине, чар!—кăшкăрнă

çуна çинче ларса пыракансем. Ӑчан ĕрĕхсе кайнă лашана чарма вайĕ çитменнине кура, писательпе фотограф иккĕшĕ те пĕр харăсах сиксе тăрса тилхеперен ярса тытнă, шăлĕсене çыртса, пĕтĕм шăнарĕсене хытарса туртнă... Усси пурĕ-пĕр пулман! «Шутник» çил-тăвăл пек ыткăнса пынă, турта пуçĕсемпе хапхана çитсе çапăнсан тин чарăннă.

— Вăт, эсрел выльăхĕ!—макăрса ярас пек сасăпа вăрçса илнĕ те Ванькка, лашана каялла пăрма тытăннă. «Шутник» ним тусан та пăрăнасшăн пулман, хапха çинеллех тăрăннă, епле пулсан та килкартине кĕрсе каясшăн пулнă. Çакна кура, писатель çуна çинчен анса лаша пуçĕнчен пырса тытнă, фотографĕ тилхеперен тытса, пĕтĕм вăйне пухса сылтăмалла туртнă. Хăтлансан-хăтлансан, вĕсем çапах та лашана тепĕр майлă, пуçĕпе уй еннелле çаврăрса тăратнă. Анчах лашин малалла утас шучĕ те пулман. Вăл пĕрмай каялла чакнă... Вара кусем ăна вăйпа малалла сĕтĕрме тытăннă: писатель йĕвенĕнчен туртнă, фотографĕ çунине хыçалтан тĕкнĕ, Ванькка, çуна пуçĕнче тăрса, лашана пĕр чарăнмасăр тӳртĕнчен, аякĕсенчен, урисенчен вăрăм çапăпа ăшаланă... Çавăн пек вара, пĕр выльăха виççĕн хупăрласа, ăна вĕсем пĕр ана пӳ тăршшĕ малалла илсе кайна-кайнах. Виççĕшĕ те халь çеç вĕри мунчаран тухнă пек хĕрелсе кайнă, йĕп-йĕпе тара ӳкнĕ, хаштăк, хаштăк, хаштăк сывланă, çапах та хăйсене хăйсем çĕнтерӳçĕсем тесе шутланă...

— Ларăр ёнтĕ, халь каятпăр пулĕ!—тенĕ фотограф, Ванькка выранне ларкăч çине хăй вырнаçса. Тилхеперен карт! туртнă та:—Но, пошол! Полный, вперед!—тесе кăшкăрнă.

«Шутник»... хускалман, вырăнтах тăнă. Фотограф ăна çурăм тăрăх çапăпа туртса илнĕ. Лаша ик урипе пĕр харăс каялла тапса янă. Тарăхнă фотограф, хаяррăн кăшкăрса, тата вирлĕрех çапнă, анчах тепĕр самантранах хăйĕн пит-куçне темле çемçе те ăшă япала пырса лăчлатнине туйнă.

— Ой, пĕтрĕм!—йынăшса янă вăл...

— Мĕн пулчĕ?—хăраса сиксе тăнă писатель. Вăл, «Шутник» тапса ярсан, фотографăн сăмси катăлса кайнă пуль, тенĕ...

— Лаша... мăшкăлларĕ!—тенĕ фотограф.

Унăн пит-куçне чăнах та симĕсрех шĕвек çыпăçса тулнине курсан, писатель чăтайман вара, ахăлтатса, варне тытса кулма тытăннă. Фотограф, çĕре сиксе анса, вараланнă питне часрах юрпа çума пикеннĕ. Çав вăхăтрах, ниçта кайса кĕрейми тарăхса, Ваньккаран хыттăн кăшкăрса ыйтнă:

— Мĕнле шуйттанла лаша ку сирĕн?! Яланах çакăн пек чăхăмлать-и вăл? Е ют çынсене сиссе çакăн пек хăтланать-и?

...— Ана ...ăна нихçан та кулмеççĕ!—тенĕ Ванькка.

— Епле апла—кулмеççĕ?—тĕлĕнсе ыйтнă писатель те.—Пустуй калатăн пуль?

—Пустуй мар çав, чӑнах,—куçӗсене мӑчлаттарса илнӗ ача.—Мӗн тихаранпах çавӑн пек кутӑн вӑл. Çунана е урапана кӳлсен, хуть те çапса пӑрах эс ӑна, пурӗ-пӗр ялтан тухмасть. Çавӑн пиркиех ӑна «Шутник» тесе ят панӑ. Лаша шутӗнче мар вӑл пирӗн, харампыр кӑна, чисти лодӑр!

Писательпе фотограф пӗр-пӗрин çине чӑр-р... пӑхнӑ та, вӗсем хушшинче çакӑн пек калаçу пулса иртнӗ:

— Анланатӑн-и?

— Анланатӑп...

— Мӗн ӑнланатӑн?

— Улталаев пирӗнтен мӑшкӑлланине.

— Тӗп-тӗрӗс. Юри тунӑ вӑл куна.

— Эпӗ хӑшпӗр «саккунсӑр» ӳкерчӗксем туса илнӗшӗн таварчӗ ӗнтӗ пире, урӑх нимшӗн те мар... Мӗн тавапӑр халь?

— Мӗн тӑвассу пур? Паллах, урӑх лаша пама ыйтса хамӑра хамӑр намӑс кӑтартмастпӑр!

Вӗсем вара станци еннелле çурранах танкканӑ. Пӗр вунӑ-вунпилӗк утӑм тусан, каялла çавӑнса пӑхнӑ та, Улталаев «Шутникӗ» лаша витисем еннелле метеор пек вӗркӗннине курса юлнӑ...

Анчах та ӗç кунпа пӗтмен-ха.

Хайсен колхозӗнчен тухса кайнӑ чух писательпе фотографа нихçан ялтан тухман «Шутнике» кӳлсе парса мӑшкӑллани çитмен Улталаева, кӗçех вӑл тата тепӗр «номер» туса хунӑ. Фотограф хайхи «саккун-

сăр» ÿкерчĕксем туса çÿренĕшĕн чĕрене пырса тивмеллех таварма шутлана пулас çав вăл.

Шупашкара таврăнсан вăхăт пĕр эрне иртнĕ-и çав, иртмен-и, ăна тĕрĕссипех калама пултараймастăп, анчах та часах писательпе фотографа редакци секретарĕн ĕçĕсене туса пыракан (ун пеккисене и. о.—исполняющий обязанности, теççĕ вĕт-ха?) хĕсĕкрех куçлă лутра чăваш—хуть те хăçан та хаçатсенчи умстатьясен чĕлхипе калаçакан тата хăй аллинче власть пуррине кăтартма ça-ав тери юратакан çын—сасартăк хăйĕн кабинетне чĕнтернĕ.

— Юлашки хут командировкăна кайсан, эсир мĕн хăтланса çÿренĕ?—ыйтнă вăл шăппăнрах, шăл витĕр, аллинчи темле лутăрканчăк хут çине пăхса.

— Ним те хăтланман-çке,—тенĕ кусем.

— Ан суйăр!—сассине хытарнă и. о. секретарь.— Акă, жалоба персе çитрĕ паян сирĕн пирки.

— Мĕнле жалоба, Пал Палыч? Ан тĕлĕнтер...

— Эпĕ мар-ха вăл тĕлĕнтерекенни, эсир ял култарса çÿретĕр! Хăвăра хăвăр тивĕçлипе организацилесе, журнал валли материал пухас ĕçе çÿлĕ пусăмра туса пырас, колхозниксен сарлака массисене пур енчен те паха тĕслĕх кăтартса пырас выранне, эсир унта хăвăран мораллĕ-политикăлла сăн-сăпата варалана!

— Чим-ха, Пал Палыч... Ним те вараламан эпир!

— Ан суйăр!—сассине хытарнă и. о. секретарь.— Акă ман алăра эсир хăвăра ялта мĕнлерех тыткалани

çине пур енчен те çутă сапакан документ. Унта çырнисене пĕтĕмпех фактсемпе тĕкĕлесе çирĕплетнĕ, тивĕçлĕ кондицине çитернĕ. Мана ку официаллă хут çĕр процентчĕпех тивĕçтерет. Штамм та пур ун çинче, пичет те, çавăнпа та ним тунмасăр, тӳррипе калама сĕнӳ паратăп сире.

— Мĕн çырнă-ха вара унта, вуласа пар эппин!— тарăхма пуçланă писательпе фотограф.

— Эсир «Асамат» колхозра хăвăра апатлану тунăшăн та, коммунальнăй услугăшăн та тӳлемен, потребительсен обществин магазинĕнчен спиртной напиток илсе ĕçнĕ—уншăн та расчет туман. Ку—пĕрремĕш пункт. Ял тăрăх, килтен киле çӳресе, фотоаппарат витĕр ӳкерчĕксем тунă, колхозниксенчен укçа-тенкĕ нумай мобилизациленĕ, анчах негатив çинчен тунă оттисксене пĕрне те почта урлă ярса паман. Безобрази! Ăçта сирĕн совĕç?

— Пал Палыч! Элек вĕт ку, çав тери тискер элек! Ĕмĕрне пулман япала!..— кăшкăрса янă фотограф, тăруках тарласа кайнă çамкине çанă вĕçĕпе шăлса илсе.—Суда паратпăр эпир куншăн! Намăса çухатнă çын çырнă куна!

Анчах и. о. секретарь ăна çавăнтах пӳлсе лартнă:

— Хуллентерех эсĕ, шав ан çĕкле кунта! Тӳсĕмлĕх паларт! Пурпĕрех ответ тытас ĕçрен сулăнса каяймастăн!—Вăл хăйĕн аллинчи хута çат! тутарнă сĕтел çине.—Акă, счет та ярса панă сире! Вулăр та савăнăр!

Писательпе фотограф çав хута çăтăр-çатăр ярса тытнă та часрах вулама тытăннă. Вуланă май вĕсен çӳçĕсем вирелле тăрса кайнă, куçĕсем хуралса килнĕ... Ытла та хăватлă хут пулнă çав вăл! Акă мĕн çырса тултарнă унта:

Счет. От к-зу «Асамат» писателю... (хушамат) и фотографисту... (каллех хушамат). Причитаеца получит з вас на ползу к-за «Асамат» за выданный продукт когда были на командировке:

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| 1. Свинский мясо | 8 кг | по 5 ру | | всего 240 руп. | |
| 2. Кардошка | 32 кг | по 5 ру | | 160 ру—00 | |
| 3. Кабуста | 10 кг | по 4 ру | | 40 ру—00 | |
| 4. Лук | 3 кг | по 10 ру | | 30 ру—00 | |
| 5. Соля | 1 кг | по 2 ру | | 2 ру—00 | |
| 6. Вотка (из сельпо) | 4 лит | по 50 ру | 40 ко | 201 р. | 50 ко |
| 7. За квартер | 2 день | по 20 ру | | 40 руп. | |
| Итого всево | | | | 713 ру. 60 к. | |

Аяла «пред.правлений С. И. Улталаев» тесе кукăртса хунă, çиелтен пичет лаплаттарнă. Пĕр сăмахпа каласан, унăн хучĕ пур енчен те саккунлă пулнă!

— Ну, халь ĕнтĕ массăсем умĕнчи хăвăрăн ответлăха туятăр-и?—ыйтнă и. о. секретарь, писательпе фотограф çамкаран тукмакпа çапнă такасем пек тăнтан пăхкаласа курнипе савăнса.— Чĕнместĕр? Епле намăс мар сире хăвăрăн ятăрсене çавăн пек ярса çӳреме!

— Ним намăсĕ те çук, мĕншĕн тесен ку хут—ăсран

тайӑлнӑ ҫын лапӑртатни ҫеҫ!—тенӗ писатель.— Фальшивка теҫҫӗ ун пеккисене, филькина грамота!

— А-ав епле! Ыйту ҫине самокритикӑлла пӑхас, аялтан хӑпаракан сывӑ критикӑна чӑн-чӑн профсоюз членӗсене тивӗҫлӗ пек йышӑнса хӑвӑра валли конкретлӑ вывод тӑвас вырӑнне эсир халӗ те каялла таплатӑр пулать? Пит те аван! Апла пулсан, ку ыйтӑва манӑн администраципе местком умне хыттӑн кӑларса тӑратмалла пулать! Вӗсем ӑна анлӑн сӳтсе явса организацилле выводсем те тума пултараҫҫӗ... Ҫавӑн ҫинчен те шухӑшласа пӑхас пулать!

— Ан палка-ха, тархасшӑн, тепӗр тесен! Вывод, вывод!—тӳсеймесӗр кӑшкӑрса янӑ ӑна хирӗҫ фотограф.— Колхозра эпир пуриншӗн те ҫур пус таранах тӗп-тӗрӗс тӳлесе тухнӑ, хваттер хуҫине ытлашшипех панӑ, ку пӗрре, иккӗмӗшӗнчен вара... эсӗ ҫак счет тенине лайӑхрах вуласа тух-ха, хӑвӑн пек каласан— вникать ту, мӗн ҫырса тултарнӑ унта? Куҫлӑхна хывса вула!

— Вуланӑ ӗнтӗ! Колхоза сирӗн 700 тенкӗ ытла тӳлемелле!—кӑшкӑрнӑ и. о. секретарь те, власть хӑйӗн аллинче пулнине палӑртса.

— Мӗншӗн?

— Ашшӑн, паранкӑшӑн тата ытти ялхуҫалӑх продукчӗсемшӗн!

— Ҫук, эсӗ ҫапах та тепӗр хут вула! Вула та ӑнланма тӑрӑш! Вӑл колхозра эпир пӗтӗмпе те икӗ кун

çеç пулнă, пурĕ тăвата хут апат çинĕ. Икĕ çын икĕ кун хушшинче «свинский мясо» тенине çур пăт, унсăр пуçне икĕ пăт паранкă, çур пăт ытла купăста, пĕр витре сухан, пĕр кило тăвар хыпса яма пултарать-и сан шутпа?

— Ķамăн мĕнле аппетит вĕт,— парăнман и. о. секретарь.

— Санăн аппетитна пĕлместĕп, тен, эсĕ пĕрре ларсах пĕр така çисе яратăн пуль, ахальтен мар санăн хырăму яланах духовой оркестрти параппан пек, анчах эпĕ хама кутăн çаксан та кунне çур кило ашран ытла çиейместĕп!—чышкисемпе сулкаласах янрана фотограф. (Пĕвĕпе пĕчĕк çынсем, хăйсене ытлашши тарăхтарсан, питĕ хăрушă вĕсем...)

— А манăн гипертони, мана аш тавраш пачах та юрамасть, эп çимен те ăна,— хушса хунă писатель.— Çăвара та чикмен.

— Тата эсĕ çакна шухăшла,— лăпланман фотограф, и. о. сĕтелĕ çине çат! çапса.— Енчен те эпир ик кун хушшинче тăвата литр таран кӳпнĕ пулсан, пирĕнтен мĕн пулнă пулĕччĕ-ши? Ĕç тума пултарнă-и эпир, çук-и? Вилсе выртаттăмăр вĕт эпир, санăн тахçанах пирĕн пирки некролог е эпитафи çырмалла пулатчĕ!

Тавлашу хĕрнĕçемĕн хĕрнĕ, нихăш енĕ те парăнасшăн пулман, пĕрне-пĕри шултраран шултра сăмахсемпе хăналама тытăннă... Юрать, çав чи хĕрӳ са-

мантра секретарь пӳлӗмне редактор пырса кӗнӗ. Хайӗн ҫыннисем мӗн пирки пӗр-пӗрин ҫине автансем пек сикнине пӗлсен, вӑл ахӑлтатсах кулса янӑ.

— Лектернӗ иккен сире Улталаев!.. Ха-ха-ха! Пӑртак паллатӑп эпӗ вӑл ҫынна, пӗлтӗр райком бюровӗнче тӗл пулнӑччӗ... Чӑх-чӗп фермишӗн тип мунча кӗртрӗҫ ӑна. Бухгалтерӗпе иккӗшӗ пӗр вӑтӑр автан ҫисе янӑ та, кайран вӗсене «вилнӗ», «тилӗ тытса кайнӑ» тесе списать тунӑ. Чутах партирен «списать» тӑватчӗҫ хайне. Ку счетне эпӗ района ярса паратӑп-ха, кулччӑр пӗрре!

Ҫавӑнпа ӗҫӗ-пуҫӗ пӗтнӗ вара. И. о. секретарӗн писательпе фотографран каҫару ыйтасси ҫеҫ юлнӑ...

* * *

Нумаях пулмасть манӑн хамӑн та ҫак «Асамат» колхозра пулма тӳр килчӗ. Станцирен мана хӗп-хӗрлӗ сӑн-питлӗ, мамӑк пек шур сухаллӑ, шӑп та шай Ҫӗнӗ ҫулхи ёлка валли сутакан «Хӗл Мучи» пек пӗчӗкрех старик лартса кайрӗ. Питӗ уҫӑ кӑмӑллӑ, калаҫма юратакан старик пулчӗ вӑл. Ҫуна ҫине ларсан пӗр ҫур сехетренех эпӗ унӑн аслӑ ывӑлӗ—полковник Хӗвелтухӑҫӗнче пурӑннине, карчӑкӗ хаяррине, ӑнсӑртран пӗр чӗрӗк илсе ӗҫсен, виҫ-тӑватӑ кун хӑйранине, вӑл хӑй сад хуралҫинче тӑнине, кӑҫал колхоз садран ҫӗр пин таран тупӑш илнине пӗлтӗм.

— Председатель мӗнлерех пурӑнать унта сирӗн?—

ыйтрăм эпĕ кăшт тăхтасан, хамăн тусăм писатель калаcа панисене аса илсе.

— Кам, Чее Çемен-и? — ман еннелле вăртах çавранса ларчĕ Хĕл Мучи.

— Улталаев çинчен ыйтатăп эпĕ...

— Эп те çавăн çинченех калатăп! Пурăнать-ха, пурăнкалать... хăй каларĕш, çул хĕрринчи ясмăк пек.

— Мĕн пирки ун пекех тата?

— Ара, лекет ăна пĕрмай, кашни кунах кам та пулин правленине пырса тип мунча кĕртет. Ĕнер эпĕ те кайса ăш каничченех пăскăртрăм-ха,— терĕ старик.

— Мĕншĕн?

— Пăшал илсе памасть мана!

— Пăшалĕ сана мĕн тума кирлĕ пулчĕ? Сунара кайма-и?

— Ара, мулкачăсем пит ашкăнаççĕ кăçал, шалт аптраса çитрĕм. Кăнтăрлах пырса тапăнаççĕ улмуççисене, чисти пасарти карманщăксем пекех нахальнă! Пĕлтĕр хуть йытă пурччĕ, кăçал ăна та кашкăр тытса кайрĕ, эсрел. Инкек вĕт! Çапăпа епле хăваласа çитерес манăн вăтăр теçеттинлă садра? Пĕр çĕртен хăтерсе яратăп—вĕсем тепĕр енчен пырса кĕреççĕ... Пăшал пулсан—пĕрре пĕр еннелле, тепре тепĕр еннелле хроплаттар та, ĕçĕ те пĕтрĕ, пымаççĕ вĕсем пĕр виçĕ кун: манса кайиччен. Анчах та пирĕн председатель ниепле те ăнланмасть çавна—пĕр икçĕр тенкĕ шалккă ăна! Миçе хут ыйтрăм пулĕ! Ĕнер каллех кайрăм та, вăл

манран: тен, сана двухстволка мар, гаубица илсе парас?—тесе кулчӗ. Ну, тарăхса кайрăм! Эпӗ колхоз пурлăхӗшӗн çунса çӳретӗп, а вăл пур—шăл йӗрсе ларать...

Хӗл Мучи пӗр хушă чӗнмерӗ, унтан хăй тӗллӗн калаçнă пек мăкăртатса илчӗ:

— Нумаях лараймасть те-ха ӗнтӗ...

Ял вӗçӗнчи лаша витисем тӗлӗнче, шăпах леш писательпе фотограф Улталаевăн «Шутникӗпе» кӗрешнӗ вырăнта, эпӗ çуна çинчен анса юлтăм та, часах колхоз правленине çитсе кӗтӗм. Малти пысăк пӳлӗмре, шут шăрçисене шăкăрт та шăкăрт вылятса ларакан икӗ хитре хӗрсӗр пуçне, никам та çукчӗ. Анчах «Председатель» тесе çырнă пӳлӗмрен тӳрех ян-ян-ян! йăслани илтӗнсе кайрӗ...

— Эп сире-и?! Эп сире пурсăра та тăрă шыв çине кăларатăп-ха! Вӗрентӗп салтак арăмӗсенчен мăшкаллама!—кăшкăрать темле хӗрарăм.—Эккей, епле вӗренсе лартнă вӗсем! Қашни лаша кӳлмессеренех эрех кӳптермелле!

— Эп хăçан ӗçрӗм санран?—тет арçын сасси.—Нихçан та ӗçмен.

— Епле ӗçмен? Пӗлтӗр Октябрь праçникӗнче пырса ӗçрӗн, Çӗнӗ çулта утайми пулса тухса кайрăн! Виçӗ кубометр вутă кӳртерсе паратăп, терӗн те—паян кун та çуккă! Юрать, пăяхам шофер та йăлăмран пӗр машина хăйӗн вуттине кӳрсе пачӗ...

— Машини çавах колхозăн вӗт?

— Хамăр колхозăн пулман çав, ун чух вăл районта ĕçлетчĕ! Унта та суятăн! Суйнăшăн сана пурте юратми пулчĕç. Бригадирсене те эсех пăсса ятăн, çĕр çăтмансскер! Пĕрин патне те пулштухсăр пымалли çук. Ĕнер Павăлран армана кайса килме кăна лаша ыйтрăм, вăл тӳрех пырне хыçса илчĕ: ах, мухмăр кастарать, чĕрĕк тупăнсан пит аванччĕ, тет. Юриех илсе памарăм! Çунашкапах кайса килтĕм армана. У-ух, сире-е! Тăхта акă, отчет пуххи пултăр кăна!..

Хĕрарăм сĕтел çине чышкипе таккаса илни илтĕнчĕ.

— Тухса кай кунтан!—кăшкăрчĕ арçын çавăн хыççăн.—Ĕçлеме кансĕрлесе ан çӳре! Атту, хулиганла хăтланнăшăн, çиччас акт çыратăп!

— Ан кăшкăр! — парăнмарĕ хĕрарăм. — Хăратаймăн! Эпир ак сана акт çырмасăрах кăларса çапатпăр!

Çав самантрах пӳлĕм алăкĕ ярт! уçăлчĕ те, председатель патĕнчен пĕр хĕрĕх çулхи хĕрарăм патлаттарса утса тухса кайрĕ. Вăл ытла та шутсăр тарăхнă сăнлăччĕ...

Анчах эпĕ пӳлĕме кĕнĕ чух председатель хăй те пĕтĕм кĕлеткипе чĕтретчĕ,—халь кăна хайне хăвалана вунă йытăран тарса ӳкнĕ, тейĕн. Сăнĕ çĕр тĕслĕ пулса кайнă, сăмси çунаттисем сиккелеççĕ. Эп кулсах яраттăм: вăл пируса çăвара мундштукĕпе мар, тапак енĕпе хыпса лартнă та, чунтанах мундштукне тивертме тăрăшать...

— Эсӗ питӗ пӑлханатӑн пулас, пируса тепӗр вӗҫӗнчен чӗртетӗн,—терӗм ҫакна.

— Пӑлханма мар, ҫурӑлса кайма пулать пирӗн халӑхпа!—пируса сурса кӑларса пӑрахрӗ вӑл.—Мӗн ыйтнине пӗтӗмпех туса паратӑн-ха ҫынсене, анчах вӗсем пурӗ-пӗр кӑмӑлсӑр! Киле-киле вӑрҫаҫҫӗ тата ҫитменнине, ӗҫлеме памаҫҫӗ...

— Пулкалать ун пекки, пулкалать, пурне те юрама хӗн ҫав,—унпа килӗшнӗ пек пултӑм та эпӗ, хамӑн командировкӑна кӑсъерен кӑларма тытӑнтӑм. Анчах ҫав вӑхӑтрах коридорти алӑк хыттӑн шалтлатса уҫӑлса хупӑнчӗ те, пӳлӗме майралла тумланнӑ пӗр ҫирӗм ҫулхи кӑвак куҫлӑ хӗр кӗрсе тӑчӗ.

— Ҫемен Иванч, хӑҫан пӗтет ку мӑшкӑл?—терӗ вӑл тӳрех, председатель умне пырса тӑрса.—Қала, хӑҫан?

— Мӗнле мӑшкӑл тата?—лӑпкӑ пулнӑ пек ыйтрӗ Улталаев.—Ют ҫын умӗнче чипер калаҫ-ха эс, хӗрӗм...

— Хуть те кам умӗнче те калама пултаратӑп! —урипе тап! тутарчӗ хӗр.—Пӗр уйӑх ҫӳретӗп ӗнтӗ сан патна, анчах усси чӗрне хури чухлӗ те ҫук! Медпунктри кӑмакана ҫав-ҫавах юсаса памастӑр! Шӑтӑк-ҫурӑксене тӑмпа шӑлтӑм-шӑлтӑм, тӗтӗм тухма чарӑнмарӗ, паян акӑ хутса ярсаттӑм кӑна—шалта темскер кӗпсӗр-кепсӗр турӗ те, тӗтӗм-ҫулӑм кӑмака ҫӑварӗнчен каялла палкаса тухрӗ... Сӳнтерес тесе шалалла икӗ витре шыв сапмалла пулчӗ. Мӗн тӑвас пулать халь ма-

на́н? Чирлисене ӑҫта пӑхас, процедурӑсем ӑҫта тӑвас?!

Хӗрӗн, тарӑхнипе, куҫҫулӗсем пӗрхӗнсе тухса кайрӗҫ.

— Хупӑр эппин медпунктне пуҫӗпех, эп хам валли урӑх ҫӗрте те вырӑн тупатӑп!—каллех урипе тапрӗ вӑл.

— Эс чим-ха, тӑхта...—мӑкӑртатса илчӗ Ултала-ев.—Ӑмакине юсаса паратпӑр тесе калана вӗт-ха сана...

— Тӑхтанӑ! Каланине те пӗрре кӑна мар илтнӗ, анчах халӗ ав кӑмаки ишӗлсех анчӗ! Юрать-ха, пушар тухма памарӑмӑр.

— Лӑплан, Маруся, юсатпӑр...

— Лӑпланмастӑп! Юсамастӑр! Ыранах района каятӑп, куҫарччӑр ӑҫта та пулин! Чирлисене эпӗ сив сарайӗнче эмеллеме пултараймастӑп ӗнтӗ!

Медсестран чунӗ ытла та кӳтсе ҫитнӗ пулмалла,—вӑл тек нимӗн калаймарӗ, мӗнле килнӗ—ҫавӑн пекех алӑксене шӑлт-шалт хупса тухса кайрӗ.

— Вӑт, тӗлӗнтермӗш хӗрача! Ана чип-чипер, этемлех калатӑн, туса паратӑп, тетӗн, анчах вӑл пурӗ-пӗр ӑнланмасть,—терӗ Улталаев кӳреннӗ сасӑпа, ҫамки ҫине тапса тухнӑ шултра тара шӑлса.—Ҫамрӑксем вӗт, ытлашши вӗри, ӗне чӗрни пусман... Ох, йывӑр ун пек ҫынсемпе ӗҫлеме!

«Вӗсемпе мар, санпа хӑвӑнпа ӗҫлеме майӗ ҫук та-ха ӗнтӗ», тесе шухӑшларӑм эпӗ, анчах хайне нимӗн те каламарӑм. Манӑн унпа хамӑн ӗҫ ҫинчен калаҫмалли

пурччĕ, анчах сăмаха каллех пуçлаймарăм. Çенĕкре татах такам хыттăн утни, темскер кĕмсĕртетни илтĕнчĕ, вара кĕçех председатель пÿлĕмне хăрах аллипе çунашка йăтнă, хулпуççинчен почтальон сумки çакнă хĕп-хĕрлĕ питлĕ хĕр кĕрсе тăчĕ. Вăл малтан çилĕллĕ куçĕсемпе председатель çине пăхса илчĕ, унтан, ним каламасăрах, çунашкине урайне пăрахрĕ, сумкине хывса ывăтрĕ те пукан çине лак! ларса хаш! сывласа ячĕ...

— Мĕн пулнă сана, Ринкка?—тĕлĕннĕ пекрех ыйтрĕ унран председатель.—Кам кÿрентерчĕ?

(Эп сисрĕм: председатель çак хĕр те, халь çеç тухса кайнă медсестра пекех, хăйне çунтарма тытăнасран хăрарĕ!).

Хĕр ăна хирĕç ытла тăруках чĕнмерĕ, унтан юрпа йĕпеннĕ питне-куçне шăлкаласа типĕтрĕ те, Улталаев çине тÿррĕн пăхса:

— Эс кÿрентеретĕн!—тесе хучĕ.

— Мĕнле эпĕ? Мĕнпе?—юри йăваш пулнă пек ыйтрĕ председатель.

— Пулăшмастăр! Мана çын выранне хумастăр! —кăшкăрнă пекрех каларĕ хĕр-почтальон.

— Эс чипер калаç-ха... Ют çын пур кунта, тем шухăшлĕ.

Анчах çак хĕрĕн те чунĕ çав тери кÿтсе çитнĕ иккен, ăна чарма май килмерĕ. Вăл урайĕнчи çунашкине тап-

са ыватрĕ те, сĕтел патнерех куçса ларса, самахсене парça пек сапма тытанчĕ.

— Ют çынтан та ватанса тамастап! Вал та пĕлтĕр эсир почта çине мĕнле пахнине, ана епле хакламаннине! Пĕлтĕр! Мĕншĕн тесен йывар мана, тек тусме пултараймастап, парахатап почтарьте çуреме!

— Мĕншĕн? Анланаймастап сана...

— Эсир нимĕн те анланасшан мар çав! Сирĕншĕн пурпĕр! Атя, Ринкка тусет... Хуть те çур пат тие ун çине, хуть вуна пат—йатать! Йатаймасан—сĕтĕрсе те пулин килет, почтана пурпĕрех уйра парахса хавармасть! Ĕçкунĕ параççĕ вĕт, тустĕр!

— Чим-ха эсĕ... Пĕлтĕр-виçĕмçулсем кун пек каласмастанччĕ-çке, мĕн пулчĕ сана халь?—пулме тачĕ ана Улталаев. Анчах почтальон чаранма мар, тата ытларах вĕресе кайрĕ.

— Пĕлтĕр-виçĕмçул! Эс тата вуна çул ĕлĕкрех мĕнле пулнине ил!—терĕ вал хаярран.—Тупна танлаштармалли! Виçĕмçул пирĕн колхоза миçе хаçат-журнал килсе танине пĕлетĕн-и эсĕ? Пурĕ те 17 экземпляр килнĕ ун чухне! Ак çак сумкан çурри те пулмастчĕ! Қаçал миçе тетĕн? Виççĕр алла виççĕ! Хаçатсар-журналсар пĕр кил те çук. «Правда»-па «Известия» кана 43 çын çыранса илеççĕ, ыттисем çинчен каламастап та ĕнтĕ. Эсĕ ху та пĕлтĕр Шупашкарти хаçатсене кана илеттĕн, қаçал арамна та, ачусене те çыранса патан. Арманти Муççи мучи «Ялавпа» «Қапкансар» пуçне «Крокодил»

илсе тарать, мануке валли «Мурзилка» çыранчĕ. Фермари Кулине инке ĕмĕрне ним çыранман, каçал ака, ырасла чухласах каймасть пулин те, варçа-варçах «Крестьянка» туптарчĕ мана. Ачасем куçарса анлантараççĕ, тет. Учительсем тата? Агрономпа зоотехник? Комсомолецсем? Сахал илеççĕ тетĕн-и вĕсем? Хаçат-журналсар пуçне вĕсем подпискапа темĕн чухлĕ кĕнеке илсе тараççĕ. Пĕлессӳ килет-тĕк, пирĕн колхоза халĕ çичĕ Максим Горький, улта Пушкин, пилĕк Гоголь, тавата Толстой, ик Джек Лондон, темиçе Короленко, Майн-Ридсем, Жюль-Вернсем, Мопассансем килсе тараççĕ. Вĕсен кашни томĕ—килограмран кая мар... Йат-ха эс вĕсене! Манан сан пек «ГАЗ-69» çук вĕт, ака манан автомобиль-вездеход—кур! Çунашка, теççĕ ана, вал та пулин ванса кайрĕ паян, такама тархасламалла-ха ана юсама!

Хĕр макарас патнех çитрĕ...

— Мĕн кирлĕ-ха сана манран?—ыйтрĕ председатель, самси çинчи шĕпĕнне хыçса илсе.

— Лаша парар!—терĕ хĕр.

— Тархасшан ара, «Шутнике» пуçĕпех сан аллуна пама пултаратпар, ахалех кĕçенсе тарать. Кунĕн-çĕрĕн чуп...

Председатель шӳт туса хĕр-почтальон камалне çемçетес терĕ пулмалла, анчах ку унан пысак йанаш пулчĕ. Ялтан нихçан кӳлсе тухман «Шутник» ятне асансан, Ринкка малтан куçĕсене мач-мач-мач тутарса

илчĕ, унтан тăруках малтанхинчен те ытларах хĕрелсе кайса як! сиксе тăчĕ.

— Эс манран кулма шутлатăн-и тата?! Çук ĕнтĕ, хăвăн «Шутникупа» эс ху çӳре! Çитĕ сана туйсемпе таварнасем тăрăх машинăпа чупма, малашне ун пек пулаймĕ! Анчах эпĕ почта патне кашни кунах машинăпа çӳреме пуçлатăп, чараймастăн, мĕншĕн тесен эпĕ яла культура турттарса килетĕп! Курăн ака, санран ыйтса та тăмастпăр!

Хĕр çавăнтах хăйĕн сумкине илсе çакрĕ те тухса кайрĕ. Эпĕ каллех сăмсине хыçма тытăннă Улталаев çине пăхрăм та, хамăн ăшăмра: «Чăнах та, санăн машинăпа çӳресси пулмасть пуль текех... Кам пĕлет, тен, председательрен каларса пăрахсан, «Шутнике» те кӳлсе памĕç сана»,—тесе шутларăм.

Тĕрĕс шутланă-ши эпĕ?..

Тĕрĕсех пуль!






*(Сарпике каласа пани)*

Иртнĕ çулла эпир, Шупашкарти фабрикăра ĕçлекен виçĕ хĕр-тантăш, канмалли çуртра пултăмăр. Малтан каясах та килместчĕ, мĕншĕн тесен отпуск вăхăтĕнче эпĕ кашнинчех яла кайса колхозра ĕçлетĕп, килте аннене пулăшатăп, анчах путевкисене пире преми шучĕпе пĕр пуссăрах пачĕç те, кайса курас, терĕмĕр.

Лайăх ĕнтĕ канмалли çуртра, мĕн каламалли! Çитерессе кунне тăвата хут, какăричченех çитереççĕ; ирхи апат хыççăн Атăл хĕррине кайса вĕри хăйăр çинче хĕртĕнсе выртатăн, таврăнатăн та каллех çиетĕн,

унтан сана вăйпах пĕр сехет çывратаççĕ (эпир хуть çывăрсах кайман, ялан юмах ярăттамăр), унтан «кахал апачĕ» пулать—кофе е какао ĕçетĕн те кӳлĕ çине кимĕпе ярăнма каятăн, каçхине вара юрă та ташă, кино та концерт... Ырлăх! Қайран, киле кайсан, аннене каласа патăм та çав пур ырлăхсем çинчен, маншăн саваннипе куççульпех макăрса илчĕ вăл.

— Телейлĕ çав эсир, телейлĕ, эпир сирĕн пек чух тĕлĕкре те курманнине куратăр,—тет...

Анчах эпĕ кăштах аяккалла пăрăнса кайрăм-ха.

Çак канмалли çурта пырсан пĕр-ик кунтанах эпир пĕр каччăна асăрхарăмăр. Питĕ илемлĕ, йăрăс пӳлĕскер хăй. Çӳçĕ сап-сарă, куçĕсем пысăк та кăн-кăвак, сăмси тӳрĕ, шăлĕсем тип-тикĕс те шап-шурă. Ун пеккисене пирĕн енче «вырăс пек хитре», теççĕ. Малтанах эпир ăна кунта ĕçлекенскер пулĕ, терĕмĕр, мĕншĕн тесен ялан ун сассине илтеттĕмĕр:

— Юлташсем, атьăр кӳлĕ çине!

— Атьăр волейбол çапма!

— Қам концерта хутшăнас тет, ман патра çырăнăр!

Қаçхи апат хыççăн, пĕтĕм халăх ташă площадкине пухăнсан, баяниста та вăлах командăсем парать:

— Ну-ка, маэстро, вальс! Маэстро, танго!

Площадка варрине никамран малтан тухать, унăнкунăн пăхкалать те çавăнтах пĕр-пĕр хĕре тытса çавăрма тытăнать.

Анчах хăй пирĕн пекех канма килнĕскер иккен. Ху-

шаматне те пĕлтĕмĕр—Кикирикин. Чăн та, çынсем ăна хушаматпа чĕнсех каймастчĕç, ялан «Эдик, Эдик!» тетчĕç,— француз мар пулин те, темшĕн Эдуард ятлă пулнă вăл. Ну, куншăн ăна айăплама çук-ха ĕнтĕ, ашшĕ-амăшĕ ухмахланнипе çавăн пек ят панă ăна...

Виç-тăватă кунтанах çак Эдик Кикирикин канакансем хушшинче çав тери авторитетлă çын пулса тăчĕ. Хĕрсем ун çумне кăткăсем пыл çумне сырăннă пекех çыпăçма пуçларĕç: «Эдик, Эдик!» Пурте унпа ташласшăн, кӳлĕ çине кайсан та унпа пĕр кимĕ çине ларасшăн...

Тунмастăп, мана хама та хытах килĕшме пуçларĕ вăл. Чăнах та, лайăх каччă ĕнтĕ: çамрăк, хитре, пултаруллă, культураллă. Хайĕнпе ташланă хĕре ташă пĕтсен яланах хăй вырăнне пырса лартать, аллине кăкри çине хурса, пуçне тайса тав тăвать:

— Мерси сире! Эсир çав тери çăмăл ташлатăр...

Пĕр каçхине манпа та виç-тăватă хут ташларĕ вăл. Питĕ йĕркеллĕ ташлать, ыттисем пек çăтăр-çатăр тыткаламасть, аллисене ирĕк памасть. Отбой шăнкăравĕ янăраса кайсан мана дача крыльци патне çити ăсатса ячĕ, кăшт кăна калаçкаласа тăтăмăр... Уйрăлнă чух алла чăмăртарĕ те:

— Ырă тĕлĕксем курма сунатăп сана, саркайăк! — терĕ.

Çав тери ачашшăн, кăмăллăн каларĕ...

Палатăна эпĕ юрласах пырса кĕтĕм. Маюкпа Зина—манăн туссем—тӳрех кулса ячĕç:

— Вĕтĕ пуллине мар, çăрттаннех тытрăн курăнать эсĕ!

— Мĕнле çăрттан тата вăл?—тăруках ăнланаймарăм эпĕ.

— Ай, пĕлмĕш пулать тата! Эпир чӳречерен пĕтĕмпех куртăмăр вĕт... Епле çуллăн калаçрĕ вăл санпа! Юрататăп, терĕ пуль? Тĕттĕм пулсан кӳлĕ хĕррине пыма чĕнмерĕ-и?

— Пăрахăр кирлĕ мара палкама!—тарăхса кайрăм эпĕ.—Пĕр-ик минут калаçса тăнăшăнах эсир тем шутлама хатĕр... Çитменнине, Кикирикин пĕртте ун пек çын мар, йĕркеллĕ каччă.

Маюк вырăнĕ çине лап! выртрĕ те манран тăрăхламалла юрласа ячĕ: «Кикирикик сар автан, çунат çапса авăтать...»

Зина та хăй вырăнĕ çине ларчĕ те тутлăн анаслаcа илнĕ хыççăн ман çине пăхса:

— Кама мĕнле те, анчах мана вăл яка чăваш пĕртте килĕшмест,—тесе хучĕ.—Хам ирĕкпе эп ăна ĕмĕрне те чуптăвассăм çук!

— Вăл та сан пек сĕлĕ кĕлтине нихçан та чуптăвас çук!—Зинăна кӳрентерес тесех лаплаттарса хутăм эпĕ ăна хирĕç. (Зина пирĕн пуклакрах кĕлеткеллĕ те, çавăншăн хăш чух эпир ăна «сĕлĕ кĕлти» тетпĕр).

— Кирлĕ те мар, суратăп эпĕ канфет тути калакан

кавалерсем çине!—вĕресех кайрĕ вăл.—Арçын тени — арçын пултăр вăл, универмаг чÿречи çинчи манекен мар!

Эпĕ те парăнмарăм:

— Ан янра, кĕвĕçнипе тиркенĕ пек тăватăн вĕт, вăл сан çине пĕрре те çавăнса пăхманшăн, санпа ташламаншăн вĕчĕхетĕн!—терĕм.

— Тьфу, пуçна пултăр çавăн пек стиляга!

— Нимле стиляга та мар, таса тумланма юратать кăна вăл!

— Унăн портречĕ «Крокодил» валли кăна юрăхлă!

— Эсĕ ху крокодил!

Тавлашсах каяттăмăр пулĕ, юрать-ха палатăна ют хĕрсем пырса кĕчĕç, вĕсем умĕнче тавлашма аван мар пулчĕ...

Ирхине çумăр çурĕ, ниçта каясси те пулмарĕ. Эпĕ кĕнеке илтĕм те вуламалли павильона кайса чи хыçалти сĕтел хушшине вырнаçса лартăм. Вулатăп... Ыттисем те вулаççĕ. Шăп, хутран-ситрен кĕнеке-журнал страницисене чăштăртаттарса уçни çеç илтĕнет... Унтан сасартăк тулта, терраса çинче, такам янăравлă тенорпа хыттăн юрласа ячĕ:

Сердце красавиц склонно к измене,
И к перемене, как ветер мая...

Унччен те пулмарĕ, павильона хайхи Эдик Кикирикин (яланхи пекех яп-яка та çап-çута сăн-питлĕ!) пырса кĕчĕ те, сылтăм аллине çĕклесе:

— Салют пурне те! Ирхи салам!—тесе кăшкăрчĕ.

Ăна хирĕç никам та чĕнмерĕ; вăл çавăнтах библиотекарша патне пырса темскер çинчен шавлăн калаçма пуçларĕ. Вулакансенчен пĕри ăна пурте илтмеллех асăрхаттарчĕ:

— Çамрăк çын! Кунта бульвар мар вĕт, хуллентерех янрама юрамасть-ши!

Эдик вара темле журнал илчĕ те, унталла-кунталла пăхса, хăй валли выран шырама тытăнчĕ, унтан ман сĕтел патĕнче икĕ пуш пукан пуррине курса, манпа юнашар пырса ларчĕ. Сисрĕм—манăн пит-куç пĕçерсе илчĕ, хĕрелсех кайрăм пулмалла... Ку ĕнтĕ, пуринчен ытла, каçхине хамăн хĕр-тантăшсемпе çак Кикирикин пирки хĕрсех тавлашнине аса илнĕшĕн пулчĕ...

Вăл мана саламларĕ те алла тытса чăмăртарĕ. Алли вут пек вĕри хăйĕн. Куçран пăхрĕ те:

— Мĕн вулатăр, саркайăк?—тесе ыйтрĕ.

— Достоевский, «Преступление и наказание»,—терĕм эпĕ, кĕнеке хуплашкине кăтартса.

— О!—тĕлĕннĕ пек пулса куçĕсене чарса пăрахрĕ вăл.—Ытла та хăруша кĕнеке-çке! Пăх-ха эс—преступлени, наказани... Куна сирĕн пек хитре пикесене мар, милиционерсемпе прокурорсене çеç вулаттармалла!

Вăл кулса ячĕ, унтан чӳрече витĕр тулалла пăхрĕ те ман кĕнекене шап! хупса лартрĕ.

— Пăхăр-ха, çумăр чарăннă! Кĕçех хĕвел тухать!

Атьăр, кунта пăчăхса лариччен, уçăлса çӳрер, озонпа сывлар!

Вăл пукан çинчен сиксе тăчĕ те ман кĕнекене хăй хул хушшине хĕстерчĕ. Манăн ун хыççăн тăрса утасси çеç юлчĕ...

Чылай çӳрерĕмĕр эпир кӳлĕ хĕрринчи сукмак тăрăх калле-малле. Çавăн чухне çывăхрах паллашрăмăр та вара эпир унпа. Вăл ыйтнипе эпĕ ăна хам çинчен тĕрĕссине каласа патăм—вунă класс пĕтернĕ хыççăн заводра ĕçлетĕп, каçхи институтăн иккĕмĕш курсĕнче вĕренетĕп, терĕм.

— А эпĕ вĕренсе пĕтернĕ ĕнтĕ, комбинатра ĕçлетĕп,—терĕ вăл. Аçтан вĕренсе тухни, мĕн ĕçре ĕçлени çинчен ыйтма аван мар пулчĕ, анчах хамăн ăшăмра: çакăн пек пултарулла, çав тери лайăх тумланса çӳрекен çын инженер пулмасан та техникран кая мар ĕнтĕ, тесе шутларăм...

— Сирĕн комбинат пит лайăх ĕçлесе пырать, кашни уйăхрах планран ирттерсе миллионшар метр пиравăр туса кăларать, министерствăран питĕ пысăк премисем илет, тенине илтнĕччĕ...— терĕм кăна эпĕ.

— Тăрăшатпăр çав, ăмăртса ĕçлетпĕр, çынсене юлхавланма, брак тума памастпăр, çавăнпа та чыс та хисеп пире,— сăвă калана пекех хаваслăн хăлаçланса илчĕ Эдик.

«Чăнах та инженер иккен ку...»—çирĕпленчĕ вара ман шухăш.

Ҫаҫхине вăл мана каллех ик-виҫĕ хут та ташлама илсе тухрĕ, Маюкпа Зина ăна курса тăчĕҫ... Ҫайран эпир отбой паричченех «кăмпа» айĕнче лартăмăр, Эдик мана шоколадлă канфетпа хăналарĕ те эпĕ ăна питĕ килĕшни ҫинчен калама пуҫларĕ, унтан, ăнсăрт-ран пулнă пек, пуҫран ыталаса, питҫăмартинчен чуп-туса илчĕ.

Эп чармарăм...

Ҫывăрма выртсан та унăн сăнарĕ ман куҫ умĕнчен каймарĕ. Эпĕ ҫак хитре качча юратма пуҫларăм пулмалла...

Тепĕр кунне канакансен концерчĕ пулчĕ. Ҫамăн мĕнле «репертуар» пур—ҫавăнпа тухать, хăшĕ юр-лать, хăшĕ сăвă вулать, теприсем ташлаҫҫĕ... Эдик Кикирикин, чăнах та, ĕнтĕ ҫак концертăн «чунĕ» пулчĕ: конферансье вырăнне тухса ҫынсене варĕсем хытиччен култарчĕ, Улатар хĕрĕсем юрланă чух гитарăпа аккомпанимент турĕ, канмалли ҫуртăн пĕр сакăр пăт туртакан самăр поварĕпе чечетка ташларĕ, юлашкин-чен икĕ ямшăк юрри юрларĕ—малтан «Вот мчится тройка почтовая», унтан «Когда я на почте служил ямщиком»... Пĕтĕм чунне парса, пысăк туйăмпа юрла-рĕ, мана ҫеҫ мар, пурне те килĕшрĕ вăл юрлани!

— Ҫу йĕкĕт Лемешевран та юлмасть пуль!—терĕ ман хыҫри пĕр хĕрарăм, Эдик юрласа пĕтерсе пуҫ тайнă чух алă ҫупса.

— Лемешевах çитеймест пулĕ те, анчах тепĕр патефонран ирттерет çав,— терĕ тепри.

— Маттур, маттур...

Вĕсем Кикирикина мухтанăшăн хам та савăнса кайрăм, эп ĕнтĕ унăн арăмĕ пулнă пекех! Концерт хыççăн иксĕмĕр кӳлĕ хĕррине кайсан, тӳрех каласа патăм: сана пурте питĕ мухтаççĕ, терĕм.

— Э, ун пеккине хăнăхнă эпĕ, мана тĕлĕнтермест вăл,— терĕ Эдик.— Комбинатри хорта эпĕ—яланах пĕрремĕш солист. Пĕлтĕр юрă праçникĕнче хамăр коллектива чапа кăларнăшăн мана дирекципе фабком ак çак ылтăн сехете пачĕç...

— Ылтăн сехет таран-и!—тĕлĕнтĕм эпĕ.— Хаклă япала-çке вăл!

— Мĕн хакли пур ун çумĕнче?—тутисене тăсрĕ каччă.— Пин те виççĕр тăрать-и çав... Маншăн вăл укçа—проблема мар!

«Кай, инженертан та аслăраххи пуль ку»...— чĕре кăрт-кăрт туса илчĕ манăн куна илтсен.— «Пин тенкĕне укçа вырăнне хумасть пулать те...»

Çакăнтан вара эпир вăхăта ялан пĕрле ирттереттĕмĕр. Маюкпа Зина пĕрехмай йĕплерĕç мана:

— Шупашкара таврăнсан тӳрех ЗАГС-а каятăр пуль? Çыраннă чух свидетельсем кирлĕ, теççĕ... Тархасшăн, эпир свидетель пулма хирĕç мар! Туйĕ валли фата пур-и-ха? Çук пулсан, театртан «на прокат» илме пултаратпăр...

— Вĕренсе тухиччен эсир хăвăр качча кайăр!— теттĕм вĕсене.

— Ненай, ненай, темле-çке, тÿссе тăрайрăн-и çавăн пек яка чăваш умĕнче! Пĕр-икĕ хут патефон пек юрласа ячĕ-тĕк...

Вĕсем мана ытлашши хупăрлама пуçласан алăпа сулаттăм та палатăран тухса каяттăм. Хыçран яланах Маюк юрласа яни илтĕнетчĕ:

— Ночью и днем, только о нем...

Вуникĕ кун çав тери хăвăрт иртсе кайрĕ, сиссе те юлаймарăм! Эпир Шупашкара таврăнтăмăр. Эдик, ыра качча пулса, мана общещитие çитиччен ăсатрĕ. Тĕл пуласси çинчен калаçса татăлтăмăр. Ытла яланах тĕл пулма май килмен пирĕн, ма тесессĕн, Ҫикирикин эрнере виçĕ хут каçхине ĕçленĕ.

Май пур чух яланах пĕрлеччĕ вара эпир—Атăл хĕрринче çÿреттĕмĕр, кинора, концертсенче пулаттăмăр. Малашнехи çинчен шухăшласах кайман эпĕ, анчах юратасси юрататтăмах пулмалла Ҫикирикина, пĕрмай ăна курас, унпа пĕрле пулас килетчĕ! Хăш чухне, чăнах та, вăл ытлашширех мухтанни те, суйни те сисĕнкелетчĕ ĕнтĕ—тем те туна иккен вăл, парашютпа та сикнĕ, кĕркунне пăр айне путма тапратнă ик ачана пĕр-пĕччен çăлса кăларнă. Атăл леш енче ĕне çине сиксе ларнă рысь патне ним шиксĕр чупса пырса ăна рычагпа çапса вĕлернĕ, пĕррехинче мили-

ционер хуса çитеймен вăрра хуса çитсе пĕччен çыхса пăрахнă, тем те пĕр. Анчах кусене вăл мана ытларах кăмăла каясшăн калать пулĕ, тесе, хам ăна питех ĕненменнине систерместĕм...

Анчах халь шутлатăп та—систермелле-мĕн! Ытлашши каппайланма пуçласанах чарса лартса: ан çап пуш параппана!—тесе каламалла пулнă. Каярахпа пит лайăх кăтартрĕ вăл хăй мĕн тери «паттăр» пулнине... Итлĕр акă.

Пĕррехинче, канмалли кун, çак Кикирикин ман пата общежитине пычĕ те, эпир çынсем сахалтарах пулнă çĕре, хула хĕрринелле кайса çӳрес, терĕмĕр. Завод хыçĕпе анса Трусиха çырми урлă каçрăмăр та хăрах енлĕ пи-итĕ хитре урама тухрăмăр. Шăп-шăкăри вĕр-çĕнĕ çуртсем, кашни умĕнчех пĕчĕк сад ӳсет, унта кайăксем чĕвĕлтетеççĕ, çырмара шапасем концерт пуçларĕç, урамра сыснасемпе качакасем çӳреççĕ, çывăхрах радио юрату çинчен юрлать—ытармалла мар! Ман каччă, яланхи пекех, пĕрмай юмах ярать, мĕн çинчен пакăлтатнине халĕ астумастăп та ĕнтĕ...

Ху-уллен утатпăр урам тăрăх...

Çав вăхăтра, сасартăк, таçтан мурĕнчен икĕ йытă сикрĕç-тухрĕç те, пĕтĕм урама янăратмалла вĕрсе, тӳрех пирĕн çинелле ыткăнчĕç. Пĕри мана тапăнчĕ, тепри Кикирикина... Хăм-хам, хăр-хар! Хам çине сикекен йытта тапма тăратăп, аласемпе хăмсаратăп, анчах нимĕн чухлĕ те хăратаймастăп, пушшĕрен пушшĕ сикет

ман ҫинелле, кӗҫ-вӗҫ ҫурса ӑарахас пек! Пӗр-икӗ хутчен ман пушмак пуҫӗ йытӑ ҫӑварнех кӗрсе кайрӗ... Мӗн тӑвас пулать? Унталла пӑхрӑм, кунталла... пӗр-пӗр чул е лайӑххрах патак тупасчӗ ку эсрелӗн пилӗкне ҫапса хуҫма, тетӗп. Ман телее—инҫетрех те мар пӗр самай сулӑмлӑ ал туйи вырта парать. Пӗррех сикрӗм ҫавӑн патнелле, анчах ҫав вӑхӑтрах йытӑ хыҫалтан чупса пырса мана ура хырӑмӗнчен кап! тутарчӗ те капрон чӑлхана чарт! ҫурса пӑрахрӗ. Ну, леш туя алла лексен, лайӑх кӑна патӑм вара пуҫӗнчен! Йытӑ найк! найк! найк! туса вӑркӑнчӗ хайӗн килнелле... Анчах ун вырӑнне тепри, малтан Кикирикина тапӑнни сикме тытӑнчӗ ман ҫине! Ҫапах та ҫухалса каймарӑм, куна та ҫавӑн пекех лектертӗм, ку та хӳрине пӗҫ хушшине хӗссех сирпӗнчӗ ман патӑмран...

Анчах та... мӗн мурӗ? Эп йытӑсемпе ҫапӑҫнӑ хушӑра ман каччӑ таҫта шуйттанне кайса кӗнӗ! Ҫук каччӑ! Пӗчченех эп урамра... Ӑҫта кайнӑ вӑл, леш йытти ӑна тулласа тӑкса ҫырмана кайса пӑрахман пулӗ те? Унтан пӑхатӑп та... апайтуру-ух!.. Кикирикин пӗр ҫӳ-ӳлӗ хӳме ҫинче лара парать! Ӳкесрен юпаран ярса тытнӑ, хӑрах йӗмпӗҫҫи ҫурӑлса аннӑ, пӗр уринчи пушмакӗ ҫук...

Патнерех пытӑм та, ҫакӑнтан:

— Эс хӑш вӑхӑтра вӗҫсе хӑпарма ӗлкӗрнӗ унта? — тесе ыйтатӑп.

— Астумастӑп,—тет.

— Пушмаку ăçта?

— П...пĕлместĕп. Й...йытă илсе тарчĕ пулмалла.

— Ну, сик тавай, каяр часрах кунтан, тепĕр пилĕк йытă килсе тапăниччен!

— Çӳлĕ-ха питĕ, урана мăкăлтасран хăратăп.

— Мĕн вара, манăн йăтса антармалла-и сана?

— Пусма тупса килсен аванччĕ.

— Башеннăй кран илсе килес мар-и тата? Ак япала! Хăпарнă чух нимĕн те кирлĕ пулман-çке сана? Анасси хăпарассинчен çăмăлтарах пуль? Юпа тăрăх шуса ан!—вĕрентетĕп каччăна.

Чăнах та, çапла майпа шуса анкаларĕ вăл, анчах кунта та ăнăçлă пулмарĕ шереметĕн—кĕпине çурса пăрахрĕ те хырăмне темиçе шăрпăк кĕртсе лартрĕ... Йĕмĕпе кĕпи çине пăхса, вăл кĕç-вĕç макăрса ярас пек тăчĕ, анчах ман хамăн çав тери кулас килсе кайрĕ! Чăтаймарăм, култăм...

— Ахальтен мар Қикирикин хушаматлă иккен эсĕ, хӳме çине автан пекех вĕçсе хăпарса ларнă!.. Йытăран хăтăлнăшăн савăнса, çунат çапса авăтасси çеç юлнă сан унта!

— Ан кул-ха эсĕ, куратăн мĕн пулса тухрĕ...—мăкăртатса илчĕ вăл, йĕмпĕççине унăн-кунăн çавăркаласа.

— Мĕн-ха ĕнтĕ, санăн йĕмӳ çуралнă тесе, макăрас-и манăн? Тупнă хуйхăрмалли! Мастерскойне кайса вунă тенкĕ тӳлетĕн те, çĕнĕ пекех туса параççĕ. Йытти-

сем хамăра тулласа тăкнă пулсан, вăт, чăнах та япăх пулатчĕ...

Пушмакне Кикирикин Хураçкаран тарнă чух çухатса хăварнă-мĕн. Ана çул çинчи тусан ăшĕнчен тупса патăм та, эпир каялла кайрăмăр.

— Маттур хĕр иккен эсĕ, пĕччен ик йытта парăнмарăн,—терĕ Кикирикин чылайран.

— Хăвна мĕнлерех тесе шутлатăн тата?—тăрăхламалларах ыйтрăм эпĕ унран.—Эсĕ те пит маттур вĕт, хĕре урнă йытăсем патне пăрахса хăвартăн та ху часрах—хӳме çине... Калама та çук паттăр хăтлантăн вĕт, рыцарь пекех!

— Каçар...—тархасланă пек пăхрĕ ман çине Кикирикин.—Эпĕ... эпĕ йытăсене тӳсме пултараймастăп... Мана пĕчĕк чухнех пĕрре йытă тулланă та, çавăнтанпах хăратăп... Каçар!

— Апла пулсан, Атăл леш енче рысьпе мĕнле çапăçрăн-ха эсĕ?

— Рысь вăл—урăх япала... Ана эпĕ пăшалпа...

— Рычагпах темерĕн-и?

Кикирикин автан кикирикки пекех хĕп-хĕрлĕ пулса кайрĕ.

...Çакăн хыççăн вăл пĕр икĕ эрне хушши ман куç умне курăнмарĕ. Намăс пулчĕ пулмалла ачана çак йытă историйĕшĕн. «Чирлетĕп», тесе открытка çырса ячĕ, анчах эпĕ, паллах, ĕненмерĕм ăна... Çапах та хамăн чун ун патнеллех туртăнчĕ-ха. Юратнă-çке-ха эп

ӑна ун чухне. Ҫурас килет, мӗн тӑвас тетӗн! Тӳсейме-рӗм, хамах ҫырса ятӑм: «Ҫитес вырсарникун кил, ка-ламаллисем нумай, килместӗн пулсан—кайран ан ӳпкелеш...»

Пычӗ. Ҫӑштах начарланнӑ пек хӑй, куҫӗсем те мал-танхинчен тӗксӗмленнӗ, питҫӑмартисем те шуранка.

— Мӗн пулнӑ сана?—тесе ыйтатӑп.

— Малтан чирлерӗм, унтан ӗҫ нумай пулчӗ,—тет.

Ӗненмеллех калать те, манӑн малтан ҫӑшт ҫиленни ҫавӑнтах иртсе кайрӗ. Юратакан хӗр ҫӑмӑлне ҫавӑрма нумай кирлӗ мар вӗт...

Эпир кинона кайрӑмӑр. Вӑл каҫхине «Смелые лю-ди» ҫӑтартрӗҫ—ҫав тери лайӑх картина! Совет погра-ничникӗсем епле хӑюллӑ та паттӑр пулнинчен тӗлӗнсе каймалла. Хайсене темле йывӑр килсен те, парӑнмаҫҫӗ, тӑшмансене пурӗ-пӗр ҫӗнтереҫҫӗ...

— Ҫӑмӑла кайрӗ-и?—тесе ыйтрӑм Кикирикинран, кино хыҫҫӑн урама тухсан.

— Питӗ шутсӑр килӗшрӗ!—терӗ вӑл.—Чӑн-чӑн со-вет ҫыннисене ҫӑтартнӑ!

Ҫаҫ пулман пулин те, эпир хамӑр сисмесӗрех ман общежити еннелле утрӑмӑр. Хуллен ҫӑна шӑкӑлтатса калаҫса пыратпӑр. Сӑра заводӗнчен иртсен, сылтӑмри пӗр ансӑр тӑкӑрлӑкран сасартӑк темле хӗр ҫӑшкӑрни илтӗнсе кайрӗ. Шари! шари! ҫӑшкӑрать.

— Мӗн кирлӗ сире?! Ма ҫулӑхатӑр ман ҫумма? Ҫа-йӑр ман патран! А-а!.. Пулӑшӑ-ӑр!..

Пахатăп—пĕр çамрăк хĕре икĕ мăнттай-хулиган сыхăнна та, лăскаççĕ кăна. Пĕри тĕртсе ярать, тепри çапать, хĕр ӳкет, тăрса тарма пикенет, анчах лешсем ăна çавăнтах хуса çитеççĕ те каллех турткалаççĕ...

— Хулигансем! — терĕм Кикирикина. — Пĕтереççĕ хĕрачана, атя, часрах кайса пулăшатпăр, хăваласа ятпăр лешсене!

Анчах вăл, тӳрех чупас вырăнне, юпа пек хытса тăчĕ те мана хулран çавăрса тытрĕ, тăрук чарăлса кайнă куçĕсемпе ман çине çав тери тĕлĕнсе пăхрĕ.

— Эсĕ мĕн, ухмаха ертĕн-и?—тет.

— Мĕншĕн ухмаха ернĕ эпĕ? Пулăшас пулать, тетĕп!

— Сан мĕн, вилсе выртас килет-и?—тет вăл каллех.—Çывăха пырсанах, çĕçĕпе яшлаттараççĕ вĕт вĕсем! Çавăнтах вилсе выртатăн, ах та тăваймастăн!

— Хăратăн эппин?!—кăшкăрса ятăм çакăн çине.— Вĕсем хĕрачана асаплантарни саншăн нимĕн те мар, сана хăвăн пурнăçна сыхласа пултăр? Халь кăна кинора мĕн курнине мантăн та-и?

— Кинора унта тем те кăтартма пултараççĕ,—терĕ вăл.

— Эгоист иккен эсĕ, хăравçă, çулламан пăру, мемме!

Вăл мана тем калама çăварне уçрĕ, анчах эпĕ карт! туртăнса ун аллинчен вĕçерĕнтĕм те хĕре асаплантаракан хулигансем патнелле пуля пек вăркăнтăм.

— Мĕн тăватăр эсир, путсĕрсем, ма тиветĕр хĕрачана?!—кăшкăртăм хулигансене, вĕсем патне çитнĕ-çитменех.—Чарăнăр, атту халех милицие илсе каятпăр сире куншăн!

— Кама хăрататăн, йĕпе сăмса, хăвăн та туянас килет-им?—мĕкĕрсе ячĕ те вĕсенчен пĕри, мана çапма аллипе сулчĕ. Эпĕ пĕшкĕнсе хама лекесрен пăрăнса юлтăм, тепĕр самантранах вара хулигана аллинчен тытса ăна питĕ хытă пăрса лартрăм. Лĕнчĕрех куклен-се ларчĕ вăл, унтан хăяккăн тăсăлса выртрĕ. Питĕ ӳсĕр иккен, вăйĕ вуçех çук. Çакна кура, тепри ман çинелле пыма пуçларĕ, анчах эп ăна хырăмĕнчен нач! тапрăм та, вăл та каялла кĕпсĕрт! турĕ. Çав самантра ман куçа Кикирикин курăнса кайрĕ—епле тăрса юлнă, халĕ те çавăнтах тăрать, сысна!

Хулигансем, тем те пĕр кăшкăрса, ура çине тăма пуçларĕç, вара ман вĕсене каллех ытлашши ачашшăнах та мар тĕртсе ямалла пулчĕ... Çав вăхăтра пирĕн пата пĕр ватăрах хĕрарăмпа милиционер пырса çитрĕç. Путсĕрсем хĕрачана кӳрентерме тытăннине курсанах, çав хĕрарăм постовоя чĕнме чупнă иккен.

Милиционер, паллах, хулигансене тытса кайрĕ. Эпĕ хĕртен ыйтса пĕлме тытăнтăм—кам вăл, ăçта пурăнать, ăна килне çитиччен ăсатса яма пултăм, лăплантартăм.

— Епле ирсĕр япала! Ӳсĕр хулигансем кăнтăр кунĕнчех ашкăнаççĕ, анчах вĕсене никам та чаракан

çук!—илтěнчě ман хыçра Ķикирикин сасси. Ăна илтсен, тупата, мана такам вěри шывпа сапнă пекех туйăнчě! Çак чăх чěриллě этем çавнашкал калаçма хăять вěт-ха тата!

— Мěн кирлě сана кунта?—хаярран пăхса илтěм эп ун çине.

Вăл чěнмерě. Эпě хěре хулěнчен тытрăм та унпа пěрле çырма еннелле утрăм. Ķикирикин та утрě. Те совесть тени кăштах хускалнă унăн, те манран хăранă пăртак...

Палламан хěре хăйсен алăкěнчен кěртсех ятăм, унтан каялла çавăнса утрăм, киле çитрěм, Ķикирикин манпа юнашарах утса пычě, анчах эпě пěр сăмах та чěнмерěм. Хамăр крыльца умěнче вара вăл мана тăрук аларан ярса тытрě те:

— Чунăм, ан çилен ěнтě, эп нимěн те туман вěт, — терě.

— Нимěн те туман çав, çынна урамра çапса пăрахнине курсан та нимěн те тăвас çук эсě!—тÿсеймесěр кăшкăртăм ун çине.—Анчах хăвна çаван пек тапăнас пулсан, пусса çитерейменсысна пекех çухăрнă пулăттăн-ха: а-а, пулăшă-ăр, пулăшă-ăр! Ăçта санăн намăс! Арçын, тетěн хăвна ху, анчах хурлăха лекнě хěре пулăшма пымарăн! Çав хулигансем ăна мар, мана çулăхнă пулсан та, ху вилесрен хăраса, аякран пăхса тăраттăнччě ěнтě эсě!

— Ну, куна ытлашши калаçатăн...—мăкăртатса илчĕ Кикирикин,—саншăн эпĕ тем тума та...

— Ан лăпăртат!—каласа пĕтерме памарăм ăна. — Йытăсем тапăнсан та питĕ лайăх кăтартрăн-çке маншăн тем тума та хатĕррине! Вăл та çитĕ! Кирлĕ мар, кай хăвăн çулупа, текех ман куç умне те ан курăн! Тӳсме пултараймастăп сан пек ленчешке арçынсене!..

Ала та памарăм, алăка шалт-шалт уçса хупрăм та шал енчен чăнкăр-чанкăр питĕрсе хутăм. Ытла хытă тарăхнăччĕ çав эпĕ!

Анчах кайран, çилĕ иртсе кайсан, ӳкĕнкелесе те илтĕм. Хĕр чĕри темĕн! Ытлашши харкашса тăкмарăмши, тен, виçерен иртсе кайса вăрçрăм эп ăна?—тесе шутлаттăм. Тепĕр чух ман унпа тĕл пулса мирлешес кăмăл та пулатчĕ...

Эрне, уйăх, иккĕ иртрĕ. Кикирикина эпĕ пĕрре те тĕл пулмарăм. Виççĕмĕш уйăх çине кайсан тин курма тӳр килчĕ. Анчах ку та питĕ ăнсăртран тата кулăшла пулса иртрĕ.

Пирĕн курсра вĕренекен хĕрсем пĕррехинче пиравăр комбинатне кайса курма шут турĕç. Экскурсине ĕнтĕ. Эпĕ староста пулнă май пĕтĕм ĕçе йĕркелеме мана хушрĕç—дирекципе калаçса татăлмалла, пропуск илсе янтăламалла. Ĕç питĕ ансат пулчĕ, телефонпа пĕрре шăнкăравласанах пырса курма ирĕк пачĕç пире, ыранах килме пултаратăр, сире валли пропусксем хатĕр пулаççĕ, пропуск бюровĕн чӳречинчен пырса

шаккăр кăна, терĕç. Пĕр вунпиллĕкĕн пухăнтăмăр та— кайрăмăр вара. Çул çинче Ķикирикин аса килчĕ: тĕл пулмăп-ши эп ăна унта? Тен, пирĕн экскурсие ертсе çӳрекенни шăпах вăл пулать? Е, тен, вăл унта пĕр-пĕр цех начальникĕ пулĕ те, эпир унăн цехне пырса кĕрĕпĕр? Ķалаçĕ-ши вăл манпа? Е хамăн та ăна вуçех палламан пек пулас-ши?

Темĕн тĕрлĕ ыйту çуралчĕ ман пуçра, анчах пĕр путлĕ ответ та тупăнмарĕ. Юрĕ-çке, патне çитсен мĕн тумалли курăнĕ унта, терĕм юлашкинчен.

Хĕрсене хапха патне тăратса хăвартăм та пропуск бюровне чупрăм. Чӳречи хупă. Шаккарăм—уçмарĕç. Шалта темле хĕр лах-лах-лах! кулни илтĕнет. Татах шаккарăм—каллех уçмарĕç-ха, çаплах ахăраççĕ. Виç минут иртет, пиллĕк... Тарăхмах пуçларăм та чышкăпах кĕмсĕртеттертĕм фанер хăмана.

— Уçăр!

— Ķам ашкăнать унта?—тинех илтĕнчĕ шалтан арçын сасси. Питĕ паллана пек туйăнчĕ мана вăл сасă. Тепĕр çур минутран хайхи чӳрече уçăлчĕ те... Ķикирикин пуçĕ курăнах кайрĕ! Ак сана инженер! Пропусксем çырса ларать! Аçа çаптăр...

— Аçта каятăр? Документ!—терĕ вăл типпĕн, ман çине пăхмасăрах çырма хатĕрленсе.

Эпĕ чӳрече витĕр хамăн паспорта пăрахса патăм.

— Вунпилĕк çын валли, коллективлă экскурси килчĕ,—терĕм.

Кикирикин ман паспорта уҫса пăхрĕ те, аллине хутран тунă япала мар, хĕртнĕ тимĕр тытнă пекех, ăна сĕтел ҫине пăрахрĕ. Питне курăймарăм эпĕ, анчах хăлхисем юн пекех хĕрелсе кайрĕҫ...

Тем пысăкăш цехсенче эпир виҫĕ сехет ытла пултăмăр. Пире пĕр ҫамрăк чăваш хĕрĕ, пĕлтĕр кăна инженера вĕренсе тухнăскер, ăнлантарса ҫӳрерĕ. Ытармалла мар кăмăллă хĕр! Производствăна хăй ҫав тери лайăх пĕлет пулмалла, пурин ҫинчен те питĕ тĕплĕн каласа кăтартрĕ.

Хулана вăл пирĕнпе пĕрлех анчĕ.

— Кикирикина пĕлетĕр-и эсир?—ыт-ахальтен пек ыйтрăм эпĕ унран.

— Пĕлетĕп-ҫке,—терĕ инженер, ман ҫине тĕлĕнерех пăхса.—Пирĕн ялсемех-ха вăл. Эсир хăвăр ăҫтан паллатăр ăна?

— Ансăртран... тĕл пулкаланăччĕ. Кам вăл Кикирикин?

— Пуш пучах. Килĕнче пĕртен-пĕр ывăл, шутсăр ачаш ӳснĕ, вунă класс пĕтерейменĕ, унтан таҫта та пырса ҫапăнчĕ—художник та, артист та пулма хăтланчĕ, ниҫта та ĕҫ тухмарĕ. Ҫурҫĕре кайсан пĕр уйăхранах каялла тарса килчĕ, иртнĕ хĕлле пĕр министр хĕрĕпе те ҫыхăнса пăхрĕ, киле кĕтĕм, текелерĕ, анчах лешсем хăваласа янă пулмалла, халĕ ак пирĕн патра пропусксем ҫырса ларать. Унтан ҫӳлерех хăпарас шанчăк ҫук. Ак епле ҫын вăл...

— Мӗнле-ха тата вăл питӗ чаплă тумланать, укçи те нумай пулмалла хăйӗн...

Инженер кулса ячӗ:

— Ара, каларăм-çке, пӗртен-пӗр ывăл тесе! Ашшӗ пуян, кашни çул Атăл тăрăх темиçешер хут паранкăпа та панулмипе кайса пӗрер михӗ укçа туса килет. Ну, ку сăвать вара ашшӗне... Мӗн каласси пур, пит лайăх пурăнать! Укçа нумай, хӗрсем юратаççӗ...

— Анланса çитиччен,—терӗм эпӗ.

— Вăл та тӗрӗс ӗнтӗ. Тутлă панулмие те, вăл хурглă пулсан, çăвартан каялла сурса кăларатăн вӗт.

«Эх, Ҫикирикин, Ҫикирикин!—шухăшларăм эпӗ, мӗн пулнисене аса илсе.—Хитри хитре те эсӗ, анчах та хăвăл иккен! Хăвăл!»



## *ЛЕОНИД АГАКОВ*

*Леонид Яковлевич Агаков 1910 çулта, Етĕрне районĕнчи Çуткассинчи учитель çемйинче çуралнă. Ялти шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Етĕрнери педтехникума вĕренме кĕнĕ те 1928 çулта унтан вĕренсе тухнă. Ун хыççăн вăл тавата çула яхăн Шупашкарти редакцисенче—«Канаш» хаçатра, «Хатĕр пул» журналта, Чăвашсен государство издательствинче ĕçленĕ.*

*1932—1935 çулсенче Л. Агаков Мускаври театр институчĕн литература факультетĕнче вĕреннĕ, ун хыççăн каллех Шупашкара таврăнса искусство учрежденийĕсенче, Чăваш писателĕсен союзĕнче ĕçленĕ.*

*1938 çулта писатель Совет Çарне кайнă, 1939 çулта Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи вăрçăра пулса аманнă. 1941 çулта, Аслă Отечественнăй вăрçă пуçлансанах, Л. Агаков фронта кайнă. Малтан вăл стрелковăй рота командирĕ пулнă, унтан ăна дивизи хаçачĕн секретарĕнче ĕçлеме куçарнă.*

*Çырма Л. Агаков техникумра вĕреннĕ чухне пĕчĕк корреспонденцисенчен пуçăннă. Унтан пысăках мар очерксемпе калавсем çырма тытăннă. Вĕсем «Канаш», «Çамрăк хресчен» хаçатсенче, «Хатĕр пул», «Ĕçхĕрарăмĕ», «Сунтал» журналсенче пичетленнĕ.*

*Çав вăхăтрах Л. Агаков «Капкăн» журналта фельетонсемпе кулăшла калавсем пичетлеме пуçланă. Чăвашсен паллă сатирикĕ*

*Иван Мучи хавхалантарнипе, вăл вĕрентсе пынипе, çамрăк писатель сатирăпа юмор жанрĕнче тăрăшсах ĕçленĕ, çак ĕçе вăл паян кун та пăрахмасть: унăн фельетонĕсемпе сатирăлла калавĕсене эпир тăтăшах «Коммунизм ялавĕ» хаçатра та, «Капкăнпа» «Ялав» журналсенче те куратпăр, радиопа та илтетпĕр.*

*Л. Агаковăн кулăшла калавĕсем 1931, 1941 çулсенче тухнă «Йĕплĕ калавсем» ятлă икĕ кĕнекене, «Чаршав уçăлсан» (1945), «Аслă çĕнтерӳ» (1946) ятлă эстрада сборникĕсене кĕнĕ.*

*Вăрçă хыççăн çырнă кулăшла калавĕсене пухса, 1955 çулта Л. Агаков «Кулас килет» ятлă кĕнеке кăларнă. Юлашки вăхăтра çырнă калавĕсене çак кĕнекене кĕртнĕ.*

*Л. Агаковăн «кулăшла мар» произведенийĕсенчен вулакансем хушшинче «Пĕрре çуркунне» (1939), «Пĕр хулара» (1946), «Ылтăн вăчăра» (1948) повеçĕсем ытларах сарăлнă.*

*1939 çултанпа Л. Агаков СССР-ти писательсен союзĕн членĕ, 1943 çултанпа—КПСС членĕ.*

---

# ТУПМАЛЛИ

Ҫачака такисем . . . . . . . . . . . 5
Ашшĕ, амăшĕ тата Уках . . . . . . . 28
Анăҫсăр экскурси . . . . . . . . . . 53
Ҫичĕ хĕр . . . . . . . . . . . . . 64
Самосвал . . . . . . . . . . . . . 72
Пашăл-пашăл . . . . . . . . . . . 91
Тĕрĕс меслет . . . . . . . . . . . 103
Ял кулли . . . . . . . . . . . . 116

**Курни-илтнисем**

Ҫĕнĕ хушамат . . . . . . . . . . . . 127
Оххина вăрманĕ . . . . . . . . . . . 132
Портрет . . . . . . . . . . . . . . 139
Улталаев мыскарисем . . . . . . . . . 146
Хитре каччă . . . . . . . . . . . . 171

**Агаков Леонид Яковлевич**

**КОЗЛЫ**

(юмористические рассказы)

на чувашском языке

Художник **Осинский Л.**

Редактор **Н. Александров.** Тех. редактор **А. Михайлова.**

Худ. редактор **М. Ильин.** Корректор **Ю. Миронова.**

НТ 02072. Сданов в набор 12-III-59 г. Подписано к печати 21-IV-1959 г. Формат 70×108 1/32. Объем 6,92 печ. л., 5,95 уч. изд. л. Тираж 5 000 экз. Изд. № 104. Заказ № 507. Цена 2 руб. 80 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР
гор. Чебоксары Володарского, 5.

Цена 2 руб. 80 коп.